К63.5
Н34
Ч-37635

Н.Е.НАУМОВ

# КУЛЛЕНХИ ПĔЛЎ КĔНЕКИ



Национальная библиотека ЧР
4-037635

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Моргаушская типография Зак. 1296 Тир. 10.000 1981 г.

КФ К К 63.5
Н34

Н.Е.НАУМОВ

# КУЛЛЕНХИ ПĔЛӲ КĔНЕКИ

**Çын пурăнакан тавращри вырăнсем, хушă-хӳтлĕхсем, çул-йĕрсем, килти, ĕçри сават-сапасем**

Шупашкар
2002

УДК 391/395
ББК 63.5 (2 Рос. Чув.)
Н. 43

Н.Е.Наумов. **КУЛЛЕНХИ ПĔЛӲ КĔНЕКИ.** Çын пурăнакан таврашри вырăнсем, хушă-хӳтлĕхсем, çул-йĕрсем, килти, ĕçри савăт-сапасем. Шупашкар, 2002. — 132 с.

Кĕнекере пурлăх культурин тĕп енĕсене çутатса панă. Пӳрт-çурт, кил çумĕнчи çурт-йĕрсем, ялсем, çул-йĕрсем, савăт-сапасем çинчен тĕплĕн те илемлĕн çырса кăтартнă, ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ. Тăван халăх историне, культурине тĕпчекенсене, юратакансене валли.

Ӳкерчĕксем: П.Н.Наумов, Е.Н.Гатаулина-Наумова, В.Н.Наумов, Е.П.Наумова, Н.Е.Наумов.

ПРОВЕРЕНО
20 02 8 АПР 2017

ISBN 5—87677—040—X

ч-37635

© Н.Е.Наумов, 2002.

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
...ОЙ

Выражаю благодарность за оказанную спонсорскую помощь в издании книги руководителям и коллективам организаций: ОАО ЖБК-9, ОАО «Букет Чувашии», ОАО «Дорис», ОАО «Честр», ООО «Инвест-Лад», ОАО Чебоксарский завод строительных материалов, ОАО «Чувашнефтепродукт», ООО «Суор-Кварц», НПВ Фирма «Сварка», ОАО Завод «Стройдеталь», ОАО «Монолитстрой».

Автор книги

Кӗнекене пичетлесе кӑларма укҫа уйӑрса панӑшӑн ҫак организацисен пуҫлӑхӗсене, унта ӗҫлекенсене тав тӑватӑп: ТБК-9 УАП, «Чӑваш букечӗ» УАП, «Дорис» УАП, «Честр» УАП, «Инвест-Лад» ТЯП, Шупашкарти строительство материалӗсен завочӗ УАП, «Чӑвашнефтепродукт» УАП, «Суор-Кварц» ТЯП, «Сварка» Фирма НЕА, «Стройдеталь» завод УАП, «Монолитстрой» УАП.

Кӗнеке авторӗ

УДК 391/395
ББК 63.5 (2 Рос. Чув)
Н 43

Н[illegible] [illegible] туррисем, [illegible] [illegible]. — Шупашкар, 2002. — 132 с.

[illegible]

Ударчĕксем: П.Н.Наумов, [illegible]-Наумова,
В.Н.Наумов, [illegible], Н.В.Наумов.

ISBN 5–87677–040–X

© Н.В.Наумов, 2002.

Выражаю благодарность за оказанную спонсорскую помощь в издании книги руководителям и коллективам организаций: ОАО ЖБК-9, ОАО «Букет Чувашии», ОАО «Дорис», ОАО «Честр», ООО «Инвест-Лад», ОАО Чебоксарский завод строительных материалов, ОАО «Чувашнефтепродукт», ООО «Суор-Кварц», НПВ Фирма «Сварка», ОАО Завод «Стройдеталь», ОАО «Монолитстрой».

Автор книги

Кĕнекене пичетлесе кăларма укçа уйăрса панăшăн çак организацисен пуçлăхĕсене, унта ĕçлекенсене тав тăватăп: ТБК-9 УАП, «Чăваш букечĕ» УАП, «Дорис» УАП, «Честр» УАП, «Инвест-Лад» ТЯП, Шупашкарти строительство материалĕсен завочĕ УАП, «Чăвашнефтепродукт» УАП, «Суор-Кварц» ТЯП, «Сварка» Фирма НЕА, «Стройдеталь» завод УАП, «Монолитстрой» УАП.

Кĕнеке авторĕ

## ТУПМАЛЛИ

**I уйрăм. Чăвашсен пурăнмалли вырăнĕсем....................... 6**

1 пайĕ. Çын пурăнакан вырăнсен ячĕсем........................... 6

**II уйрăм. Ял-йĕр таврашĕнчи хушăсем, уйрăм çурт-йĕрсем, çулсем, вырăнсем.......................... 24**

1 пайĕ. Ял тытăмĕнчи, ял çумĕнчи хушăсемпе ятарлă çурт-йĕрсем.................................................. 24
2 пайĕ. Ял çумĕнчи вырăнсем........................................ 40
3 пайĕ. Ял-хула çывăхĕнчи çул-йĕрсем, çул çинчи пал-лăсем, каçă-кĕперсем.............................................. 49

**III уйрăм. Кил-çурт. Ун таврашĕнчи хӳтлĕх-хуралтăсем, истори вырăнĕсем........................................ 54**

1 пайĕ. Никĕсленсе тăракан пĕлӳ...................................... 54
2 пайĕ. Кил-çурт хушшинчи хӳтлĕх хуралтăсем, ячĕсем 63
3 пайĕ. Пӳрт ăш-чикĕ. Пӳрт ăш-чиккинчи паллă вырăн-сем, уйрăм пайсем, пӳртри япаласем............... 85

**IV уйрăм. Савăт-сапа, михĕ-хутаç, карçинкка-кунтăк, арча-сунтăх тата ăшлăха, хупă-хапăлăха тытса тăракан ытти япаласем.............................. 94**

## Ум сăмах

Хисеплĕ вулакан, эсир пурнăçра пĕлсе тăракан япаласем, ăнланусем çинчен çырнă кĕнекене алла тытрăр.

Эпĕ вĕсем çинчен темиçе çул каярах пĕр паллă çынна çырса ӳкерсе пама ыйтнăччĕ. Вăл мана: «Кама кирлĕ ку санăн япалу? Вĕсем çинчен çынсем тахçанах пĕлеççĕ», — тесе каланăччĕ. Унăн сăмаххи хыççăн эпĕ пăртак именнĕччĕ. — Чăнах, кама кирлĕ пулĕç-ши вĕсем? — тесе шутласа иккĕленнĕччĕ. Анчах та шутланă шухăш пуçран тухмарĕ. Пуçтарнă пурлăх хут çинчен çĕтмерĕ. Вĕсене алфавит йĕркипе вырнаçтарса хаçатсене кайса патăм, манăн статьясене «Çамрăксен хаçатĕнче» те, «Хыпар» хаçатра та пичетлерĕç. Вулакансем вĕсене кăмăл тусах йышăнчĕç тата уйрăм кĕнеке кăларма та ыйтрĕç.

Кĕнеке укçасăр пичетленмест... йывăр пулчĕ укçине пуçтарма. Тавах укça парса пулăшакансене. Вĕсем пулăшнипе тата çине тăнипе кĕнекене Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче пичетлеме май килчĕ. Сирĕн ума çитерме хал çитрĕ. Халĕ хирĕçле калама та, майлă калама та, малалла шутлама та умра кĕнеке пур.

Вулăр, калаçăр, шутлăр. Пурлăхне шыраса тупăр.

Н.Е.Наумов.

**Автора кĕнекене çырнă чух канашсем панă рецензентсем:**

**Г.Б.Матвеев**, истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ;

**В.Г.Шляхина**, Чăваш наци музейĕн директорĕн ăслăлăх çумĕ;

**Р.К.Рахимов**, Чăваш ен архитекторсен союзĕн правлени председателĕ;

**В.Н.Оринов**, ЧР Çамрăксен театрĕн пултарулăх ертӳçи, Чăваш Республикин ӳнерĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ;

**Л.И.Кадикина**, ЧПӲМ пропаганда пайĕн пуçлăхĕ;

**В.А.Антонов**, Шуршалти пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ шкулĕн директорĕ.

## Кěскен кěнекене çырса, ÿкерсе хатěрлекенсем çинчен

Автор Никифор Егорович Наумов 1936 çулхи нарăсăн 12-мěшěнче Сěнтěрвăрри районěнчи Тимěрчкасси ялěнче (халě Çатракасси) нумай ачаллă çемьере çуралнă.

Ача чухнех çуллахи вăхăтра аслисемпе тан ял хуçалăх ěçне хутшăннă, кěтÿ кěтнě. Ун чухне аслисем тăван ен пирки каласа кăтартнине кăсăкланса итленě. Ялта ваттисен йăлипе ирттерекен çумăр чÿкне хутшăннă, çимěкре несěлěмěрсене асăнакан йěркесене тытса пынă. Хăй пурăнакан вырăнăн уйрăмлăхěсем, çăл куççем пирки каланисене пухнă. Ашшě ăна ял çывăхěнчи сăваплă вырăнсемпе паллаштарнă.

Никифор Егорович 1954-1959 çулсенче Йошкар-Олари Атăл тăрăхěнчи вăрман техникин институтěнче вěреннě. Ун хыççăн çемйипе Киров облаçěнче ěçленě. 1962 çулта Чăваш ене таврăннă хыççăн Чăваш территори строительство управленийěн пай пуçлăхěнче, тěп инженерта, управляющи çумěнче ěçленě.

Çав вăхăтра та, малтанхи пекех, авалхи чăваш тěнě пирки материал пухса республика хаçат-журналěнче пичетленě, чăваш интеллигенцийě валли лекцисем вуланă.

1990 çултанпа тăван чěлхепе чăваш культури çинчен çакăн пек материалсем пичетленě: «Авалхи чăваш тěнě» («Ялав» журнал, 1990 ç., 7№); «Киремет» («Хыпар», 1991 ç.); «Чăваш тěнě» мифологи словарě («Хыпар» кěнеки, 4№, 1992 ç.); «Чăвашăн тěнче, пěлěтпе çěр, пěлěт çинчи çăлтăрсем çинчен вěрентсе каланă аваллăх пěлěвě» («Хыпар» кěнеки, 13№, 1995 ç.); «Ěмěр» («Хыпар», 1996 ç.); «Чăваш халăх философийě — вăхăт тата пурнăçпа вилěм, чун тата турă» («Хыпар», 18№, 1996 ç.); «Халăхăн çулталăк календарě» («Хыпар», 1997 ç.); «Чăвашсем пурăннă вырăнсем» («Хыпар», «Çамрăксен хаçачě», 1998, 1999 çç.).

Н.Е.Наумов — Чăваш Республикин культура тава тивěçлě ěçченě.

Кěнекери ÿкерчěксене авторпа пěрле унăн ывăлěсем, хěрě тата арăмě ÿкерсе пуçтарса хатěрленě.

Петěр ывăлěпе Елена хěрě Чăваш патшалăх педагогика институтěнчи художествăпа графика факультетне вěренсе пěтернě.

Владимир ывăлě Чăваш патшалăх университетěнчен вěренсе тухнă.

Арăмě Евгения Петровна Наумова инженер-строитель. Çемьере пурте ÿнер ěçне юратаççě. Пушă вăхăтра тěрлě япаласем тăваççě, ÿкерчěксем ÿкереççě. Çичě мăнукне те пěлÿ еннелле туртăнтарса ÿстереççě.

# ЧӐВАШСЕН ПУРӐНМАЛЛИ ВЫРӐНӖСЕМ

**I уйрӑм**

## 1 пайӗ. ҪЫН ПУРӐНАКАН ВЫРӐНСЕН ЯЧӖСЕМ

Чӑваш ҫӗр-шывӗнче авалтанпах ял-хуласем пур. Уйрӑмлӑхӗсене кура вӗсене тӗрлӗ шая хывса тӗрлӗ ятпа уйӑрса калаҫҫӗ. Хӑш-пӗр ятсем историре кӑна сыхланса юлнӑ, чӑваш чӗлхинче илтӗнме пӑрахнӑ. Вӗсене алфавит йӗркипе (Ал, Ел, Ӗмпӳрт, Вулӑс, Вонпӳ, Выҫолӑк, Карман, Каршлӑх, Кас, Кӳрен, Поҫулук, Пучинке, Сала, Стан, Ҫӗрпӳ, Турхан, Утар, Хула, Хупах, Хутор, Юрт, Ял, Ям) тата ытти шайри ятсене, ӑнланусене пуҫтарӑннӑ пӗлӳ тӑрӑх ҫырса кӑтартар. Ҫырура тӗрлӗ литературӑпа халӑхри халап-юмахпа усӑ курнӑ. Сӑнарсем урлӑ ӳкерчӗксем хатӗрленӗ.




**Улӑп йӑхӗ Кавказран Атӑл ҫине куҫса килни. Юмах.**

Аса илӗр-ха Улӑп ҫинчен калакан юмаха. Чӑвашсен аслашшӗсем Кавказ енчен, Арамази тӑвӗпе, Атӑлпа Кама хушшине хывнӑ Асамат кӗперӗ тӑрӑх халӗ пурӑнакан вырӑнсене куҫса килни, пурӑнса кайни ҫинчен. Кунта — мӑнаҫлӑх тата вӑхӑт тӗвви, астӑвӑмӗ. Вӗсем ӗнтӗ Атӑлҫи Пӑлхар патшалӑхне йӗркелекенсем, вӗсен хыҫҫӑнхи хунавсем, Чӑваш ҫӗр-шывне пирӗн пурнӑҫа хӑваракансем. Историри пулӑмсем вӑхӑт ҫыххинче — хронологире. Унта — аталану, «кӗмӗл вӑхӑчӗ», тутар-монголсен вӑрҫӑпа куҫса килнӗ ҫарӗсене хирӗҫ паттӑррӑн тӑни, сутӑнчӑкпа ултавлӑх, Пӑлхар ҫӗрӗнчи ял-хуласене аркатни, асаттесен йӑх-йышне асапластарни, ҫӗнӗ хунав чӗрӗлни, Атӑлӑн сылтӑм енче Чӑваш патшалӑхӗ никӗсленни, вырӑс патшалӑхне кӗнӗ хыҫҫӑнхи пулӑмсем.

**Ял-хуласем, вырӑнсем.** Чӑвашсем пурӑнакан вырӑнсен палӑрту ячӗсенче, вӗсем ӑҫтан, хӑш халӑхран, хӑш вӑхӑтра, мӗнле ятпа пирӗн чӗлхене кӗнине тӗпчеме пулать. Ҫакӑн тупсӑмне вулавҫӑна кӗскен, словарь йӗркипе ҫырса, ӳкерчӗксемпе сӑнарласа ӑнлантарӑпӑр.

**Ал, ел, ял** сӑмах — ҫын йышӑннӑ ҫӗр-шыва ӑнлантарнӑ. Тӗслӗхрен, ҫак компонентсем Мӑнал — Мӑн ял, Ҫӗнӗ Чукал — Ҫӗнӗ Чук ялӗ, Пахчал — Пахчаллӑ ял, Палтиел — Палти ҫӗрӗ-елӗ, ялӗ, Энтриел — Энтри ҫӗрӗ-елӗ, ялӗ, Патӑрьел — Паттӑр ялӗ тата ытти ялсен ячӗсенче тӗл пулаҫҫӗ. (Населенные пункты ЧАССР — 1981 г. Справочник. Малалла — НП ЧАССР — 81.) Ал — ытти тӗрӗк халӑх чӗлхисенче ял, вулӑс, аул. Эль, эл, ел — ял, сала, ҫӗр-шыв тенинех пӗлтерет. (Э.М.Мурзаев. Словарь народных географических терминов. Малалла — Мурзаев.)



**Тимӗрчкасси вырӑнӗнчи Илмарса йӑхӗнчи Якуркка таврашӗнчи чӑвашсен ял-ҫурт картишӗ. XVI ӗмӗр.**

**Ӗмпӳрт** — Ӗмпӳ пурӑнакан хӳтлӗхе, кермене, ҫурт-йӗр вырнаҫнӑ вырӑна пӗлтерет. Авал Ӗмпӳ юртине Ӗмпӳрт тесе каланӑ. Чӑвашсем хӑйсен ҫӗр, ҫар, патшалӑх пуҫлӑхне Ӗмпӳ тесе чӗнсе хисепленӗ. Халь ӗмпӳ сӑмаха врӑссен князь (кнеҫ) ӑнланӑвӗпе шайлаштараҫҫӗ.



**Ӗмпӳ хуралти**

Чӑвашсен ҫавӑн пек ӗмпӳ чӑнахах пулнине Ҫӗрпӳ районӗнчи Ӗмпӗрт Туҫа (Имбюрти) ятлӑ ял ӗнентерет. (НТ ЧАССР — 159 с.)

**Вӑрманҫӑ** (лесничий, лесник) — вӑрман хуралҫи.




**Вăрманçă çурчĕ**




**Вулăс кантурĕ. XX ĕмĕр**

**Вăрманçă çурчĕ** вăрмана пăхса хӳтĕлесе ӳстерекенĕн тата унта ĕçлекенсен çурт-йĕрĕ. Вăрман лаптăкне карталаса çаврăннă чикĕ ячĕпе картун (вырăсла кордон) çурчĕ те теççĕ. Чăваш вăрманĕсенче вĕсем I Петĕр патша вăхăтĕнче йĕркеленнĕ.

**Вулăс** — авал темиçе йăх, ăрат, халăх ушкăнĕсем йышăннă çĕр лаптăкĕ. Вĕсен пуçлăхĕн ялĕ, кил-çурчĕ. Каярахпа патшалăх çĕр-шыва уйрăм улуссем, элчĕсем çине пайланă тытăмăн йĕрки. Вулăс кантурĕ ларнă ял. 1927 çулта вулăс тытăмне пĕтернĕ,район уйрăмĕсене йĕркеленĕ.

Чăваш чĕлхинче тĕрĕксен улус сăмахĕнчен вулăс пулса кайнă. Вырăс чĕлхине чăваш чĕлхинчен волость сăмах пулса кĕнĕ.

Авал Шупашкар уесĕнче 11 вулăс пулнă. Вулăс кантурĕ вырнаçнă ялсенче чиркӳ, шкул, ытти хуралтă çурчĕсем ларнă.

М.Р.Федотов тĕпчевçĕ чăваш чĕлхинчи вулăс сăмах вырăс чĕлхинчи волость сăмахран пулнă тесе шутлать. (Этимологический словарь чувашского языка. Том I. С. 130. Малалла — Федотов ЭСЧЯ.)




**Улус çĕрĕ**

**Улус** — тĕрĕксен чĕлхинче пурăнакан вы-

рăна, аила, стана, çĕр-шыва, халăха, патшалăха пĕлтерет. Перс чĕлхинче — халăх, çĕр-шыв, патшалăх, çĕр тенине (Мурзаев, 575 с.)

**Выççăлкă, выçелăк** (вырăсла выселок) — ялран, саларан, хуларан уйрăлса тухнă вырăн. Ытларах вырăссем пурăнакан вырăн шутланнă. Чăвашла кас е касси темелле. Чăваш чĕлхинче ытларах иртнĕ ĕмĕрти 20—30 çулсенче палăра пуçланă. Тĕслĕхсем: Харитоновка, Шашков выççăлккисем тата ытти хушма ятлă ялсем (НП ЧАССР — 148 с.).



**Выççăлкă**

**Завод**. Завод çумĕнчи ял, сала, поçулук. Комаровский завод. Комаровка ялĕ. Куславкка. Кирпичный завод. Çĕнĕ Шупашкар хулинчи Заводской поçолук. Шупашкарти Протопопиха ялĕ. Заводской. Кивĕ Эйпуç ялĕ. Улатăр р-нĕ.

**Карман, карманту, кермен, керменчук** — хушлăхри хÿме, крепоç вырнаçнă вырăн, таврари çĕр-шыв. Пăлхар патшалăхĕ вăхăтĕнче Чулмаç е Шурă Атăл шывĕ çумĕнче (Кама çинче) Кременчук ятлă хула, Хусан ханстви (патшалăхĕ) пулнă вăхăтра Атăл çинче, хальхи Сĕнтĕрвăрри районне кĕрекен Карапаш ялĕ çывăхĕнче Карманту ятлă крепоç-хÿме ларнă. (В. Магницкий. «Разбойничий городок на Волге» // «Казанские ведомости». 1866, №46; П.П.Семенов «Полное географическое описание нашей отчизны. Том IV.)



**Карманту**

Халăхра юлнă сăмах-юмахра Карманту ларнă вырăнта Атăл урлă кимĕсем лартса тачка вĕренпе карлăк карса тытса тăнă. Иртсе е ишсе каякансенчен услам пуçтарнă. Вăрçа тухнă ушкуйсене чарса тăнă. Хусан вăрçи вăхăтĕнче Кармантуна çĕмĕрсе аркатнă. (Мана

атте çав вырăна 1950 çул тĕнелле илсе кайса кăтартнăччĕ.)

Карман, Керман, Кирмен тĕрĕк халăхĕн чĕлхинче хӳме, крепоç, хула тенине пĕлтерет. (Мурзаев — 271 с.)

**Картун** — Вăрман хуралçи пурăнакан вырăн. Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмах.

**Кордон** — чикĕ, ен, чикĕри çурт. Вăрман чикки, вăрман чиккине, лаптăкне сыхлакан, лесникĕн çурчĕ. Франци чĕлхинче вăрăм кантра, Испани чĕлхинче сăрт-ту каçанне пĕлтерет. (Мурзаев — 290.)



**Каршлăх**

**Каршлăх** — карталаса хӳтĕленĕ хӳтлĕх. Хусан ханстви вăхăтĕнче çар пайĕ тăракан вырăн, крепоç, кермен, ятарлă ял. Пирĕн вăхăтчен Шупашкар районне кĕрекен Каршлăх ял ятĕнче сыхланса юлнă (НП ЧАССР — 127 с.). Çак вырăнта 1922 çулччен Александр Невские асăнса лартнă мăнастир пулнă. Кайран ачасен сывлăхне çирĕплетекен санатори йĕркеленĕ. Халĕ тепĕр хут мăнастир уçма шутлаççĕ.

**Карши** — тĕрĕк чĕлхинче крепоç, кермен тенине пĕлтерет. (Мурзаев — 262 с.)

**Касă, кас** — урам, ял, ял пайĕ, ялран уйрăлса тухса ларнă çурт-йĕрлĕ хуçалăхсем.

Г.Б.Матвеевăн «Материальная культура чувашей» кĕнекинче Энĕшпе Çавал хушшинчи ялсем 80 процент таран — кас, касă сăмахпа вĕçленеççĕ. Вырăна пăхса: Энĕш касси, Тури кас, Лапри кас, Анат кас, Униче касси, Шор касси; çут çанталăк енĕсене пăхса: Малти кас (хĕвел тухăç енчи), Кайри кас (анăç енчи); уйрăлса тухнă çын ячĕсене кура: Патюш касси, Санти касси, Эмек касси, Энтимĕр касси т.ыт.те.



**Лапри кас**

**Каçă, каçлăх, каçма** — шыв çыранĕ хĕрринче çын вăхăтлăх пурăнакан вырăн. Çуркуннепе кĕркунне хушшинче, шыв пăрланиччен, çуран е лавпа çул çӳрекенсене, çăмăл е аслă кимĕпе шыв урлă каçарса яракан, кимĕсене кăкарса тăракан вырăн. Çав вырăнта кимĕсене кĕмелли каçма кĕперĕ, карлăкĕ, пурăнмалли хушă, хуп, ӳпле, çĕрпӳрт, лаç, лашасене, выльăхсене вăхăтлăх тăратмалли карта е лупас пулнă.



Каçă

Атăл çывăхĕнче пурăнакан ялсем каçмăка (перевозчике) ял пухăвĕнче килĕшӳ туса тытнă. Кимĕсене ял укçипе илнĕ е каçмăк хăй туса хатĕрленĕ. Хĕл каçма вĕсене лашапа çӳллĕ вырăна, çырана туртса кăларнă. Укçи-тенкине, пурлăхне кĕркунне тӳлесе татмалла пулнă. Вăл ют çынсене шыв урлă укçа тӳлеттерсе, килĕшнĕ ял çыннисене укçасăр каçарнă. Тен, çавăншăн Чăвашра хыт кукар çынна каçмăк тесе калаççĕ. (Эпир аттепе Ителмеспе Çатра ялĕн каçлăхне виçĕ çул тытса тăнăччĕ. Халĕ пирĕн каçлăха Звенигово пристанĕн пĕчĕк баржа-пăрахучĕ тивĕçтерсе тăрать.)

**Кӳрен** — аякра лăпкă вырăнта хăй тĕллĕн ларакан кил-çурт. Пĕччен е икĕ-виçĕ хуçалăхран йĕркеленсе ларнă вырăн. Кӳрен çавăн пекех выльăх çӳрекен улăхра, вăрман уçланкинче, шыв çумĕнчи çыран хĕрринче ларакан çурт-йĕр е унăн вырăнĕ. Пирĕн енче кӳрен Сĕнтĕрвăрри районне кĕрекен Кушник ялĕнчен анатарах Атăл çыранĕ хĕрринче ларать. Авал кӳренте Хусанпа Чулхула хушшинче çӳрекен хĕллехи обозсем чарăннă.



Кӳрен

1930 çулсем тĕлнелле вăрман касса сутакансен, вут-шанкă хатĕрлекенсен йывăç склачĕсем йĕркеленсе ларнă. 1960 çулсенче Шупашкарпа Куславккана çӳрекен пĕчĕк пăрахутсем чарăнса тăнă. Халĕ кунта — Шупашкарти агрегат завочĕн канмалли, сывлăха сиплемелли «Белые камни» санаторийĕ.

**Курень 1.** — çеçенхирте кусса çӳрекен пин юртăран тăракан ушкăн вырнаçнă вырăн. Ăнаункă майлă пуçтарса лартнă. Куреньре пĕр вучах, пĕр ялав, пĕр пăнчăк (бунчук) пулнă. Монгол патшалăх тытăмĕнче курень пĕр пин çар çыннине кăларса тăракан ушкăн пулнă. (Д.Майдар, Д.Пюрвеев. «От кочевой до мобильной архитектуры». С. 37).

**Курень 2.** — уйра, вăрманта вăхăтлăх пурăнмалли вырăн: ӳпле, лаç, çĕр пӳрт, сарай, хата. Вăрттăн аталаннă пĕчĕк ял. Запорожьери казаксен ял йĕркинче — хупăрланса ларнă пĕр ушкăнри çурт-йĕр, хатăсем. Чулхула енче — виçĕ пӳртрен е ытларах кил-çуртран тăракан хупăрланса ларнă çурт-йĕр вырăнĕ. (Мурзаев — 317 с.; В.И.Даль. II томĕ — 222 с.)



Посат

**Посат (посад)**. Хула хĕрринчи, хула çумĕнчи ял евĕр пуçтарăнса ларакан, çĕр ĕçне тумасăр пурăнакансен хулана хӳтĕлекен çар çыннисем вырнаçса тăнă вырăн.

X—XVI ĕмĕрсенче суту-илӳ тума, суту-илӳ япалисене туса кăлармa ятарласа лартнă хула евĕр ялсем.

Вырăс патшалăхĕ ямшăк çулĕ çине, пысăк шывсен çыранĕсен хĕррине ятарласа лартнă ялсем, хӳтлĕхсем. Аса илĕр, Хусан ханствине вырăс патшалăхĕ çумне пĕрлештерсен Чулхулапа Хусан хушшинчи Атăл çыранĕсем çине вырăс ялĕсем килсе ларнă, ямшăксен çулĕсем çинче — Ямской Посад ятлă вырăнсем пулса кайнă.

Пирĕн вăхăта çак ăнланусенчен Улатăр хулипе пĕрлешсе кайнă Ямской Посад, Атăл çинче хула пулса кайнă Мариинский Посад ятсем çитнĕ.

Хальхи вăхăтра Посад хула текен ăнланăва пĕлтерет.

**Поçолук, поçулук** (поселок) — Чăваш ене вырăссем пурăнма килсе ларнă вырăн. Саларан, ялтан пысăкрах, хуларан пĕчĕкрех. Ку сăмах чăваш чĕлхине 1930 çулсенче вырăс чĕлхинчен кĕнĕ.

**Пучинке** (починок) — вырăссен çĕнĕрен пуçласа лартнă ялĕ е поселокĕ (поçулăкĕ). Чăваш сăмахлăхне 1930 çулсенче кĕнĕ.



Поçолук



Пучинке

**Сала** — пысăк ял, вырăс ялĕ, кантур ялĕ, чиркÿллĕ ял, ял совет çурчĕ ларакан ял. Чăваш чĕлхине вырăс чĕлхинчи село сăмахран кĕнĕ. Нумай ялсен ятĕнче тĕл пулать. Тĕплĕнрех ял çинчен çырнă уйрăмра вулăр.

**Стан** — вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмах, ăнлану. Вăхăтлăх пурăнмалли кил-çурт. Почта, ямшăк çулĕ çинче ларакан ятарлă ял, ятарлă çурт-йĕр. Çар çыннисем тăракан, хирте, улăхра çÿрекен кĕтĕве пуçтарса тăратмалли, уйра ĕçлекен механизаторсен вăхăтлăх пуçтарăнмалли, куçса çÿрекен халăхсен çуллахи вăхăтра чарăнса пурăнмалли вырăнĕ. Вăрман касакансен, сунарçăсен, пулăçсен вăхăтлăх пурăнмалли хÿтлĕхĕ. Стан сăмахран станци (станция) сăмах пулса кайнă. Чăваш енре, Шупашкар районĕнче, авалхи почта, ямшăк çулĕ çинче XIX ĕмĕрте ларнă станран станьял сăмах тата Станьял ятлă ял пулса кайнă.



Сала. Чиркÿллĕ ял

**Çĕрпӳ** — çĕр çынтан тăракан çар пуçлăхĕн хӳтлĕхĕ, ялĕ. Авал чăваш çĕр-шывĕн патшин çарĕ 10, 100, 1000, 10000 пайсенчен пухăнса, уйрăлса тăнă. Вĕсене пӳ ертсе пынă. Уйăрса панă хуралтăсенче (ялсенче) тăнă, пурăннă. Çавăнтан вунпӳ, çĕрпӳ, пинпӳ, тĕмпӳ (вырăсла тьма) сăмахсем, ăнланусем пирĕн чĕлхере сыхланса юлнă.

Вонпукасси, Вомпăкасси, Сотниково (Турханкасси) ял ячĕсем — малтан вунă, çĕр çынран е вунă, çĕр хуçалăхран тăни çинчен калаççĕ. Паянхи Çĕрпӳ хули вырăнĕнче 1584 çулччен çĕрпӳн керменĕ, крепоçĕ ларнă. Хусан ханствине çĕнтерсе илсен вырăссем Çĕрпӳре 1584 çулта крепоç туса лартнă. Çĕрпӳ ялне çĕнĕ вырăна куçарнă, Сюрбеево ят панă.



Станци


Çĕрпӳ çарĕ



Турхан çĕрĕ

**Турхан** — çĕр хуçи, çĕр хуçин çĕрĕ, ялĕ. Авал Атăлçи Пăлхар — Чăваш патшалăхĕнче уйрăм çĕрсене пăхса тытса тăракансене турхан, турхансем тенĕ. Вĕсен хӳтлĕхлĕ ялсем — керменсем пулнă. Çав вăхăтран турхан, торхан, тархан сăмахсем упранса юлнă.

**Тархан** — тĕрĕк чĕлхинче çар пуçлăхĕн ячĕ (БСЭ. С. 1182). Тĕрĕк чĕлхинче куланай тӳлемен çын, çĕр хуçи, сутуçă, ирĕклĕ çын. Патшан (ханăн) çывăх çумĕ те. (Мурзаев — 544 с.)

**Утар**, **отар** — пыл хурчĕсем усрама вăрман уçланкине, вăрман çумне вĕллесем лартнă вырăн тата утарçăн (утарçăсен) кил-çурчĕ.

Утар пĕчĕк яла, хушăна пĕлтерет. Утар тесе тата çуллахи вăхăтра улăхри кĕтӳ выртса тăмалли картана, лупаса, кăшкара калаççĕ.



Утар

Çармăс енче Звенигово районне кĕрекен Чăваш Утарĕ (Чуваш Отары) тата Мари Утар (Мари Отары) ятлă ялсем пур. Чăваш Утарĕ ялĕнче Чăваш енри нумай ялтан куçса пырса ларнă чăвашсем пурăнаççĕ. Авал унта, асатте каланă тăрăх (Наум Никифорович, 1860 ç.), пирĕн енчи чăвашсем вĕлле утарĕсене тытса тăнă.

**Отар** — тĕрĕк чĕлхинче аякри улăха, кĕтӳ çӳрекен вырăна, кĕтӳ картине, кĕтӳсĕн çуртне е çакăнта уйрăлса ларнă пĕчĕк яла пĕлтерет (Мурзаев — 412 с.).




Отар

**Хула** — ял хуçалăх ĕçĕпе çыхăнман халăх пурăнакан, промышленность, транспорт, наукăпа культура тата ытти учреждениsem вырнаçнă вырăн. Халĕ темиçе пин е миллион таран çын пурăнакан хуласем пур.



Хула. Хула çумĕнчи ял

Авал çирĕп хӳме тытнă, крепоç-кермен купаласа лартнă (тăшман вăрçăпа тапăнсан çарпа хупăнса хӳтĕленмелли) вырăна пĕлтернĕ. Атăлçи Пăлхар пат-

шалӑхӗнче йывӑҫ хӳме тытса ҫӗр купаласа ҫирӗплетнӗ хуласем чылай пулнӑ.

В.Д.Димитриев тӗпчевҫӗ ҫырнӑ тӑрӑх, XIV ӗмӗр вӗҫӗнче тӑшмансем 170 пӑлхар-чӑваш хулине ҫунтарса янӑ, аркатнӑ («Хыпар-Дайджест», №1, 97 г.). Халӗ Чӑваш Республикинче тӑхӑр хула. Паллах, унти ҫурт-йӗре кирпӗчрен, тимӗр-бетонран купаласа тунӑ.

**Кала** (гала, хала, хула, ола, келе, кӳала, калай) — иран, араб, тӗрӗк чӗлхисенче хӳтлӗх вырӑн, кермен, крепоҫ, ял-хула тенине пӗлтерет.

Азире, Африкӑра, Европӑра та кала сӑмах пӗр пек ӑнланупах сарӑлнӑ (Мурзаев — 242 с.).



Хупах

**Хупах** — хӳтлӗ вырӑн, эрех-сӑра сутакан ҫурт. Авал хупах (кабак) ҫурчӗ ямшӑк чупакан, ҫӳрекен ҫулсем тӗлӗнче почта, ял станӗ патӗнче ларнӑ. Унта лаша улӑштарнӑ, ҫул ҫӳрекенсем апатланнӑ, сӑра-эрех ӗҫнӗ. Ҫул ҫинчи ҫуртсем, хупахсем лартасси, ямшӑк чупассин йӗрки вырӑс патшалӑхне тӗрӗксенчен куҫнӑ. Ҫавӑнпа вӗсен чылай сӑмахӗ вырӑс чӗлхине улшӑнмасӑрах кӗнӗ (ям, кабак, кибитка...). Чӑваш ҫӗрӗ урлӑ Мускавран Хусана, Ҫӗпӗре хывнӑ ҫул выртнӑ. Ҫав ҫулсем ҫинче хупахсем пулнине Хупахушкӗн (с. Кабацкое), Кивӗ Хупах (Чикуры) ялсен ячӗсенче куратпӑр (НП ЧАССР).

**Кабак** — тутар, тӗрӗк чӗлхисенче кавӑн, кавӑн хуппинчен тунӑ савӑта тата сӑра, сим пыл, кӑрчама туса сутакан лаҫа пӗлтерет. (Прыжов. «Кабаки России»; Похлебкин. «Водка».)

Кабак кабардин халӑхӗн чӗлхинче ял, сала сӑмаха пӗлтерет. Вырӑс чӗлхинче — эрех-сӑра сутакан лавкка, трактир (Мурзаев — 298 с.).

**Хуралтӑ** — ҫынсем ушкӑнпа пурӑнман вырӑн. Хӗлле кӑна ҫӳрекен ҫулсем ҫинче ларакан ҫуртра пурӑнакан ҫын е ҫемье хуҫалӑхӗ, хуралтӑ.

Авал суту-илӳ япалисене обоз ҫӳретсе, ытларах хӗлле пӗр ҫӗртен тепӗр ҫӗре турттарнӑ. Ҫул ҫине ҫын пурӑнман вырӑнсенче хальхи виҫепе 15—30 ҫухрӑмран хурал пӳрчӗсем лартнӑ. Ҫулла утӑ ҫулса ка-

пансем хатĕрленĕ. Хурал сă-мах вырăс чĕлхине караул сăмах пулса кĕнĕ. Вырăссем хурал вырăнне зимник, зимовье, зимогор тесе каланă. Атте (Егор Наумович 1890—1987 çç.) каланă тăрăх, хĕллехи хуралтăра пурăнакана Хусан енче зимогой тесе чĕннĕ, каланă.

Пирĕн енче хуралтă-зимовьесем XIX ĕмĕрччен Атăл, Сăр тăрăх çӳрекен обоз, ямшăк çулĕсем çинче ларнă.

**Хутор** — пĕччен ларакан кил-çурт, ялран уйрăлса тухнă темиçе хресчен хуçалăхĕ, кил-çурчĕ, пĕчĕк ял. Чăваш енче хуторсем Столыпинăн çĕр реформине пурнăçа кĕртнĕ вăхăтра аталаннă. А.Изоркин çырнă тăрăх, 1914 çул тĕлне хуторсем вăтăр тăватта çитнĕ. Хальхи вăхăт тĕлне нумайăшĕнчен ялсем ӳссе ларнă, хăшĕсем пĕтнĕ. (Ячĕсене «Населенные пункты ЧАССР» кĕнекере тупса вулама пултаратăр.)

Хутор сăмах вырăс, украина чĕлхисене венгр, нимĕç чĕлхисенчен кĕнĕ тесе шутлаççĕ. Унта вăл чикке, аякри çĕре, таврана пĕлтерет. Тата чăваш чĕлхинчи утар, отар сăмахсенчен пулма пултарнă тесе шутлаççĕ. (Мурзаев — 599 с.)


**Хуралтă**


**Хутор**


**Хушлăх**

И-37635

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА

**Хушлăх, хушка, кушка, кушкă** — вăрманти хушлăха, уçланкăна çурт-йĕр туса кĕртсе лартнă ял. Тăшманран хÿтĕленмелли хÿтлĕх, крепоç. Кăшка, Кушкă, Кушник, Кушлавăш ятлă ялсем çавăн пек пуçланса кайнă е вĕсене çав тĕллевпе лартнă тесе калама пулать.

**Каш, кашка** — тĕрĕк чĕлхинче куç харши, ту çамки, кукша, уçланкă, шурă çамка тенине пĕлтерет.

XVI ĕмĕрте Çĕпĕр ханĕн Кучумăн Иртыш шывĕ çинчи Чăваш сăмси ятлă ту çинче ларакан тĕп хулийĕ, крепоçĕ Кашлык ятлă пулнă. Ăна 1582 çулта аркатнă. (БСЭ, том 23. С. 337.)

**Кошк** — туркмен чĕлхинче хÿтлĕх, крепоç, таджик чĕлхинче ту çинчи ялăн хÿтлĕхне, афган чĕлхинче каланчаллă çурта, кермене пĕлтерет. (Мурзаев — 265, 299 с.)

**Юрта** — куçса çÿренĕ çĕрте лартнă çурт, вырăн, çуртсен ушкăнĕ, ял. Çÿрекен юрта, пысăк юрта чăваш чĕлхинче çурт, пÿрт сăмахсене куçнă, ял ячĕсене кĕнĕ. Вĕсем халĕ Юртукасси, Ту Юрт, Кивĕ çурт (Кивçурт), Мăнă çурт (Мăнçурт), Çичĕ пÿрт (Çичпÿрт) тата ытти çавăн пек ялсен ячĕсенче пур.



**Çĕнĕ Юрт çĕрĕ**

Юрт, юрта — тĕрĕк чĕлхинче çурта, стана, яла уйăрса панă çĕре, вăрман катине, тавралăха, çĕр-шыва, ăрата пĕлтерет. (Мурзаев — 643 с.)

**Ял** (йал) — çын пурăнакан вырăн. Çĕр ĕçĕ ĕçлесе, кулленхи хуçалăха тытса пурăнакан çын йышĕсен çурт-йĕрĕ вырнаçса ларнă вырăн. Ял сăмах çĕре, хуçалăха, йыша, ушкăна, çурт-йĕре, йăла-йĕркене хăй майĕпе пĕрлештерсе аталантарса тăрать.

**Ял хуçалăхĕнчи тĕп ĕçсем**: ака-суха тăвасси, тыр-пул ÿстересси, выльăх-чĕрлĕх пăхасси, пÿрт-çурт лартса çемье çавăрасси. Пÿрт-çурта ĕмĕртенпех тăванпа, ял-йышпа пуçтарăнса, ниме туса, купаласа çавăрса лартнă. Авал пĕр ялта пĕр тăван-хурăнташ пурăннă. Пирĕн тĕпчевçĕсем çырнă тăрăх (В.Д. Димитриев, «Хыпар-Дайджест», 1997. 1№), XIV ĕмĕр вĕçĕнче тăшмансем Атăлçи Пăлхар патшалăхĕнчи 1700 ытла яла аркатса çунтарса тĕп тунă, халăхăн 4/5 пайне вĕлерсе хăварнă. Те çавна пула, каярах пирĕн асаттесем ялсене вăрман ăшне, çырма-çатрасем çумне ларта-ларта тухнă.

Хусан ханстви вăхăтĕнче те, Раççей патшалăхне кĕрсен те çаплах пулнă. Вырăс ăсчахĕ П.А.Аноров та 1838 çулта çырнă ĕçĕнче çакнах ĕнентерет: «В лесистых округах селения расположены так, что вся деревня кажется заросшей лесом; огромные дубы и липы находятся среди дворов».



Урамсăр ял

Ăратри кил-çуртри çемьесене ял хушшинче çурт-йĕр лартма вырăн, çĕр çитмесен вĕсем çывăх вырănти майлă çĕр çине уйрăлса тухса ларнă. Уйрăлса тухса ларнă çĕре, урама, касă, кас е ял тенĕ.

Авалхи тĕн йĕрки тăрăх, ялăн хĕвел тухăç енче, паллă вырăнта, чўк ирттермелли киремет ларнă, хĕвел анăç-çурçĕр енче çăва пулнă. Унта вилнĕ çынна çĕр алтса пытарнă. Çурçĕр енче — вилнĕ вылья̆ха кайса пăрахмалли вырăн — выльăх çăвин карти пулнă.

Яла шыв кирлĕ. Тулли тараса, таса кўлĕ е шăнкăртатса юхакан çăл куç, юхса выртакан юхан шыв, кўлленсе тăракан пĕве кирлĕ.

Çырма-çатрине, çыран-çаранне кура ял хăйне май сарăлса пынă. Ял аталанăвне, вăл ăçтан тухнине, ăна кам пуçланине ял ячĕсем урлă курма пулать. Пысăк е пĕчĕк ял: Виçĕ пўрт, Тăватă пўрт, Çичĕ пўрт, Тăхăр кил, Пĕчĕк ял, Вăта ял, Аслă ял, Мăн ял. Яла пуçарса яракансене, ял çĕрĕн пуçлăхĕсене асра тытса: Айтар, Охатер, Саватер, Пукаш, Патюш, Тукай т.ыт.те. Çар хуралне пурнăçлакансен ячĕсемпе: Вонпукасси, Çĕрпў ялĕ. Патшалăх ĕçĕнче тăракансен ячĕсемпе: Ĕмпўрт, Турхан, Мăрсакасси. Авалхи, чăваш тĕнĕнчи турăсем, вĕсене кĕл тумалли вырăнсене кура: Чўк ырри (Чегуры), Чўк ялĕ (Чукалы), Йĕрĕх (Йĕрĕх çырми), Хĕрлĕ çыр (хĕрлĕçир), Киремет т.ыт.те. Нумай ял ячĕсем вĕсем ăçтан уйрăлса тухса пырса ларнине кăтартаççĕ. Тĕслĕхрен: Елчĕк (Яльчики) — Елчĕкрен (Карамышево). Çĕнĕ Тукай — Кивĕ Тукайран.

1775 çул хыççăн чăвашсене Христос тĕнне (вырăс тĕнне)

кӗртесси хӑвӑртланнӑ. Чӑваш ялӗсенче йывӑҫ чиркӳсем ҫӗкленсе ларнӑ. Чиркӳллӗ ялсене (XVIII ӗмӗр) сала е престола хӳтӗлекен турӑш ячӗпе кала пуҫланӑ: Сала, Салапай, Архангельское, Покровское т.ыт.те. Малтан чиркӳллӗ ялсене, 1880—1890 ҫулсем тӗлне пур яла та планласа ларта пуҫланӑ. Ҫав вӑхӑтран чӑваш чӗлхине пралук, пӑралук (переулок) сӑмах кӗнӗ. Земство йӗркипе хура пӳртре пурӑнакансене (XIX ӗмӗр вӗҫӗ—XX ӗмӗр пуҫламӑшӗ) ирӗксӗрлесе вырӑсла кӑмака ларттарнӑ. Кӑмакине тума укҫасӑр кирпӗч уйӑрса панӑ. Ҫак вӑхӑтран кил картинчи хӳтлӗхсене, сарай-кӗлетсене тӑваткӑлланӑ майпа ларта пуҫланӑ. Кил карти хыҫне ҫумри пахча тата авӑн карти (анкарти) вырӑнне уйӑрса хӑварнӑ.



Планласа лартнӑ ялсем

Ялсем пӗр енлӗ тата икӗ енлӗ ларакан ҫуртсенчен, урамсенчен, хурал пуҫтарӑнакан хурал пӳрчӗ, каланча ларакан, кӗтӳ кӑларакан тӑваткӑлсенчен, лаптӑксенчен, асӑннӑ пралуксенчен тӑнӑ. Яла уя, анкартине, уничене, улӑха, йӑлӑма, укӑлчана тухакан хапхасем хупса тӑнӑ. Хӑшпӗр ялта ҫуллахи каҫсенче выльӑха ял хапхисене питӗрсе урамра ҫӗр каҫарнӑ. Ҫӗрле вут-кӑвартан, ют ҫынсенчен сыхланма тесе черетлӗ хурала тухнӑ. Хурал пӳрчӗ ҫумӗнче сас памалли тимӗр-тӑмӑр е чан ҫакӑнса тӑнӑ.

Ял хӑйӗн пурнӑҫӗнче темӗнле вӑхӑт витӗр тухса иртнӗ: унта ҫӗнелни, сарӑлса аталанни, пӗтни е ҫӗнӗ вырӑна куҫса ларни...

1900—1910 ҫулсенче аслӑ саласенче, вулӑс кантурӗ ларнӑ ялсенче чиркӳсене кирпӗчрен купаланӑ, укҫа-тенкӗрен ҫителӗклӗ пурӑнакансем ялта пуҫласа кирпӗч ҫуртсем лартнӑ, тӑррине хӑма, шуҫ тимӗр витнӗ. Ял ҫумӗнчи шыв хӗррине тимӗрҫӗ лаҫҫисем лартнӑ. Ҫил арманӗсем хӑлаҫланса ларнӑ тапхӑр пуҫланнӑ.

1914—1925 ҫулсем. Пӗрремӗш тӗнче вӑрҫи, революци, Граждан вӑрҫи, выҫлӑх, ҫӗршӗн тавлашнӑ, ял хумханнӑ, ял-йыш пайланнӑ, ялти йӑла-йӗркене хирӗҫ тӑнӑ вӑхӑт.

1930—1939 ҫулсем. Колхозсем пуҫланса йӗркеленнӗ, ҫителӗклӗ хуҫалӑхпа пурӑнакансене пуян ҫын, кулак ят панӑ, хуҫалӑхне кӑкланӑ, ҫемйине ялтан Ҫӗпӗре е тӗрмене кӑларса янӑ вӑхӑт. Армансем юхӑннӑ, чиркӳсем хупӑннӑ ҫулсем. Улӑмпа витнӗ ҫуртсем ҫухалса пӗтсе пынӑ,

МТСсем пуçарса янă вăхăт.

1941—1945 çулсем. Иккĕмĕш тĕнче Аслă Отечественнăй вăрçи. Ял хуçалăхĕ лашасăр тăрса юлнă çулсем.

1945—1947 — выçлăх çулĕсем. Ялти халăха паспорт памасăр тытса тăнă тапхăр.

1945—1955 çулсем. Колхозсем аталанма чарăннă вăхăт.

1955—1960. Çерем уçнă вăхăт. Çамрăксем ялтан тухса кайнă (тарнă), колхоз-совхозсене пĕрлештерсе çĕнетнĕ, МТСсене салатнă, армансем çухалнă, ялсене электроçутă çитнĕ вăхăт.

1965—1985. Колхоз-совхоз правленийĕ вырнаçнă пысăк ялсем, усадьбăсем çĕнелнĕ, пĕчĕк ялсем юхăнса пĕтнĕ çулсем. Ялсенче çуртсене кирпĕчрен купаланă, çулсене асфальтпа витнĕ, ялсем «ватăлнă» вăхăт.

1986 — хальхи çулсем. Раççей тĕнчи, ял тĕнчи улшăннă вăхăт.

Ăнланатпăр: ял пĕтмест. Вăл çухалсан патшалăх та пулмасть. Çамрăксем çĕнĕ аталану çулне тупаççех. Патшалăхĕ те хуçалăха аркатакан чиртен чĕрĕлсе пыратех. Ял вăл шанчăка упракан, пурнăçа чĕртсе тăракан вырăн. Халăхра пурнăç аталанăвĕн вăйĕ пĕтмен-ха. Шанчăк пур.


Хăрах енлĕ урам. Кас. Касă. Ял

**Ял урамĕ**. XIX ĕмĕр вĕçне çитиччен ялсенче хальхи пек урамсем пулман. Урам сăмах кил карти тавра чавса тухнă канавăн тăпра купипе лакăмне пĕрлештерсе каланинчен çуралнă. Авал купине **ур, ор**, лакăмне **ям, ам** сăмахсемпе каланă. Вĕсенчен **урам** сăмах пулса тăнă.

Каярахпа килпе кил хушшинчи, икĕ енче вырнаçса ларнă çуртсен хушшине, вырăнне урам тесе каланă.

Авал пĕр кил-çурт таврашĕнче, пĕр çурт-йĕр хӳтлĕхĕнче пĕр ăратри, пĕр тăван йышсем, виçшер сыпăклă çемьесем пурăннă. Кил-çурт пӳртри темиçе çемьене хӳтĕлесе тăнă.

Пĕр урамра пĕр хурăнташ-тăвансем, тепĕр урамра теприсем пурăннă. Ялта темиçе урам пулнă. Урамĕсем хальхи пек тӳрĕ пулман, кукăр-макăррăн тăсăлса выртнă. Вĕсене XX ĕмĕр пуçламăшĕнче кăна планласа, тӳрлетсе пĕтерни çинчен асăнтăмăр.



Ям, почта, стан, ялĕ

**Ям** — XIX ĕмĕрччен почта, ям çурчĕ ларакан, ямшăксем пурăнакан ял. Почта, ямшăк хӳми, кӳми чарăнакан, лашасене кӳлсе улăштаракан вырăн. Чăваш енче çак ĕçпе ятпа çыхăннă ятсем: Ямаши, Яманово, Ямской Посад. Мускав — Хусан хушшинчи, Чăваш çĕр-шывĕнчи ям ларнă нумай яла хăйсен ячĕпех каланă. Вĕсен шучĕ вуннăран та иртнĕ. **Ям** тĕрĕк чĕлхинче почта станцийĕ, почта лаши, çул çинчи стан та. (Мурзаев — 648.)

**Усă курнă литература:**


*Авдусин Д.А.* Археология СССР. Учебник. М., 1977.

*Ашмарин Н.И.* Словарь чувашского языка в 17 т. Казань-Чебоксары, 1928—1950.

Большая советская энциклопедия, в 30 т. М.: Сов. энциклопедия, 1970—1978.

Большой энциклопедический словарь. СПб.: «Норинт», 1997.

*Воробьев Н.И. и др.* Чуваши. Этнографическое исследование. Ч. I. Чебоксары, 1956.

*Даль В.И.* Толковый словарь живого великого русского языка в 4-х т. М., 1989—1991.

*Димитриев В.Д.* Чувашия в эпоху феодализма (XVI—начало XIX вв.). Чебоксары, 1986.

*Егоров В.Г.* Этимологический словарь чувашского языка. Чебоксары, 1964.

*Иванов В.П., Фокин П.П. и др.* Этническая история и культура чувашей Поволжья и Приуралья. Чебоксары, 1996.

*Каховский В.Ф.* Происхождение чувашского народа. Чебоксары, 1965.

*Майдар Д., Пюрвеев Д.* От кочевой до мобильной архитектуры. М.: Стройиздат, 1980.

*Матвеев Г.Б., Фокин П.П.* Традиционная культура чувашей. Ч. I и II. Чебоксары, 1995.

*Мурзаев Э.М.* Словарь народных географических терминов. М.: Мысль, 1989.

*Наумов Н.Е.* Çамрăксен хаçачĕ, 1998, пуш, 6, 13, 20.

*Наумов Н.Е.* Хыпар, 1999, 80, 93, 99, 103, 109, 112, 114, 118, 121, 128, 130, 139, 140 №.

*Нестеров В.А.* Населенные пункты ЧАССР. Чебоксары, 1981.

*Никольский Н.В.* Краткий курс этнографии чуваш. Чебоксары, 1928.

*Ожегов С.И.* Толковый словарь русского языка. М.: Русский язык, 1990.

*Руденко С.И.* Башкиры. Историко-этнографические очерки. М., 1925.

Словарь лексических трудностей художественной литературы. Подиум. Былина: М., 1993.

*Федотов М.Р.* Этимологический словарь чувашского языка в 2-х т. Чебоксары, 1996.

Чӑвашла-вырӑсла словарь. М.: Русский язык, 1982.

*Шанский Н.М., Иванов В.В., Шанская Г.В.* Краткий этимологический словарь русского языка. М.: Просвещение, 1971.

<u>II уйрăм</u>

# ЯЛ-ЙĔР ТАВРАШĔНЧИ ХУШĂСЕМ, УЙРĂМ ÇУРТ-ЙĔРСЕМ, ÇУЛСЕМ, ВЫРĂНСЕМ

## 1 пайĕ. ЯЛ ТЫТĂМĔНЧИ, ЯЛ ÇУМĔНЧИ ХУШĂСЕМПЕ ЯТАРЛĂ ÇУРТ-ЙĔРСЕМ



**Авăн**. Йĕтем çинчи авăн вучахĕ, хушăсем. Авăн çапакан вырăн. Авăн çапнă вăхăтри ĕçсем. Анкарти çинчен вулăр.

**Анкарти** (авăн карти сăмахран) — йĕтем, йĕтем çинчи авăн вучахне, авса карталанă хушша, сарай-лупаса, хампара (анпар, ампар) — кĕлете, лаçа, йĕтем çине лартнă капансене, арпа-улăм куписене тата асăннă вырăна, йĕри-тавра тытса карнă картана пĕлтернĕ. Революциччен кашни хуçалăх пуçтарнă кĕрхи тыр-пула анкартине турттарса килсе капана хывса лартнă. Уй-хир ĕçĕ пĕтсен авăн çапнă. Тыр-пула алласа кĕлете, хампара кĕртнĕ. Арпа-улăма сарай-лупас çине улăхтарнă. Пушă кĕлтесене тепĕр хут капана е урана купаласа лартнă. Анкарти лаçĕнче хĕлле сухапуç-сӳресене, урапа-тăрантассене, çулла — çуна-кӳмесене упранă. Анкартие, пушартан сыхланса, шыв хĕррине, пахча хыçне лартнă. Авăн вучахне йĕтемрен уйăрнă. Çунакан вучаха пăхсах тăнă. Ялсенче колхозсем йĕркеленĕ вăхăтра анкартисем килти хуçалăхран тухса ӳкнĕ. Халĕ анкарти сăмах ял çумĕнчи вырăна, çарана, лаптăка пĕлтерет.



**Арман. Армансем**



**Арман** çавăрса, авăрса, тӳсе ирекен хатĕр. Армантан çăнăх авăртса кăлараççĕ. Армансем тĕрлĕ майпа, тĕрлĕ вăйпа ĕçлеççĕ. Вĕсене кура армансене тĕрлĕ ятпа палăртаççĕ: ал арманĕ, шыв арманĕ, çил арманĕ, вут арманĕ е пăспа ĕçлекен арман, механизмпа, электричествăпа ĕçлекен арман, сывлăшпа персе, ватса, çапса çăнăх кăларакан арман.

Шыв арманĕсене урапи, çунатти çавăрнине кура темиçе ятпа калаççĕ: каликлĕ арман, шывçи урапаллă арман, шыв тултармăш урапаллă арман, шывне урапин тĕнĕлĕ айĕнчен тултарса ĕçлекен арман, кисĕплĕ арман, шыв çинчи кимĕ çине лартнă арман. Революциччен Чăвашра тĕрлĕ вăйпа ĕçлекен 4300 арман ларнă. Çăнăх авăртакан армансемсĕр пуçне, çăм тапакан, пуснă çу кăларакан, пыл юхтаракан, какай авăртакан, выльăх çăвне шăратса кăларакан тата ытти армансем пулнă.






**Вулав çурчĕ** (изба-читальня). Вулав çурчĕсене 1930 çулсенче уçнă. Унта вулама пĕлменнисене хут вулама, çырма вĕрентнĕ. 1945 çулсем хыççăн вĕсем хупăннă. Халĕ вулав ĕçĕсене клуб çумĕнчи, шкул çумĕнчи библиотекăсем туса пыраççĕ.

**Выльăх карти**. Çулла выльăх кĕтӳре çӳрет. Улăхри кĕтĕве каçхине выльăх картине кĕртсе хупаççĕ. Выльăх картине кăшкар тенĕ. Лашасене кĕртсе тăракан картана — лаша кăшкарĕ. Çавăнтан лаша кĕпçи курăка лаша кăшкар ути ятпа калаççĕ. Сурăхсем тăракан картана — отар, утар, кошар, ĕневыльăхăнне ĕне карти тенĕ. Выльăх картипе юнашар кĕтӳçĕн ӳпли е çĕр çурчĕ, лаçĕ ларнă.

**Выльăх çăви**. Хăшпĕр çулта выльăхсене мур, мор чирĕ килсе лекет. Вĕсем вилсе пĕтеççĕ. Вилнĕ выльăха пĕр-пĕр типĕ çырма çумне пăрахса, çыран чавса çĕр

айне пытараççĕ. Кашкăр, тилĕ çисе мур чирĕ татах сарăласран сыхланаççĕ. Çав вырăна вылььăх çăви тесе калаççĕ.



**Йĕтем** (йĕт, çап сăмахсенчен) — авăн çапакан вырăн. Авăн çапма йĕтем касаççĕ. Çивĕч кĕреçепе лаптăкра ÿсекен курăк-çереме çивĕч савапа савалана пек касса тасатаççĕ. Йĕтем лаптăкĕ пысăк. Авал унта авăн юпи, авăн вучахĕ, авăн сарайĕ ларнă. Юнашарах тырă кĕртмелли лаç, кĕлетсем пулнă. Ана çинчен турттарса килнĕ çĕмелсенчен капан туса лартнă. Авăна тăпачпа çапнă.



1940 çулсенче тырпула (кĕлтене касса) трактор çаврăкан е лашасем çаврăкан молотилкăсемпе çапнă. 1960 çулсем хыççăн комбайнсемпе пуçтарнăран йĕтем çинче тыр-пула алласа кăна тасатаççĕ. Йĕтемне те складсем çумне каса пуçларĕç. Йĕтем çине, складсем çумне пушара хирĕç шыв чанĕсем лартаççĕ.

**Мичĕт** (арабла — чĕркуçленсе кĕлĕ тумалли вырăн). Тутар ялĕсенчи мăсăльман тĕнĕ йĕркипе пурăнакансен кĕлĕ тумалли вырăнĕ. 1917 çулччен Чăваш енре 38 мичĕт, 1995 çулта — 2 мичĕт, 1997 çулта 24 мичĕт пулнă.



**Карта** (кар сăмахран). Карта — вырăна уйăрса, карса, хÿтĕлесе тăракан хушă. Ку статьяра ял (хула) карти çинче чарăнса тăрă-



**Картасем**



**Картасем**

пăр. Ытти картасем çинчен ятарлă уйрăм калăпăр. Ял çумĕнчи вырăнсене пула, ял картине тата йăлăм, пусă, уй, укăлча (вырăссен околица сăмахĕнчен), улăх, униче карти тесе калаççĕ. Ял карти яла хӳтĕленĕ. Ял карти хапхаллă (ял хапхи çинчен каярах вулăр). Çуллахи каçсенче ял картине выльăх кĕртнĕ. Ку йăла 1950 çулсем тĕлĕнче çухалнă. Картана (ял-хуласенче) теменле япаларан та (материалтан) тытаççĕ: вĕрлĕкрен, кирпĕчрен, пăралукран, йĕплĕ пăралукран, решеткерен, сайхахран, çатан хăвинчен, тăпра чавса — тăпраран, тимĕртен, тимĕр-бетонран, хăмаран, хӳме-пураран, чикмерен (тĕкмерен), чулран, чалчаран, шăтăрнакран.

Паллах, хула çирĕп картишне тытнă çĕрте хаклă материалсемпе усă кураççĕ. Хальхи вăхăтра ял картине пур ялта та тытмаççĕ.





**Ял хапхине** ял картинчен тухса çӳреме лартаççĕ. Ял хапхине уй, укăлча, улăх, униче, пусă, пусха çи хапхи тесе те калаççĕ. Хапха вăл — пушă вырăна, хушăна уçса-хупса тăракан хупăлча. Чăвашсем ял хапхине пĕр хупăлчаллă лартаççĕ. Ял хапхинчен пысăк лавпа кĕрсе çӳреççĕ. Унпа юнашар е уйрăм вырăнта — ял сукмакĕ тĕлĕнче, калинкке лартаççĕ е урлă пусма, каçă хываççĕ.

**Киремет** (керемет) — (кер ама от — вут-çурт ами вучĕ. Ама вут çурчĕ сăмахран), авалхи чăвашсен кĕлĕ, чӳк ирттермелли ятарлă вырăнĕ, хушши, çурчĕ, вучахĕ. Çӳлти Турă ывăлĕн ячĕ. Кĕлĕ ирттермелли йăла. Киремет — вăрман хушшинчи таса вырăн. Вăл шыв çумĕнче. Киремет лаптăкĕнче, кăвапи тĕлĕнче киремет йывăççи ӳсет. Киремет лаптăкĕ тăват кĕтеслĕ: 80х120 е 120х180 тăваткăл метрлă. Киремет карти виçĕ хапхаллă. Вĕсем хĕвел тухăç, хĕвел анăç тата çурçĕр енче. Кăнтăр енче киремет çурчĕ, вучахĕ. Çурçĕр енче (хапхинчен тухсан) юхан шыв

е кӳлӗ, ҫӑл куҫӗ. Киреметри аслӑ чӳке ҫинҫе уявӗнче, ҫӗртме уйӑхӗнче, хӗвел чӑн тӳпере (22.06) пулнӑ вӑхӑтра ирттереҫҫӗ.

**Клуб** (вырӑс чӗлхинчи колубок сӑмахран). Клуб ҫурчӗ халӑх пуҫтарӑнса пуху ирттермелли, кино-спектакль курмалли тата ҫамрӑксем тӗл пулӑвӗсене ирттермелли вырӑн.

**Колонка**. Шыв колонки (вырӑс сӑмахӗ). Шыв юхтарса илмелли валак. Хӑш-пӗр ялта ҫӗре шыв ҫӳрекен сий таран шӑтарса тимӗр пӑрӑх лартса тулашра (ҫӳлте) ларакан чана (башня) тултаракан насус станцийӗсем лартаҫҫӗ. Чанри шыва пӑрӑх тӑрӑх колонкӑсем урлӑ шыв ӑсаканӗсене салатса параҫҫӗ.

**Колхозӑн (совхозӑн) ҫурт-йӗрӗ**. Вӑл темиҫе лаптӑкра та. Машина-трактор ларакан лаптӑк, лаша витисен карти, ӗне-выльӑх карти, сысна, сурӑх (ферма) витисен карти. Тыр-пула упракан складсен лаптӑкӗ тата хуҫалӑхра кирлӗ ытти ҫурт-йӗр, хушӑсем.

**Лавкка** (вырӑс чӗлхинчи лавка сӑмахран). Суту-илӳ тумалли ҫурт. Пур ялта та лавкка ҫук. Пысӑк ялта икӗ-виҫӗ лавкка та пулма пултарать. Хӑшӗнче


















апат-ҫимӗҫ, хӑшӗнче тумтир, хуҫалӑх япалисем сутаҫҫӗ. Лавкка ҫуртне йывӑҫран, чулран (кирпӗчрен) купалаҫҫӗ. Лавккара лавккаҫ сутӑ тӑвать.

**Масар** (араб. мазар – таса вырӑн. Кӗлӗ вырӑнӗ) — ҫӑва. Масар, ҫӑва ялӑн ҫурҫӗр е ҫурҫӗр-хӗвел анӑҫ енче ял ҫырмин, ялти ҫулӑн тепӗр енче ларать. Масар, ҫӑва леш тӗнче шутӗнче. Ҫавӑнпа масара ҫӗр карти (канав) чавса ытти лаптӑкран уйӑраҫҫӗ. Масар ҫине кӗрекен вырӑна каҫӑ хываҫҫӗ.

Масар сӑмах чӑваш чӗлхине X ӗмӗр тӗлӗнче кӗнӗ. «Ҫӑва» ҫинчен вулӑр.

**Пасар** (тӗрӗксен – базар, ярмӑркка сӑмахсенчен) — суту-илӳ тумалли вырӑн. Тахҫан авал пасар лаптӑкӗ аслӑ ҫулсем пырса юпленекен тӑваткӑлсенче, лаптӑксенче ларнӑ. Каярахпа ҫавӑн пек вырӑнсенче пасар ялӗсем, хулисем пулса кайнӑ. Авалхи Атӑлҫи Пӑлхар патшалӑхӗн Атӑл ҫыранӗнчи Ака пасарӗ (Ага базар) ятлӑ вырӑн пирки илтнех ӗнтӗ. Пасар лаптӑкӗнче суту-илӳ тумалли лаптӑксем, лавккасем лараҫҫӗ. Выльӑх, катка-пичке, урапа-ҫуна, кӗрепле-ҫава, апат-ҫимӗҫ, тыр-пул, пыл-ҫу, эрех-сӑра т.ыт. япаласене сутакан

вырăнсем пур. Темиçе ялăн пĕр пасар. Пур пасарăн та хăйĕн кунĕ пулнă. Халь ялти пасарсем шăмат кун е вырсарни кун ĕçлеççĕ, хулари пасарсем эрнипех уçă.

**Почта** (вырăс сăмахĕ, вырăс чĕлхине итальян, поляк чĕлхисенчен кĕнĕ, «станци, остановка» сăмаха пĕлтерет). Çыхăну тытăмне йĕркелесе тăракан станци. Çыру, хаçат, посылка ярса илмелли вырăн.

**Правлени çурчĕ**. 1930—1939 çулсенче (ялсенче) колхоз йĕркеленнĕ вăхăтра уйăрса лартнă е пуянсенчен туртса илнĕ, колхоз пуçлăхĕсем ĕçлесе лармалли çурт.




**Пусă** (пус сăмахран, ана пус, пусса чакала, пусса ăсса ил) — шыв тараси, шыв пури, шыв лакăмĕ. Пусă тесе кил, вырăх карти çумĕнчи тарасана калаççĕ. Тараса çинчен вулăр. Тараса ўкерчĕкне пăхăр.

**Сунар** (тĕрĕк чĕлхинчи сонар, сунар, хунар — чи малтанхи юр, юр хўсе витнĕ вырăн сăмахран) — тискер кайăка йĕрлесе тытни. Сунарçă çурчĕ — вăрманти сунар вăхăтĕнче пурăнмалли е усă курмалли çурт, лаç, лупас, çĕре чакаласа лартнă ўпле, йывăç çине улăхтарса лартнă хўтлĕх.



**Çăва** (ирçесен чувамс — чавать сăмахĕнчен пулса кайнă пулмалла) — вилĕ шăтăкĕ, вилĕ пытарса хупласа хывнă вырăн, вилĕсене çĕр айне алтса пытаракан вырăнăн лаптăкĕ. Чă-



ваш тĕнĕнче: çăва леш тĕнче тĕлĕ, леш тĕнчене кĕмелли вырăн шутланать. Çăва тĕпĕ леш тĕнче пайĕ, çăва шăтăкĕ тĕпсĕр, ӳксен, пăрахсан тухаймастăн. Çăва çинче юпа ларать. Çăва пуçлăхĕ — çăва уçса чи малтан пытарнă вилĕ çын. Çăва çинчи çурт — çăва шăтăкне чавакансене кĕрсе тухмалли çурт. Çăва карти, çăва лаптăкне карса тăракан карта. Çăва кĕперĕ, çăва çинчи каçă, çăва çине кĕмелли вырăна хывнă каçă. Масар çинчен вулăр.



**Çăл**. Çăл куç — çĕр ăшĕнчен (варĕнчен), çыранран çул тупса юхса тухакан, тапса тăракан шыв вырăнĕ, шыв куçĕ. Çăл тухакан вырăна чакаласа ансат ус, ăвăс пури лартаççĕ. Пурăран валак кăлараççĕ. Пурин çĕр ăшĕнчи енне чул купалаççĕ, пурана çурмалла çурнă йывăçсемпе хуплаççĕ, çĕрпе витсе хураççĕ. Валакран юхса тухакан шыва каскаран касса чакаласа тунă курите — валака е валашкана юхтармалла тăваççĕ. Çăл кутĕнче выльăха шăвармалли, кĕпе-тумтир чӳхемелли валашкасем тата кисĕп, килсем лартаççĕ. Валашкисене сиктерсе хывмалли валаксем тăрăх шыв юхтарса тултараççĕ.

**Çул**. Виççĕмĕш уйрăмра вулăр.



**Тараса**. Тĕрĕк чĕлхинче виçев хатĕрне, пĕр арыкран тепĕр арыка шыв ăсса ямалли хатĕре пĕлтерет. Чăвашсем çĕр алтсан, чавсан шыв тухакан вырăна лартнă пурана шыв ăсса кăлармалли хатĕре тараса теççĕ. Тараса пурине йывăçран, чулран, тимĕрбетон кăшăлĕнчен тăваççĕ. Тараса ăшăх та, тарăн та пулать. Тараса пурине çĕр çийĕнчен чылай хăпартса купалаççĕ. Пурине ярсан çĕр ярса тултараççĕ. Çине тăм купалаççĕ. Çумăр шывĕ, тăкăнакан шыв тараса тулашне юхса тăмалла тăваççĕ. Тарасари шыва — тараса пусси çине е валпа çавăрса улăхтаракан сăнчăр çине çакнă е йывăç çекĕлĕ çинчи витрепе ăсса кăлараççĕ. Тараса çумне выльăха шăвармалли, кĕпе-тумтир çумалли







валашкасем лартаççĕ. Тарасана, шывне тăкса, çулталăк хушшинче тасатсах тăраççĕ.

**Тĕрме.** (Тĕрĕк чĕлхинче тюрьма, хупăнса тăракан вырăн, çурт.) Айăплă çынсене хупса, питĕрсе тăмалли хупă çурт, ӳпĕнтернĕ варинкке евĕр чакаланă тарăн шăтăк, ям.

Чăваш ялĕсенче тĕрме пулман. Айăпланнисене хурал пӳртне илсе пынă. Унта ваттисем вĕсене тӳрре кăларнă.

Тĕрмесене вулăс, ямшăк станци ялĕсенче лартнă пулнă. Халĕ вĕсене хуласенче ятарлă вырăнсенче лартаççĕ.

**Тимĕрçĕ лаççи** — тимĕрçĕ ĕçлекен вырăн. Тимĕрçĕ лаççине йывăçран, чулран, кирпĕчрен купаласа лартаççĕ. Чи пахи — вучахĕпе сунталĕ. Тимĕрçĕ лаççине шыв хĕррине лартаççĕ. Унта хуçалăхра кирлĕ япаласене тимĕртен шаккаса тăваççĕ, урапа-çуна кăшăллаççĕ, лашасене таканлаççĕ. Хальхи трактор-машина ларакан парксенчи тимĕрç лаç-










çинче кăткăс япаласем шаккаса хатĕрлеççĕ.

**Урам, пралук** çинчен маларах, I пайра çырса кăтартнă. Урам вăл — икĕ енĕпе йĕркипе ларакан çуртсен хушшинчи çул вырткан вырăн. Пралук — темиçе (пиллĕк) çурт-йĕр хушшинче — пушар сикесрен хăварнă ансăр вырăн, лаптăк.

**Утар** — хурт вĕллисем ларакан вырăн. I пайри статьяна вулăр.

**Фельдшер çурчĕ**. (Фельдшер сăмах вырăс чĕлхинчен кĕнĕ. Нимĕç чĕлхинче вăрçă уйĕнчи парикмахер сăмаха ăнлантарать.) Чирлĕ çынсене хăвăрт çăмăл пулăшу паракан вырăн. Ялсенче 1940—1950 çулсенче йĕркеленнĕ.

**Ханкăр**. **Канкăр** — çĕр ăшне чакаласа тунă кирпĕч е чӳлмек хĕртмелли кăмака. Кирпĕч купаласа хĕртмелли, кăрчака чӳлмекĕ пек хырăмлă (2:3 м), тарăн шăтăклă (3 метр) кăмака. Кăмака айĕнче — вучах. Вут хывса çунтармалли пырĕ (0,5:1 м) çĕре май (горизонталлĕ) çыран хĕррине тухса тăрать. Алпа çапса туса типĕтнĕ кирпĕче ханкăр кăмакине хушăксем хăварса шăтăклă хывса купалаççĕ. Çӳлте тӳпе тăваççĕ. Тӳпинчен тĕтĕм тухмалли мăрье,

шăтăк хăвараççĕ. Малтанхи кун вучаха вăйлă çунтармаççĕ, кирпĕчне типĕтеççĕ. Кирпĕч типсе çитсен вучахри вутта пĕр виçĕ кун вăйлă çулăмпа çунтараççĕ. Вучаха çунтарма, вут тума пĕр-пĕр кивĕ çуртăн пурине илеççĕ. Вучах çулăмпа хĕрсен çӳлти, тӳпери кирпĕчĕсене (0,5 м) тăпрапа сапса хупласçĕ. Мăрйине хупламаççĕ. Кирпĕч пиçсе çитнине мăрьери



шăтăкран турчкапа шаккаса пĕлеççĕ. Кирпĕч пиçсе çитсен мăрьене те, вучахăн пырне те хупаççĕ. Кăмака сивĕниччен ханкăра уçмаççĕ, кирпĕче салатмаççĕ.

**Хурал пӳрчĕ. Хурал тăмалли çурт**. XVI ĕмĕрте анлă сарăлнă. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче йăларан тухнă. Ял çыннисем хурал пӳртĕнче черетпе хурал тăнă. Яла вут-çулăмран, ют çынран, вăрă-хурахран сыхланă. Хурал пӳрчĕ çумĕнче авал «янракан» хăвăл каскасем, каярахпа чан е янракан тимĕр çакăнса тăнă. Вĕсене пушар вăхăтĕнче çапса халăха систернĕ. Тата хурал пӳрчĕ çумĕнче пĕр-пĕрин çине тайăнса тăракан виçĕ уралла çӳлĕк (вышкă) çĕкленсе тăнă. Çавăн çинчен ял таврашĕ ал тупанĕ çинчи пек курăннă. Хурал пӳртне ваттисем канашлама, пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçма пуçтарăннă.



**Часавай** (вырăс чĕлхинчи часовня сăмахран) — чăвашсене Христос тĕнне йышăнтарнă хыççăн ял Туррине асăнакан, ял ăрат чӳкне иртттерекен тĕле юпа лартса турăш çакнă вырăн. Часавай — ял лаптăкне, çĕнĕ çăва, масар çине, çул юппине, çăл куç умне, кӳлĕ







çумне, юхан шывăн паллă сыранĕ çине, авал чӳксем ирттернĕ асамлă вырăна лартнă. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче часавайсене кирпĕчрен купаланă. Революци хыççăн (1940 çулсем тĕлнелле) вĕсене ватса пĕтернĕ.

**Чиркӳ (чирĕк)** (вырăс чĕлхинчи церковь сăмахран). Чăваш енри ялсенче чиркӳсене XVIII ĕмĕрте йывăçран купаласа лартнă, XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче кирпĕчрен (чулран) тунă. 1930 çулсенче вĕсене ватса хупса пĕтернĕ. Халĕ çĕнĕрен юсаççĕ, уçаççĕ . Паянхи куна ялсенче вĕсен шучĕ 200 ытла.

**Шкул** (вырăс чĕлхинчи школа сăмахран). Ачасем вĕренме, пĕлӳ илме çӳрекен ятарлă çурт-йĕр. Ялсенче — пуçламăш пĕлӳ паракан е тăхăр класлă, е вăтам шкул. Чăваш ялĕсенче чиркӳ çумĕнчи чи малтанхи шкулсене XIX ĕмĕр вĕçĕнче уçнă. XX ĕмĕр пуçлансан шкулсене Земство енĕпе те уçма пуçланă. 1914 çул умĕн Чăвашра пуçламăш шкулсен шучĕ 743 тарана çитнĕ. 1997 çулта, хуларисене шута илмесĕр — 548 шкул, вĕсенчен вăтам пĕлӳ параканни — 436 шкул.

**Ял администрацийĕн (Ял Совечĕн) çурчĕ**. Ялсенчи патшалăх ĕçне туса пыракан органсен вырăнĕ. Вĕсем час-часах колхоз е совхоз правленийĕн çурчĕсенче вырнаçаççĕ. Нумай çĕрте ятарлă çуртсем пур.



**Ярмăркка** (тĕрĕк чĕлхинче «ярăм» çулталăк тенине пĕлтерет. Нимĕç чĕлхине çулталăк пасарĕ ăнланупа хунсем, тĕрĕксем урлă кĕме пултарнă) — çулталăкра пĕрре ятарласа ирттерекен аслă пасар. Куславкка, Сĕмĕл, Çĕрпӳ, Хусан, Макарье, Чулхула ярмăркки тата ыттисем те. Ярмăрккара тавара пасартинчен йӳнĕрех хакпа сутаççĕ. Ярмăркка вăхăтĕнче сутуилӳçĕр пуçне тата чуччу (карусель) лартса вăйăкулă, ăмăртусем ирттереççĕ. Ярмăркка асра юлакан пулăм.



# ЯЛ-ЙĔР ТАВРАШĔНЧИ ХУШĂСЕМ, УЙРĂМ ÇУРТ-ЙĔРСЕМ, ÇУЛСЕМ, ВЫРĂНСЕМ

## 2 пайĕ. ЯЛ ÇУМĔНЧИ ВЫРĂНСЕМ



**Ака** — ана, ана сухи, ана йăранĕ, ана çине тырă акни тата ака-суха ĕçĕ, хатĕрĕ, таврашĕ. Ака пуçличчен ана çӳмĕнче ака пăтти пĕçерсе чӳк тунă. Ака пĕтсен акатуй туса уяв ирттернĕ.

**Ана** — суха тумалли вырăн, уйăрса палăртнă çĕр лаптăкĕ, сухаланă йăран, тырă акнă, калча ӳсекен уй. Авал ялсенче çĕре ятран (арçынсене) валеçнĕ вăхăтра пĕр ят çĕре е пĕр теçеттине пĕр ана тесе каланă. Теçеттин пĕр пек пулман. Патшалăх теçеттинĕ — 1,09 гектар. Хуçалăх теçеттинĕ (18—19 ĕмĕрсем) 1,45 гектар шутланнă. Пĕр ят çĕр, пĕр ана. Пĕр пай ани пур ялта та, çĕр пурлăхне кура, пĕр пек пулман. Пĕр ана 0,36—1,45 гектар хушшинче пулма пултарнă. Пĕр теçеттин (1,09 га) пĕр ана шутран ана пайĕсене çапла тупма пултаратăр: 1/2 ана — çурпилĕк (0,5045 га). Хуçалăх теçеттинĕнче (1,45





гектар) 1/3 ана — çурпилĕк (0,4833 га), 1/4 ана — тӳтерĕм. Чĕрĕк ана пĕр тăваткăл. Пĕр тăваткăл — хăрах йăран. Çур пилĕкрен пĕр авăн (хĕрĕх пăт) тырă тухать тенĕ.

**Вар** (тĕрĕксен ор, ур — чакалать сăмахран). Çырма. Ишĕлсе тăракан сăртлă çырма е курăк пусса лапаланнă çырма. Шывлă вар, типĕ вар, чуллă вар, юшкăн анса тулнă вар, лачакаллă вар, ăшăх вар, кăмăр вар, тарăн вар. Тарăн варта чул тухать. Чул хушшинчен çăл тухать. Тарăн варта тараса. Шывне ăсма пит(ĕ) ăшăх, çĕклесе ухма пит(ĕ) йывăр. Уйри çырма вăрăм, вăрманти вар кĕске.

**Вăйă лаптăкĕ** — ялялсенче çурхи уявсене, ака туйне ирттермелли уйрăм вăйă лаптăкĕсем пулнă. Халĕ те сыхланса юлнă. Унта лашасене чуптарса кĕрешеççĕ, юпа тăрне улăхса сатурлăха кăтартаççĕ. Пĕр-пĕринпе кĕрешсе вăй виçеççĕ. Карталанса юрă юрлаççĕ, ташă ташлаççĕ, савăнаççĕ. Вăйă лаптакĕсем, çывăхри улăхра, çаран çинче е вăрман уçланкинче пулаççĕ. Вăйă лаптăкне улăх утти таптаниччен çӳреççĕ.

**Вăрман** (урман сăмахран). Хăй тĕллĕн тĕрлĕ йывăçсем ӳсекен виçесĕр пысăк













лаптăк. Вăрманта тĕрлĕ чĕр чунсем, кайăксем пурăнаççĕ. Каснă йывăç çумĕнче çамрăкки ÿссех тăрать. Вăрман хăтлă. Ял вăрманĕ, яла уйăрса панă вăрман. Патшалăх вăрманĕ, патшалăх тытăмĕнчи вăрман.

**Йăлăм** (тĕрĕксен элçĕр, çĕр-шыв сăмахĕнчен) — улăх-çаран. Çуркунне шыв илекен улăх. Атăл тăрăхĕнчи улăх. Йăлăм ути (утти) — ухрути (ыхрав утти) кукăль тума пит(ĕ) селĕм. Йăлăмра утă вăйлă ÿсет. Ăна çулса пуçтарса капана хываççĕ. Хĕлле Атăл урлă турттарса килеççĕ.

**Ката — раща**. Ял çумĕнчи, вăрман çумĕнчи çĕнĕ хунав вăрманĕ. Хăй тĕллĕн ÿснĕ авалхи йывăççене каснă хыççăн çĕнĕрен лартса ÿссе çĕкленекен вăрман вырăнĕ. Мулкач кати, вăйă ирттерекен ката, пирĕн ял кати. Малти ката, Кайри ката.

**Кĕлĕ вырăнĕ**. Авал чăвашсем хăйсен йĕркипе турра кĕлĕ тунă. Кĕлĕ ирттерекен вырăнсене чÿк вырăнĕ, чÿк уйĕ, учук вырăнĕ, киремет тесе каланă. Çав вăхăтран: кĕлĕ карти, кĕлĕ хапхи, кĕлĕ вăрманĕ, кĕлĕ касси ятсем юлнă.

**Кушар вырăнĕ.** (Кошар, кошара, сурăх выль-

ăхсен карти сăмахсенчен). Хăш-хăш ялта çамрăксем вăййа, пухăва пуçтарăнакан вырăна кушар тесе калаççĕ. Авал сурăхсене çаран çине кăларнă, вĕсен çăмне каснă йăлапа çыхăннă уяв пулнă вăл. Çав вăхăтра çамрăксем вăйă вылянă. Вăйă вырăнне те, вăхăтне те вĕсем кушар тенĕ.





**Кўлĕ** — кўлленсе тăракан шыв, шыв лаптăкĕ, шыв пуххи. Кўлĕсем çĕр путса тăракан вырăнсенче, юхан шывсен çумĕнчи улăхсенче, вăрман варринчи айлăм вырăнсенче сарăлса выртаççĕ. Нумай кўлĕрен юхан шывсем уçăлса юхса тухаççĕ. Кўлĕсем çумĕнче кĕлĕсем ирттернĕ. Чи таса, чи асамлă кўлле çутă кўлĕ, çут кўл тенĕ. Тĕнри Çут кўл тĕпсĕр, темле типĕ çул пулсан та вăл кўлĕре шыв типсе чакмасть. Çут кўл тĕнче тинĕсĕпе çыхăнса тăрать тенĕ. Темĕн ятлă кўлĕ те пур. Вĕсене кўлĕ паллине кура ят панă. Çăрттан, кăвакал, акăш, хура, тĕпсĕр, вăрман кўлли т.ыт.те. Кўлĕсем çумĕнче ялсем те вырнаçаççĕ: Кўлкасси, Кўлхири (кўл хĕрри), Кўлçырма тата ыт. те.

**Лачака** — ăшăх кўлĕ, шурлăх, путса, çăрса тăракан лачака курăкĕ ўссе симĕсленекен вырăн. Лачака вырăнĕнче юшкăн тăпри, хура пылчăк тăпри хулăн. Лачакана кĕрсен лакса ларма, путса вилме пулать. Лачака çумĕнчи çаранта утă лайăх ўсет.



**Пĕве** — юхан шыва пĕвелесе лартнă вырăн. Ăна çырантан (тăпраран), çатан картипе тăпраран, йывăç пурана тăпра тултарса, сăвай (тĕкме) çапса, хўме туса, бетон ярса, стена пўлсе тăваççĕ. Пĕве юхан шыва пуçтарса кўллентерет. Пĕвери шывпа шыв арманĕ авă-



рать, электричество кăларакан машина çаврăнать. Пĕвери шывпа уй-хире, çарана, пахча çимĕçе, хăмла пахчине шăвараççĕ. Пĕвере пулă, хур кайăк ĕрчетеççĕ. Пысăк пĕвесем урлă çул хываççĕ.

**Пусă. Пуска çи** — сухаласа, акса тăракан ана, уй. Ял çумĕнчи ана. Виçĕ е пилĕк çулта тыр-пул акмалли анасен улшăнса тăракан пайĕ.





**Пуху. Пуху лаптăкĕ.** Пуху вырăнĕ — анлă лаптăк, уçă вырăн, урам тăваткалĕ, шыв хĕрринче çеремлĕ вырăн, ял кĕтесси. Унта ларса тăмалли каскасем, йăванса выртакан йывăçсем, ятарлă тенкелсем лараççĕ (выртаççĕ). Пуху лаптăкне пуçтарăнса ялти халăх ял ыйтăвĕсене сӳтсе явать. Кĕтӳ, касу кĕтекене тытас ыйтăва, пушартан сыхланас тата ытти ĕçсене пăхса тухать. Çакăнтах çамрăксем вăйă каçĕсене пуçтарăнаççĕ. Вĕсем валли чуччу, çавраçи (карусель) лартса параççĕ.



**Сăрт. Сăрт-ту** (сырт — тĕрĕк сăмахĕ). Каçан, ишĕлсе куçса тăракан ту сăмахран. Чăнкă, çӳллĕ вырăн, юхан шывăн чăнкă çыранĕ. Авалхи сăртсем çеремленсе кайнă, вĕсен айлăмĕнче йывăç, вăрман ӳсет. Юхан шыв чавсинчи сăртсем ишĕлсе юхса тăраççĕ. Вĕсен тĕлĕнче çĕр ăшĕнчи

тăм, тăпра, чул-хăйăр, çийĕнчи хура тăпра, çерем курăнса тăрать. Сăрт çинчи тӳпеллĕ вырăна е сăрчĕпе пĕрле сăрт-ту тесе калаççĕ.

**Çырма** — çыр, çыран, çурăк, яр сăмахсен йышĕнчен. Шыв çурса йĕр тунă вырăн, юхса выртакан шывăн хĕрринчи çыранĕ, тайлăкĕ, сăрчĕ. Тип çырма — çулла типĕ, çуркунне е çумăр вăхăтĕнче шыв юхса анакан тайлăклă çыран.





**Тапă** (тĕрĕксен топ — ушкăн сăмахĕнчен). Вăхăтлăха, вăййа пуçтарăнмалли лаптăк. Тапă уçланкăра, улăхра, шыв çумĕнчи лапамра пулать. Вăйă вырăнĕ çинчен вулăр.

**Тапăр.** Кĕтĕве, выльăха, касуна кăнтăрлахи вăхăтра выртмана илсе пымалли вырăн.

**Тĕме.** Купаланса çĕкленсе тăракан вырăн. Пĕчĕк тĕме (т), пысăк т., мăнтăр т., Улăп тĕми (т.), Киремет т., Тĕтрĕк т., Кĕл т., Чӳк т.

**Ту.** (Тĕрĕк чĕлхинче ту, тау, таг, даг — çӳллĕ, чăнкă, чуллă, çирĕп сăрт). Сăрт, тĕме, çӳллĕ вырăн. Чăнкă ту (т.), çӳллĕ т., сĕвек т., Чике т., карман т. Чăваш енче 100—250 м çӳллĕш тусем пур. Шупашкарти асăну сăртĕнчи ту (т.) 125 м, Атăл тăрăхĕнчи Уракăвă ялĕ (я.) çумĕнчи (ç.), Ятсăр т. — 193 м, Кивĕ çурт я.ç. Чар т. — 192 м, Куславкка ç. Качака т. — 190 м, Хусана хирĕç çыранри Арăслан (Услон) т. — 224 м, Кама шывĕ Атăла юхса тухакан тĕлти Тур çи (Богородские горы) т. — 192 м çӳллĕш.

**Тӳпе.** Сăрт-ту, сăрт-ту тăрри, сăрт-ту тăрринчи лаптăк, сăрт-ту пуçĕ.

Çичĕ (çиç) тӳпе (т.), виç(ĕ) т., çĕлен тӳпи (т.), кашкăр т., тăмана т., çăва т., Киремет т.

**Уй, ой, уйă** (тĕрĕк чĕлхинчи ой — лакăм, тайлăк, палăрса тăракан вырăна ăнлантаракан сăмах) — уçăлса тăракан вырăн, улăх, анлă лаптăк, ана, сухаласа, акса уйра тыр-пул ӳçтереççĕ. Уя — уй









сыхчи сыхлать, уй турри пăхса тăрать. Уйра уй чӳкĕ ирттереççĕ. Уйпа уя уй юпи уйăрса тăрать.

**Укăлча** (вырăссен околица сăмахĕнчен) ял çумĕнчи, ял таврăшĕнчи вырăн.

**Улăп тĕми** (тĕрĕксен халапĕнче, Улăп, Алп, Алпамыш — пысăк вăйлă паттăр. Алп, Улп купа сăмаха ăнлантарать).

Чăвашсен халап-юмахĕ тăрăх чăвашсем Улăп йăхĕнчен пуçланса кайнă. Лаптăк вырăнти, уй-хирти тĕмене вĕсем Улăп тăпри, Улăп тĕми тесе калаççĕ. Çак вырăнта Улăп çăпати ăшне тулнă çĕре силлесе кăларнă пулать.

Икĕ тĕме юнашар лараççĕ пулсан икĕ çăпатине те силленĕ пулать. Çапла лаптăк вырăнта тĕмесем пулса юлнă тесе шутлаççĕ (тĕме сăмаха вулăр).

**Улăх** (ут(лăх) — утă ӳсекен сăмахран) — утă çаранĕ, шыв хĕрринчи, шыв çыранĕнчи çаран. Улăхра утă сулаççĕ. Улăхра капансем лараççĕ. Улăхра кĕтӳ çӳрет. Улăхра выльăх утарĕ ларать. Улăх ухрути симĕс сухан пек тутлă, кăвак чечеке ларсан хытса каять.

**Униче** (анинчи, тĕлĕнчи вырăн сăмахран) — ял çумĕнчи çерем, çĕр, вырăн. Укăлча.

**Хир** — çын пурăнман, сухаламан, çеремлĕ, анлă вырăн. Чăваш енĕн кăнтăр енчи вырăнне авал çеçен хир тенĕ. Çеçен хир, пушă хир, вĕçсĕр курăнакан хир. Хир кайăкĕ, хир лаши, хирти кĕтӳ. Аслă çеçен хирсем Раççейĕн кăнтăр, кăнтăрхĕвел тухăç енче выртаççĕ.

**Чӳк вырăнĕ**. Чăвашсене Христос тĕнне йышăнтариччен ял тытăмĕнче, кил çумĕнче чӳк вырăнĕ пулнă. Çав тĕлте лăпăска туратлă йывăç ларнă. Çакăнта яла хӳтĕлекен турра, яла пуçласа яракан ватăсене, ăратра пурăннă несĕлсене асăннă. Çулталăк хушшинчи асăнмалли ырă-усала чӳкленĕ. Çĕнĕ вилесене асăннă. Çывăхри çырмана, вырăна вĕсен япалисене пăрахнă.

**Шур. Шор** (тĕрĕксен су — шыв сăмахĕнчен) — лачакаллă, кӳлĕллĕ, шывлă вырăн. Шурлăх. Пĕчĕк ăшăх кӳлĕ. Ял çумĕнчи кӳлĕ, шыв кӳлленчĕкĕ.

**Юхан шыв** (юх, шыв сăмахсенчен). Çырансен хушшинче юхса тăракан, юхса выртакан шыв. Шырланлă вырăнта шыв юхса тăрать, кӳлленчĕкре кӳллен-











се выртать. Юхан шыв çăл кусĕнчен, шурлăхлă вырăнтан пуçланать, аслă юхан шыв тинĕсе юхса кĕнĕ çĕрте вĕçленет. Çак тĕлте вăл хăйăр, тăм, юшкăн сапать, вăррине акать. Çавăнпа юхан шыв юхса кĕрекен вырăна вăрри е çăтмах тесе калаççĕ. Авал вилнĕ çыннăн чунĕ те юхан шывран юхан шыв çине тухса вĕççĕр тĕнче тинĕсĕнчи çăтмаха, леш тĕнчери çылăхсăр çутă вырăна ишсе каять тенĕ. Пĕр юхан шыва тепĕр юхан шыв çăтса тăнăран, юлашкине тинĕс çăтса янăран леш тĕнчери пурнăçа чăвашсем çăтмах тесе калană.

Çавна кура кивĕ йĕрĕх хуллисене, пуканесене çурхи юхан шыва пăрахнă. Юхан шыв вĕсене çăтмаха çитерет тесе шутланă. Юхан шыв ку тĕнчерен леш тĕнчене илсе каякан çул шутланнă.

# ЯЛ-ЙĔР ТАВРАШĔНЧИ ХУШĂСЕМ, УЙРĂМ ÇУРТ-ЙĔРСЕМ, ÇУЛСЕМ, ВЫРĂНСЕМ

**II уйрăм**

## 3 пайĕ. ЯЛ-ХУЛА ÇЫВĂХĔНЧИ ÇУЛ-ЙĔРСЕМ, ÇУЛ ÇИНЧИ ПАЛЛĂСЕМ, КАÇĂ-КĔПЕРСЕМ








**Çул** (тĕрĕк чĕлхинчи йол — йĕр сăмахран) çуран, лавпа, машинăпа, пуйăспа çӳремелли тăкăрлăк. Вăхăтне, çулне кура, вăл ăçтан иртсе пынине кура çулăн темĕнле палăрту ячĕ те пур.

Айлăмри çул (ç.) анлă ç., ансăр ç., апос, опос, упус çулĕ (ç-ĕ), асфальт сарнă ç., аякри ç., вак ç., вăрăм ç., вăрман ç-ĕ, инçе ç., йывăç лартнă ç., йывăç сарнă ç., картланнă ç., картлашкаллă ç., кĕске ç., каçăллă ç., каçăсăр ç., кĕперлĕ ç., кукăр ç., кукăрмакăр ç., кӳлĕ тăрăхĕнчи ç., лайăх ç., лачака тăрăхĕнчи ç., мăн(ă) ç., начар ç., паллакан ç., пасар ç-ĕ, сарлака ç., сукмаклă ç. (Сукмак çинчен уйрăм вулăр), сӳрĕк ç., çуллахи, çурхи, кĕрхи, хĕллехи ç., çуна ç., çывăхри ç., тайлăк ç., такăр ç., тăвăр ç., тумхахлă ç., тури ç., уйрăм ç., уйри ç., улăхри ç., урамри ç., урапа ç., усал ç., хаяр ç., хăйăр ç., хăйăр,

вак-тӗвек чул сарнӑ ç., хирти ç., хула ç., хура ç., хытӑ ç., хурӑнлӑ ç., чукун ç., чул сарнӑ ç., шоссе ç-ӗ, шыв çинчи (пӑр ларсан усӑлнӑ) ç., ютӑ ç., ялти çул.

Çул сукмакран пуçланать. Çулӑн вӗçӗ çук. Çул темӗнле вӑрӑм пулсан та çул çӳревçе шутланӑ çӗре е киле илсе çитерет.

Инкек аслӑ çулпа килет, вак çулпа вакланса тухса каять. Пӗлӳ сукмак çинчен аслӑ çула илсе тухать. Çул çинче çул çӳревçе ырӑпа-усал йӗрлесе пыраççӗ.

Çул çинчи ырӑ усалсен йышӗ: çул (ç.) амакӗ, ç. инкекӗ, ç. йӗрӗхӗ, çул-лав киремечӗ, ç.перекечӗ, ç. пуçӗ, çул çинчи (ç.ç.) пӳлӗхçи, ç.ç. чун илли, ç. çӗтерекен, ç.ç. телей, ç.ç. турӑ, ç.ç. турӑ амӑшӗ, ç.ç. чӳк турри, ç.ç. ырӑ, ç. сыхчи, ç.ç. усал, ç. хаярӗ, ç. ырри, ют çул усалӗ, ç.ç. явӑл. Çул çинче ултавçӑран, вӑрӑ-хурахран, ют çынран, тӑшманран, инкекрен хӑрамалла. Çул çине юлташпа тух. Çул çинче юлташ туп. Çул çинчи ырӑ калаçу çула кӗскетет, усал калаçу (харкашу) кӗске çула вӑрӑм тӑвать.




Çул тӑршшӗне шутлама çухрӑм юписем лартаççӗ, çул юппинче, çул пӑрӑнса уйрӑлнине кӑтартма паллӑ хӑмасем çапаççӗ. Чарӑнса канма кану лаптӑкне хатӗрлеççӗ, ларса кайма, анса юлма станцисем лартаççӗ. Авал вӗсене ям, ямсем тенӗ. Пысӑк станципе юнашар

выртса тăмалли, çĕр каçмалли вырăнсем, çуртсем лартаççĕ. Çуран, лашапа çÿрекен çул çÿревçĕ валли канмалли вырăнта тараса е çăл куçĕ пур. Ăнсăртран инкек пулсах тăракан вырăнта ырă-усалсем пурăнаççĕ тенĕ. Çак тĕле авал паллă юпа, чÿк юпи лартнă. Унта ÿсекен йывăça чÿк, киремет йывăçĕ тенĕ. Иртен-çÿрен мĕн те пулин пăрахса хăварнă. Халĕ çакăн пек вырăнсенче палăрту хăмисем çакăнса тăраççĕ. Тата çул çÿреме шанчăклă пултăр тесе çул тăршшĕпех уйрăм асăрхану хăмисем, паллисем çакса тухаççĕ. Хальхи çул çÿревçĕн çак паллăсене вулама, вуласа асăрханма пĕлмелле. Çул çÿреме, çитес çĕре çитме, утма, чупма пултарнисĕр пуçне тата çул çинчи пĕлÿ кирлĕ. Шыв, тинĕс, сывлăш çинче çÿренисен çулĕсем ку статьяна, çул ăнланăвне кĕмеççĕ. Çул çинчен ÿкерчĕксене пăхăр.



**Сукмак** (сĕк, тапта сăмахсенчен) пулса кайнă пулмалла. Çын, выльăх çÿрекен ансăр йĕр, утма çул. Уйри сукмак (с.) улăхри с., хирти с., вăрманти с., ту çинчи с. Сукмак çинчи каçă, сукмак çинчи паллă, сукмак çинчи шухăш. Ухмахăн пĕр сукмак, ăслă çыннăн çĕр сукмак. Сукмак çула кăларать. Сукмак чăтлăха кĕрсе çĕтет. Сукмак тупакан çул çÿреме пĕлет.

**Каçă** — шыв урлă, çырма урлă хывнă каçă, ансăр кĕпер. Йывăç хывнă каçă, йывăç сарнă каçă, карлăклă каçă, хăва, çатан касса тултарса хывнă каçă, чул хывнă каçă, шырланти ăшăх каçă, çара уран каçмалли каçă. Кимĕпе ишсе каçмалли каçă çинчен I пайри статьяна вулăр.









**Кĕпер** (ученăйсем тĕрĕк чĕлхине грек чĕлхинчен кĕнĕ сăмах тесе шутлаççĕ. Темшĕн кĕпе+йĕр **шыв çине хывнă кĕпе** тенине йышăнмаççĕ). Шыв урлă хывнă анлă каçă. Кĕперĕн ятне шыв, вырăн ятне пăхса калаççĕ. Тĕслĕхрен: Сĕве кĕперĕ (к.), Çавал к., Энĕш к., Хусан к., Хĕрлĕ çырма к., Хура çырма к., Çăва çине кĕмелли к. т.ыт.те. Юмахри кĕперсен ячĕсем: ылтăн к., кĕмĕл к., пăхăр к., йĕс к., тимĕр к., чукун к., чĕнтĕрлĕ к., асамат к-ĕ, Саламат к-ĕ, вилнĕ çын к-ĕ, леш тĕнчене каçмалли к. Мĕнле япаларан тунине кура каланă кĕперсем: йывăç к., чĕнтĕр (уйрăм вулăр) к., чул к., тимĕр к., чукун к., тимĕр-бетонран тунă к.









Йывăçран хывнă кĕпер карлăклă та, карлăксăр та пулма пултарать. Кĕпер хушши пĕр аслăкран е темиçе аслăкран тăрать. Аслăкĕ юпасем çине хывнă каштасем çинче витĕнсе выртать. Аслăкĕн сарлакăшне кура каштийĕсем пĕр хутлă е темиçе хутлă пураланă сийрен тăраççĕ. Чылай сарлака тĕлте картса, урлă-пирлĕ çыхăнтарса кашта вырăнне чĕнтĕрлĕ карта тытса хываççĕ. Йывăç кĕпер 10—15 çул ларать.

Чул кĕпере чулран, çурма ункă майлă, кăмака çăварне купаланă йĕркепе купаласа тăваççĕ. Чул кĕпер темиçе ĕмĕр ларать.

**Чĕнтĕр, чĕнтĕрлĕ кĕпер**. Халĕ чăвашсем чĕнрен çыхса çакса янă кĕперсем тумаççĕ. Сахал хушăран троссем çине пăралуксем çыхса, хăма хывса çакса янă каçăсем тĕл пулкалаççĕ. Вĕсене авал чĕнпе çыхса тунине тахçанах манса кайнă. Авал чăвашсем Кавказ тăвĕсем тĕлĕнче пурăннă. Çав вырăнти сăртпа ту хушшинче çакăнса тăракан кĕпере чĕнрен явнă, çыхнă вĕренсенчен туртса карса тăнă. Каçса çӳреме лаптăк йывăç сарнă. Çав вăхăтри кĕперсенчен пирĕн чĕлхене чĕнтĕр, чĕнтĕрленĕ кĕпер ячĕ кĕрсе юлнă. Халĕ эпир илемлĕ, тĕрĕллĕ, эрешленĕ кĕпер карлăкне, кĕперне чĕнтĕрлĕ кĕпер тесе калатпăр.

**Тимĕр кĕпер**. Аслă çул çинче, чукун çул çинче выртакан кĕперсене ку ĕмĕр пуçламăшĕнче тимĕртен тума пуçланă. Тимĕр кĕпере те теприсем чукунран тунă кĕпер тесе калаççĕ. Чукун кĕперсем час ванаççĕ, сивĕре çурăлаççĕ. Çавăнпа вĕсене тахçанах тума пăрахнă. Тимĕр кĕперсем шанчăклă. Вĕсене халĕ те чылай çĕрте хываççĕ.

**Тимĕр бетон кĕперĕ**. Ăна тимĕр бетонран тăваççĕ. Вĕсене ытларах хальхи вăхăтра тума пуçларĕç.

**Усă курнă литература:**


Академический сборник. Восточный этнографический сборник.

*Ашмарин Н.И.* Словарь чувашского языка в 17-ти т. Казань-Чебоксары, 1928—1954.

БЭС. Большой энциклопедический словарь. СПб.: «Норинт», 1997.

*Егоров В.Г.* Этимологический словарь чувашского языка, Чебоксары, 1964.

*Наумов Н.Е.* Чăвашсен пурăнмалли вырăнĕсем. Çамрăксен хаçачĕ, 1998, пуш, 6, 13, 20.

*Наумов Н.Е.* Хыпар, 1999, 80, 93, 99, 103, 109, 112, 114, 118, 121, 128, 130, 139, 140 №.

*Никольский Н.В.* Краткий курс этнографии чуваш. Т. 1, 2. Чебоксары, 1996.

*Руденко С.И.* Башкиры. Историко-этнографические очерки. М., 1925.

Русско-чувашский словарь. М.: Советская энциклопедия, 1971.

*Федотов М.Р.* Этимологический словарь чувашского языка в 2-х т. Чебоксары, 1996.

Чăвашла-вырăсла словарь. М.: «Русский язык», 1982.

III уйрăм

# КИЛ-ÇУРТ. УН ТАВРАШĔНЧИ ХЎТЛĔХ-ХУРАЛТĂСЕМ, ИСТОРИ ВЫРĂНĔСЕМ

## 1 пайĕ. НИКĔСЛЕНСЕ ТĂРАКАН ПĔЛЎ

Чăвашсем çемьепе, йышпа пурăнакан вырăна тата пурăнмалли хўтлĕхсене **кил-çурт** сăмахпа палăртса калаççĕ.

Авал асăннă сăмах икĕ ăнлава пĕлтернĕ. **Кил** сăмахпа пĕр çĕрте тĕпленсе ларакан çуртсене, кермЕнсене, хўшĕ-хўтлĕхсене тата вĕсем тавра çавăрнă хўмесене палăртнă. Сăмахран: Саркел (сарă кил) хазарсен тĕп хулин ячĕ пулнă.

Перс, тĕрĕк, араб чĕлхинчи чул, чул сăрчĕ, чул çурт, чулран купаланă крепоç, хула, ял курăмĕсене ăнлантаракан **кала** (хала, хула, кила, киле, кел, келе...) сăмахран чăваш чĕлхинче **кил, киле, кил-йыш, кил хуçалăхне** ăнлантаракан сăмахсем пулса кайнă.

**Çурт** сăмахпа авал вырăнтан вырăна, пĕр çĕр лаптăкĕнчен тепĕрне куçса çўремелли пысăк урапа çинчи юрта евĕр хўмене каланă. Ăсчахсем чăвашсен **çурт** сăмахĕ **çўрет, юрта**, **çĕр** сăмахсенчен пулса кайнă тесе шутлаççĕ. Çурт-йĕр сăмахри **йĕр** тĕрĕк чĕлхинчи **çĕр** сăмахпа пĕр килет тесе шутлаççĕ. Çурт-йĕр тени çĕр çинчен çĕр çине вырăнтан вырăна куçса çўрекен юрта тесе калани пулса тухать.







Халĕ çурт сăмахпа пурăнмалли вырăнти пўрте, кил хушшинчи ытти хушăсене палăртаççĕ. Куçса çўрекен çуртсем халĕ мĕнле аталанни, вĕсемпе вахтăра ĕçлекенсем, космонавтсем ăçта усă курнине ўкерчĕксенче пăхăр.

Аса илĕр: кил-çурт лартас ăсталăха авалхи несĕлĕмĕрсем темиçе çĕр пин çул маларах пуçласа янă. Тĕнчери чи малтанхи çынсем ту хăвăлĕнчи ханкăрсенче, ту, шыв çумне лартнă ўпле-хушăра пурăннă.












Кил-çурт, ял-хула лартас ăсталăх мĕнле аталанса пыни çинчен ансат ӳкерчĕксенче пăхăр.

Чăвашсен ватă аслашшĕсен несĕлĕсем икĕ пин çул каярах кăнтăр енче пурăннă. Пирĕн ученăйсем çырнă тăрăх, вĕсем (суварсем) Нухрат пăлхарĕсемпе пĕрле VII ĕмĕрте Çурçĕр Кавказран Вăтам Атăла куçса килнĕ. Унччен вĕсем Байкал тăрăхĕнчен тухса Енисей, Вăтам Ази,







Çурçĕр Инди, Каспи, Азербайджан урлă Çурçĕр Кавказа куçса çитнĕ. Ку ĕнтĕ пĕр икĕ-виçĕ пин çул каярах пулнă. Ун чухнехи халăхсем мĕнле пурăннине çав вăхăтри чулсем çинче упранса юлнă сăнарлă ўкерчĕксем урлă пĕлме пулать. Унтах куçса çўремелли пысăк кўмесен, юртăсен ўкерчĕкĕсем те пур. Вĕсене паллă ăсчахсем тĕпченĕ, ун пирки нумай ĕç çырнă. Тĕслĕхсем илсе кăтартар: умра Хăкас, Тури Енисей тăрăхĕнче, Типе Тесь юхан шыв çумĕнчи Пысăк Яр (Бояры) сăрчĕ çинчи чулçи ўкерчĕксенче ку эрăчченхи тимĕр ĕмĕр вăхăтĕнчи халăхсен пурнăçне кăтартса «çырса» хăварнă Чулçи (Петроглиф) ўкерчĕкĕсем.

Вĕсене Д.А.Авдусинăн «Археология СССР» (161 стр.) кĕнекинчен тата 1990 ç. «Атеистические чтения» журналтан илнĕ.








Урапа çинчи çăмăл хўтлĕхе «Сухая Саратовка» çырминче тупнă чўлмек çинче курма пулать.

Чăваш наци музейĕн директор çумĕ В.Г.Шляхинан 1975 ç. экспедици отчетĕнчен илнĕ. Сăнарласа Е.П.Наумова ўкернĕ.

Çавăн пек куçса çўрекенсен чул çине ўкерсе хăварнă урапisenчи çурчĕсене Д.Майдарпа Д.Пюрвеевăн «От кочевой до мобильной архитектуры», Д.Медоедовăн «Гравюры на скалах», Р.Малиновапа Я.Малинăн «Прыжок в прошлое» кĕнекисенчен илнĕ ўкерчĕксенче курма пулать.



Авалхи хунсен, тĕрĕксен юртисене китай ӳнерçисен сăнарлă ӳкерчĕксенче кăтарнă. Вĕсенче урапасен, кӳмесен, юртăсен ӳкерчĕкĕсем. Д.Майдарпа Д.Пюрвеевăн маларах асăннă кĕнекинчен (22 стр.) илнĕ.



Хазарсен, чăвашсен çурчĕсем мĕнлерех пулни пирки тамха, тĕрĕ паллисем урлă тунă ӳкерчĕксенчен пĕлме пулать. Вĕсен курăмне В.Каховскин «Происхождение чувашского народа» кĕнекинчи 302 страницăра хазарсен Саркел хулин чулĕ çинче ӳкернĕ тамхара, А.Трофимовăн «Орнаменты чувашской вышивки. Древний язык чуваш-

ского орнамента» кĕнекинчи тĕрĕ паллисенче кăтартнă. Сăнарласа Е.Н.Наумова-Гатаулина ӳкернĕ.

Чăваш тĕрринчи паллăсем.

Сăнарлă ӳкерчĕкĕсем.



Хазарсен тăмха паллисем.

Сăнарлă ӳкерчĕкĕсем.



Авалхи Атăлçи Пăлхар вăхăтĕнчи несĕлĕмĕрсене çут çанталăк йĕркипе пурăнма темиçе тĕрлĕ çурт-йĕр кирлĕ пулнă: çуллахи-хĕллехи çуртсем, вăхăтлăх ӳпле, выльăх картисем тата ытти те. Атăл тăрăхĕнче вĕсем X ĕмĕр тĕлĕнче мĕнле пурăнни пирки Ибн Фадлан («...путешествие на Волгу в 921—922 гг.») кун кĕнекинче çырса кăтартнă. Унта вăл юртăсем, хĕллехи çуртсем, хан керменĕсем, чӳк вырăнĕсем

пулни çинчен асăннă. Вăл вăхăтри çурт-йĕрсене, хӳме-крепоçсене археологсен ĕçĕсенче курма пулать («Советская археология», 1970 ç., 4№; История Чувашской АССР, I том; С.С.Айдаров, Н.Д.Аксенов. Великие Булгары. Хусан, 1983 ç.).

Пăлхар вăхăтĕнчи çурт, ял, крепоçсем.



**Пăлхар вăхăтĕнчи çурт, ял.**
**Толиккасси ялĕ. Археологсем (Смирнова А.П., Каховский В.Ф.) чавса тупнă палăртусем тăрăх Т.Светлова художница ӳкернĕ ӳкерчĕкрен илсе илемлетнĕ.**



**Хӳтлĕх карти, хӳми.**
**Кĕçĕн Явăш ялĕ. Ӳкерчĕкне «Ар ология» журналран илсе ӳкернĕ. №**
**1970 ç.**



**Тикеш крепоçĕ.**
**Тикеш ялĕ. Г.А.Федоров-Давыдов ӳкерчĕкĕ. «История Чувашской АССР». I-мĕш томĕнчен илнĕ, хушса сăнарланă.**



**Пăлхар хули.**
**Хӳтлĕх айкки тата сыхлав тă накки. «Великие болгары». Хусан 8 ç. кĕнекерен Д.И.Архангельский ӳке чĕкĕнчен илсе ӳкернĕ.**

Вырăс кнеçĕсем, çар пуçлăхĕсем чăвашсем пирки 1552—1555 çулсенче çырма пуçланă. Ун хыççăн чăвашсем çинчен уйрăм статьясем, тĕпчевçĕсемпе çул çӳревçĕсен калавĕсем вырăсла пичетленнĕ. Вăл вăхăтра чăваш çĕрĕ çинче Шупашкар, Çĕрпӳ, Етĕрне крепоçĕсене лартнă. (Шупашкар крепоçне ӳкерчĕкре пăхăр.)

1928 çулта чăваш ăсчахĕ Н.В.Никольскин чăваш пурнăçĕ çинчен çырнă «Краткий курс этнографии чуваш» кĕнеки пичетленсе тухнă.

1962 çулта чăваш архитекторĕ Г.Н.Павлов «Чувашская народная архитектура» темăпа ĕçлесе архитектура ăслăлăхĕн кандидачĕ пулса тăнă. Чăваш архитектурине тĕпчес енĕпе ку пĕрремĕш диссертаци. Кунта пурăнмалли çурт-йĕр аталанăвне тĕпченĕ. Пĕтĕмлетсе ăнлантарнине умри ўкерчĕкре пăхăр.



Паянхи ăсчахсем те чăвашсен çурт-йĕр тăвасси мĕнле аталанса пынине тĕпчеççĕ. Вĕсем хушшинче: В.П.Иванов, Г.Б.Матвеев, П.П.Фокин ăсчахсем тата проектсене тăвакан архитекторсем. (Чăвашсен çуртйĕр лартасси, кил-çурт çавăрасси ХХ ĕмĕр вĕçĕнче мĕнле аталанса пынине ўкерчĕксенче сăнланă. Ўкерчĕкĕсем П.Н.Наумовăн.)




Пĕтĕмлетсе çапла калама пулать: çурт-йĕр лартасси, кил-çурт çавăрасси кирек камшăн та пысăк ыйту.

Çурт-йĕр çине пăхса ку е вăл çемье мĕнле пурăнни пирки пĕлме пулать. Унăн архитектури мĕнлерех пулни те халăх аталанăвĕн шайне лайăх палăртать. Çурт-йĕр лартассипе çы-









хăннă ыйтусене тĕпчеме ачаранах тытăнмалла. Шкул программине те кĕртмелле. Яш-кĕрĕм çамрăклах укçа-тенкĕ ĕçлесе илмелли майсем шыратăр. Çак шухăшсене шута илсе вĕренекенсене пулăшас тесе çыратăп та ку кĕнекене.

# КИЛ-ÇУРТ. УН ТАВРАШĔНЧИ ХӲТЛĔХ-ХУРАЛТĂСЕМ, ИСТОРИ ВЫРĂНĔСЕМ

## 2 пайĕ. КИЛ-ÇУРТ ХУШШИНЧИ ХӲТЛĔХ-ХУРАЛТĂСЕМ, КУРĂМĔСЕМПЕ ЯЧĔСЕМ



**Ай. Айлăк. Айлăх.** Витнĕ айри вырăн. Аял. Айлă çи. Хăрах енлĕ хӳтлĕх. Тайлăк айлăк лартрăм. Тайлăк айлăхра лартăм. Çенĕх ай, капан ай, хампар ай, сакай (сак ай).

**Алкум. Алăк умĕ.** — Алăк умĕнчи хӳтлĕх. Алăк умĕнчи хӳме, алăк умĕнчи хушă. Алăк умĕнчи çурт. Пӳрт çумне, кĕрсе тухакан алăк çумне лартнă, хутса ăшăтса тăман ятарлă çурт. Пӳртпе алкума пĕр çипе витеççĕ. Пӳртпе алкум урайне пĕр шайра сараççĕ.

**Ампар**. Анпар. Хампар (перс. Анбар-склад. Япала упрама хывмалли вырăн. Тĕрĕк чĕлхинче те çавах) — тыр-пула, апат-çимĕç хатĕрлевне, тум-тире, кил-çурт хушшинчи ĕç япалисене упрамалли чӳречесĕр çурт. Чӳречи вырăнне хĕсĕк шăтăк картласа хăвараççĕ. Пĕр хутлă ампар. Икĕ хутлă ампар. Ампара кĕске никĕс юписем çине лартаççĕ. Ампар айĕ. Ампар айне сурăхсем кĕрсе тăнă. Ампар айĕнчен йытти вĕрет.

Ампар умĕ. Ампар умĕнчи çи виттин çунатти тăсăлса тăрать, çумăр ямасть. Çӳлти ампарта (иккĕмĕш хут) çулла çамрăксем çывăраççĕ. Çӳлти ампарта кĕрĕк-сăхман, тумтир çакăнса тăрать.



Çӳлти ампара улăхмалли пусма. Çӳлти ампар умĕ. Çӳлти ампар алăкĕ.

Арпалăх ампарĕ (а.), тыр-пул, тумтир, тӳшек-минтер, выртса тăмалли япаласене хывмалли а. Килти ĕçе,

пир-авăр ĕçне тумалли хатĕрсене, япаласене хумалли а. Тăвар хумалли а.

Кирпĕч а., улăм витнĕ а., хуп витнĕ а., хурăн хуппи витнĕ а., чĕренче витнĕ а. Хăма витнĕ а. Шуç тимĕр (тимĕр листа) витнĕ а.










**Арба** (араба — туркка, тĕрĕк чĕлхинче темиçе вăкăр кӳлекен кӳмене, тăвата юпа лартса карлăк çыхнă, çине чатăр кĕççе витнĕ урапана калаççĕ). Чăвашсем çыхнă пысăк карçинккана, арпалăха, лартнă урапана каланă.

**Арман** (II уйрăмри I пайри статьяна вулăр).

Лаша арманĕ. Кил хушшине, кил-çурт умне ытларах лаша арманĕ лартнă. Лаша арманĕпе кĕрпе авăртнă, кантăрпа йĕтĕн вăрринчен тата хĕвел çаврăнăш тĕшшинчен пуснă çу кăларнă.

Лаша арманĕнче лаша кӳлсе, çавăракан урапа сарайĕ (лупасĕ) тата арман кĕлечĕ пур. Тĕшшине авăрса (хĕссе çавăрса) нимĕрлекен арман (вальцовка), нимĕрне ăшăтса пĕçерекен хуран лартнă кăмака, вĕри нимĕртен пусарса пуснă çу кăларакан пусарчăкĕ пур. Вĕсем арман кĕлетĕнче е лаçĕнче лараççĕ. Çу пусаркăчĕн хĕскĕчĕ — вăрăм пуслăх. Ăна пăявпа пăрса пăркăчлаççĕ. Лаша арманĕ лаша вăйĕпе ĕçлет.

**Арпалăх** (арпа сăмахран) — арпа, хăлчăк, арпа-пучах аслăкĕ. Арпалăха тăвата кĕтессе

тăватă юпа лартса тăваççĕ. Йĕри-тавра е виçĕ енчен çатан карта тытаççĕ. Хапха туса çакаççĕ. Варрине вара юпа лартаççĕ. Ун çине тăватă кĕтесрен чалăштарса каштасем тăратаççĕ. Вĕсем çине урлă сайххасем хураççĕ, вĕсене çыхса çирĕплетеççĕ. Сайххасем çине каснă хăвана (çаппа) авса, çыхса хываççĕ, улăм витеççĕ. Арпалăха арпа тултараççĕ, айне çил вĕрме вĕрлĕксем, хăвасем (урлă-пирлĕ) хывса хăвараççĕ.

Арпалăха урапа-çуна, сухапуç-сӳресене те лартаççĕ.

Арпалăха арпа лаççи, арпа лупасси тесе те калаççĕ. Арпалăха пахча хыçне лартаççĕ. Колхоз пуçлансан (1930—1935 çç.) арпалăхсене тума пăрахнă.

**Аслăк** (аслăк çи) — юпа лартса, сайххасем сарнă çилĕк çине утă-улăм хумалли вырăн. Сарай айĕнчи аслăк — сарайăн иккĕмĕш хучĕ, утă-улăм улăхтарса упрамалли вырăн.




Аслăк тăватă,ултă, сакăр... юпа çинче ларать.

Витмен аслăк çинчи утă-улăма ура-капан евĕр шĕвĕртсе уртмах, ленкĕр ярса купаласа лартаççĕ.

Аслăк çинче утă-улăм типĕ тăрать.

Аслăк айĕнчи картара выльăх çӳрет. Аслăк çине хăпарма пусма лартнă. Выльăх картипе юнашар аслăк ларать.



**Вите** (витнĕ сăмахран) — выльăха хĕлле упраса усрамалли карта. Витене пура туса е тăватă кĕтесри енчекленĕ юпасем хушшине хӳме купаласа лартаççĕ. Çине аслăк сараççĕ. Тăррине сарай евĕрçи витеççĕ.

Витене йывăçран, чулран, кирпĕчрен купалаççĕ. Çине улăм, хăма, шуç (калай) витеççĕ.

Сурăх, ĕне, пăру, лаша, сысна, кайăк-кĕшĕк витисем пулаççĕ.

Колхоз вити аслăкĕ çине урапапа улăхаççĕ. Финн хресченĕсем витене чулран купаласа тимĕр-бетон аслăк сарса лартаççĕ, утă-улăмне трактор урапипе улăхса пушатса анаççĕ.








**Гараж** — машина лартмалли вырăн, автомашина, трактор тăмалли сарай.

**Калинкке** (вырăсла калитка). — Пĕчĕк хапха. Алкумĕнчи, кил картинчен пахчана тухмалли калинкке.

Калинкке юпи эрешлĕ, ун тăрри тĕрĕллĕ.

**Карта** (II уйрăмри I пайри «Карта, выльăх карти» статьясене вулăр). Вырăна уйăрса, карса хӳтĕленсе тăракан хушă.

**Кил карти** — килçурт лаптăкĕн карти.

Кил картине йĕритавра лартнă çурт-йĕрсем карталаса тăраççĕ.

Кӳршĕсен кил картийĕн пĕр енĕн хушшине хӳме купаланă, тепĕр сыпăкне хăма çапса тăратнă, виççĕмĕш енне ыраланă сайхах карса тытнă.

Мал енчи кӳршисем, çурчĕсене те, кил картине те чулран-кирпĕчрен купаласа лартнă.

**Килти выльăх карти** — выльăха хĕл каçарма кирлĕ карта. Выльăх карти çумĕнче сарай-лупас ларать. Авал выльăх картине çатан çыхса е шăтăрнак, чикме тăратса тытнă.

Выльăх картине йывăçран (пĕренерен) пуралана. Юлашки

çулсенче ăна чулран та купаласа тăваççĕ.

**Кер, кĕр** (тĕрĕк чĕлхинче гэр) — юрта. Юрта евĕр пурăнмалли çурт. Чăваш чĕлхинче хăй паллипе сыхланса юлман, кĕреке сăмах çине куçнă.




**Кĕреке** — кĕр йĕкинчен, улча юпинчен, маччаран иртнĕ вырăн. Тĕпел. Сĕтел ларакан вырăн, сĕтел çинчи апат-çимĕç. Хальхи виçепе маччаран иртсе ларнă вырăн. «Кĕрекене кĕрсе лар, тĕпеле иртсе лар», — теççĕ чăвашсем.

**Кермен** (иран, тĕрĕк чĕлхинче — керман, карман, кирмен). Аккерман — белый дворец — пысăк çурт. Халăх пуçтарăнакан илемлĕ çурт.



**Керменчук** (г. Кременчуг) — авалхи чӳк, чӳк кĕллине ирттермелли аслă, пысăк çуртăн ячĕ, вырăнĕ. Чăваш чĕлхинче халĕ кермен сăмах пуян, пысăк çурта, клуб, театр, спорт залĕ тата çавăн пек пысăк çуртсен ячĕсене ăнлантарать.

**Кĕлет** (вырăсла клеть) — çуллахи çурт, япаласене хумалли çурт. Тыр-пула пуçтарса хумалли çурт. Ампартан пĕчĕк (2х3 — 3х4 тăваткăл метр) çурт. Кĕлете тăвата,ултă юпа çине лартаççĕ.




Тырă, çăнăх, сӳс, мунчала, тумтир хумалли, кĕлĕ кĕлечĕсем. Кĕлет умĕ, кĕлет айĕ. Çамрăк мăшăрсене туйра кĕлете хупаççĕ. Кĕлет

ырри. Кĕлет турри. Кĕлет киремечĕ. Кĕлет йĕрĕхĕ. Кĕлетре йĕрĕх пĕрни çакăнса тăрать.

**Кил** (килĕ). (Иран, тĕрĕк, араб. Кала... — крепоç, замок, ял, хула) — пурăнмалли çурт, пурăнакан вырăн. Хуçалăхри çурт-йĕрсем. Кил-йыш — çемье йышĕ, çемье. Пысăк кил (к.), пĕчĕк к., пуян к., чухăн к. Кил-пӳрт. Кил-çурт. Ял хĕрринче пĕчĕк кил, урамалла пĕр кантăк. Кил картийĕ хапхасăр. Кӳршĕсен килĕ кермен пек, урамалла çич(ĕ) кантăк. Йĕри-тавра çăт хӳме, кĕрсе тухма шăтăк çук. Кил-картийĕ пит(ĕ) анлă, ут çӳрекен улăх пек. Тăвансем шут йышлă, çын хушшинче пит(ĕ) числă. Кил пуç(ĕ). Кил хуçи. Кил сыхчи.

Кил (К.) Турри. К. хĕрт-сурчĕ, к. тухмарĕ. Килти (к.) вучах, к. куйкăрăш, к. йĕрĕх, к. турăсем.

Кил çĕленĕ кил таврашне сыхлать. Кил йытти — кил-çурта сыхлать. Кил куйкăрăшĕ (вутлă кайăк, вутлă çулăм) кил вучаххине сыхлать, кил ăш-чикне ăшăтать.

Кил туррисене юсманпа, пăтăпа, çăмахпа, сăрапа асăнаççĕ. Вилнĕ ватăсене çăмарта хăпартни пĕçерсе асăнаççĕ.

Кил-йыш ăшши ютта кайсан та ăшăтать.

**Кипет**. Кипĕт. Кипеч. (Вырăсла кибитка — крытый экипаж.) У кочевых народов переносное жилье, войлочная кибитка. Кибет —



крытая телега, лавка. Арабск. Koubett — палатка) – çул çинчи, урапа çинчи хӳтлӗх, пурӑнмалли вырӑн (çурт). Кӗççе кипечӗ. Кӗççе витнӗ кипет. Кипетсӗр: — çул çине ·хӳтӗсӗр витмен лавсӑр тухнӑ лавӑçа каланӑ. Чухӑн çын. Çуртсӑр çын. Йӗркесӗр çын тенине пӗлтернӗ. Усалсене намӑссӑр, кипетсӗр тесе вӑрçаççӗ.

Кипеч — кипитка, хӳме ӑсталама пӗлекен çын. Кипеч ялӗ, Кипечкасси — кипет ӑсталакан, кипеч пурӑнакан ял.

XX ӗмӗр пуçламӑшӗнче çул çӳремелли кипет урапи-çунисем (кибитка) йӑларан тухса манӑçа юлнӑ.

Кипет ырри. Кипет киремечӗ. Кипет кӗлли — авалхи тӗнрен юлнӑ ырӑсем, ӑнланусем.

**Конура** (вырӑс сӑмахӗ) йытӑ выртакан хӳтлӗх.

**Котельнӑй** (вырӑс сӑмахӗ). Пӳрт-çурта ӑшӑтакан шыв хуранӗ вырнаçтарнӑ кӑмакаллӑ çурт, пӳлӗм.

**Крепоç**. Халӑха, çар çыннисене хӳтӗлемелли хӳме. Крепоç.











**Крыльца** (вырăсла крыльцо). Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмах. Пӳрт умĕ. Çенĕх умĕ. Чĕнтĕрленĕ, чӳречеллĕ, урам енне тухса тăракан крыльца.

**Кунтă**. Кунтăк урапи (перс. кунд. Кунда — могила, холм, колода, куча, груда) — хупран авса тунă тĕплĕ кăшкар, кăшкарлă урапа. Тыр акмалли, вĕлле хурчĕсем сăхасран пуç çине, пит çине тăхăнмалли кăшкар, кунтă. Пĕчĕк ача урапи çине витсе лартнă кунтă. Пĕчĕк ачана туртса çӳремелли кунтăллă урапа. Кӳме.







**Кӳме.** (Кӳме сăмах хум, хӳме, кум, кумтарать сăмахсене çывăх. Вĕсем карталанса, çĕкленсе, хупăнса тăракан вырăна ăнлантараççĕ) — лав, витнĕ урапа. Çул çӳревçĕн урапи. Пĕчĕк ачана туртса çӳремелли урапа. Ӳпле. Хӳме. Лаç. Кӳмене çатанран, хупран, кĕççерен тăваççĕ. Туй кӳми (к.), лав к. Ахмат кӳмине ултă лаша туртаймасть. Тупмалли юмахри кăмака. Авал куçса çӳрекенсем çăкăр, апат пĕçермелли кăмакана витнĕ урапа çине лартса турттарса çӳренĕ.

Тĕрĕксем темиçе кӳме (кибитка) ларакан вырăна аул (ял) тенĕ.










Кибитка — крытая повозка. Переносное жилье кочевников, из жердяного остова с покрышкою из войлоков (кошем), бересты или шкур. Сибирская юрта, вежа и чум...

Несколько кибиток образуют аул, кочевое селение (В.И.Даль. 2 том 106 стр.).




**Кудо**. Çармăс, мăкша чĕлхинче лаç, пĕчĕк кĕлет. Ӳпле. Вырăн-вырăнта чăвашсем те хуто, хута тесе калаççĕ.

**Лаç. Лаçă** (тĕрĕк чĕлхинчи алачык, алачук... вырăс чĕлхинче — лачуга сăмаха куçнă). Çуллахи çурт. Çуллахи вучах çурчĕ. Вăхăтлăх хушă.

Çулла лаçра апат пĕçереççĕ, апатланаççĕ. Лаçра какай-шăрттана пĕçерсе тĕтĕмлеççĕ.

Сăра лаççинче нӳхреп пур. Лаçра им-юм курăксем çакăнса тăраççĕ. Лаçри вучаха çырмари чулран купаланă. Вучах умне урай сарман. Лаçри хуран çакки сăнчăрлă çӳлти кашта çинче çакăнса тăрать.

Авалхи хуран çаккине чăрăш кутанĕнчен тунă. Вăл çӳлти икĕ



кашта çинче урлă патакĕпе çакăнса тăнă. Унталла-кунталла куçма пултарнă.

Арман лаççи (л.). Кĕлĕ л., киремет л., сăра л., çăнăх л., тимĕрçĕ л., чӳк л., çуллахи л.



**Лупас**. Лапас (лап., лапă сăмахран) — çӳллĕ мар аслăк, çине пĕр еннелле тайлăк туса витнĕ сарай. Лупас юпа çинче ларать.

Лупас айне карта тытнă.

Анкарти лупасси (л.), арпа л., вут-шанкă л., вылăх л., сăра л., урапа-çуна л., сунарçă л.

Вăрманти лупас (л.), улăхри л. Йывăç çине улăхтарса лартнă л.

**Мунча** (тĕрĕк чĕлхинче — монча, мунчо, молча, мулча, мылча, мойлча, муйлица, мунса, монша) — уйрăм ларакан ятарлă çурт.





Мунчана уничене, пахчана, пахча хыçне, çырма хĕрне, шыв çумне лартаççĕ.

Мунчана кăмакине хутса ăшăтаççĕ. Мунча кĕме шыв ăшăтса (вĕретсе) хатĕрлеççĕ. Мунчара сентре, лапка çине ларса ăшăнса тарлаççĕ. Милĕке вĕри шывпа пĕçерсе çемçетсе темиçе хут çапăнаççĕ. Тула, мунча умне, алкумне тухса канаççĕ.

Мунчара ӳт-пуçа çуса, шыва кĕрсе (пӳ тăрăх шыв ярса) тасалаççĕ.

Килти мунча (м.), кӳршĕ м., улах м., ял м., хула м.

Хура м., шурă м., çĕр м.

Чулран купаласа тунă м., йывăçран (пуралана) м.

Тăмран-тислĕкрен çăрса тунă м. Çатан карта тытса, тăм çапса тунă м.

Тăмпа улăма çăрса, калăпласа типĕтнĕ купташкасенчен купаланă м., саман м., хăма çапса тунă м., чикме (йывăç-сăйхах) тăратса тунă мунча.

Шăмат кун хутнă м. Авлансан, туй хыççăн çамрăксене хутса панă м., хăна (валли хутнă) м., çĕнĕ кĕрӳ м., кĕçĕн çын м., йывăр çынна ача çуратма хутнă м., тăлла пусма хутнă м., çăва çинчен çын пытарса килекенсене çăвăнма хутнă м.

Мунчара: мунча ырри, мунча ийи, мунча турри пурăнать, ют çынсен мунчинче мунча усалĕ, шуйттанĕ, усал-тĕселĕ, ийе-шакки пурăнать тесе калаççĕ. Мунчана хутса яриччен мунча кĕллине, такмакне калаççĕ:

Тĕслĕхрен:

Мунча ийи, кăмака ырри,
Вутти (турпасси) хĕрӳ çунтăр,
Сĕрĕм тухса ан тăтăр,
Вут-кăвар siксе ан тухтăр.
Ăшши-пăшши тутлă пултăр:
Аллă арçын кĕмелĕх,
Хĕрĕх хĕрарăм савăнмалăх,
Ватти-вĕтти çăвăнмалăх.
Ялта ясар пĕтмесĕр
Мунча ăшши ан пĕттĕр.
Мунча кĕнĕ вăхăтра
Чир-чĕр килсе ан кĕтĕр.

Ун хыççăн: тьфу, тьфу тесе сураççĕ, урайне вут пуççипе шак-шак туса шаккаççĕ, урайĕнчи çӳп-çаппине шăлса çунтарса яраççĕ, сăмах-такмакне çапла вĕçлеççĕ:

— Усал-тĕселĕ, чирĕ-чĕрĕ килсе ан кĕтĕр, йӳççи кайтăр, тутли юлтăр, кĕрсе тухма лăп пултăр.

Мунча кӗнӗ, ҫапӑннӑ, ҫӑвӑннӑ, шыва кӗнӗ вӑхӑтра ытти такмаксене те каланӑ. Вӗсене Г.Юмарт тӗпчевҫӗ нумай пухса хатӗрленӗ, уйрӑммӑн пичетлемелле (Г.Юмарт. «Хыпар». 23.09.1997 ҫ. «Мунча такмакӗсем»).

Тӗнчере мунча кӗресси темиҫе пин ҫул авалтан пырать. Малтан ҫынсем вӗри шыв тухса тӑракан вырӑнсенче ҫӑвӑннӑ. Кайран ятарлӑ мунчасем лартма пуҫланӑ. Китай, Инди, Египет ҫӗр-шывӗсенче мунчасене 3—4 пин ҫул каяллах лартнӑ. Грексем вӗсене кура пысӑк мунчасем — термӑсем — ларта пуҫланӑ. Унта 2—3 пин ҫын таран кӗме пултарнӑ. Ҫеҫен хирсенче кусса ҫӳрекен халӑхсен мунча пуррине Геродот пирӗн эрӑччен, IV ӗмӗртех ҫырса хӑварнӑ.

Анчах пур халӑхӑн та мунча пулман. Хӑш-пӗр ҫӗрте кӑмака хутса, кӑмака ҫӑварне (хӑма хывса) кӗрсе ӑшӑнса, кӑмака умӗнче ҫӑвӑнни те паллӑ. Тӗрлӗ халӑхӑн мунчи тӗрлӗ ятлӑ. Яппунсен мунчи — фуро (килти), халӑхпа кӗмелли сэнто ятлӑ. Вӗсем катка ӑшне (шывӗ 50—60 градус ӑшӑ) кӗрсе ларса ӑшӑнаҫҫӗ, йывӑҫ кӗрпи ӑшне выртса витӗнсе тарлаҫҫӗ, кайран ҫӑвӑнаҫҫӗ.




Китайсен мунчи — юхи, юхой, ча от анг, турккӑсен — хамам чарта, перссен — гэр табе, грузинсен — арабано, арабсен — хаммам, грексен — терма, вырӑссен — баня, финсен — сауна, славянсен — лазня, венгрсен — фюрдо ятлӑ.

Чӑвашсен мунча (мун+ча, мӑн+ча) сӑмахӗ, тӗрӗксен: мин — пин, нумай, пысӑк, мӑнӑ, перссен: ча — пуса (колодец), тарӑн шыв ямӗ, лакӑмӗ сӑмахӗсенчен пулса кайнӑ.

Мунча тесе пысӑк шыв чанне (шанне), пысӑк пуса каткине каланӑ. Каярахпа вут хутса ӑшӑтнӑ, ҫӑвӑнса шыва кӗмелли лаҫне, ҫуртне мунча тесе каланӑ.

**Нушник** (вырăсла нужник, туалет) — тула тухмалли вырăн, тула тухмалли пӳлĕм. Чăваш чĕлхине XX ĕмĕр пуçламăшĕнче кĕнĕ.




**Нӳхреп** (арабла — михраб — ниша в мечети) — çĕр ăшне чаваласа стенисене чул хывса, çине витсе лартнă тарăн шăтăк. Ям, ямă. Путвал. Нӳхрепре сивĕ тăрать. Нӳхрепе пахча çимĕç хываççĕ. Тăварланă апатçимĕçе лартаççĕ. Нӳхрепре сĕт-çу, улма-çырла упраççĕ.

Нӳхреп анĕ — нӳхрепе анмалли вырăн, хупкăçĕ.

Нӳхреп пусми — нӳхрепе анмалли пусма.

Нӳхреп çи — нӳхреп çинчи лаç, лупас, сарай.





Нӳхреп кĕлечĕ. — Нӳхреп çинчи кĕлет. Нӳхрепре: нӳхреп ийи, нӳхреп амăшĕ, нӳхреп ырри пурăнать теççĕ. Нӳхреп кĕллинче вĕсене пăтă парса чӳклеççĕ.

**Павар** — павар лаççи (вырăсла поварня) — сăра лаççи. Сăра



юхтарса вĕретмелли лаç.

**Пăлтăр** — (пăл — тĕтĕм, тăр — тăрринчи, çӳлти тăрă). Тĕтĕме кăларакан хăвăл —тăрă. Çӳлте ларакан мăрье.




Хура пӳртри тĕнĕ шăтăкĕнчен тухакан тĕтĕме çӳле хăпартса кăларакан мăрье, труба. Украинецсен хаттинчи коморăна çав тĕллевпех лартнă.

Хура пӳрт алăкĕ умĕнчи тĕтĕм тухса тăракан хушă, хӳтлĕх.

Булдыр — вырăс чĕлхинче: пĕччен ларакан чухăн çурт. Вырăс чĕлхине чăваш чĕлхинчен кĕнĕ.



**Пахча** — çурт-йĕр çумĕнчи тытнă карта-хӳме, çĕр лаптăкĕ, ӳсен-тăранĕ, пахчи çимĕçĕ, улми-çырли ытти йывăççем.

Азербайджан чĕлхинче: багча, узбек — бохча, турок — бахче, пушкăрт — баксе, тутар — бакча — садик. Баг — сад.



**Пура**. Пыра — касса пӳлсе купаланă çурт пӳлми — кăшкарĕ. Пураран пӳрт лартаççĕ, çурт тăваççĕ.

Пӳрт-çурт пури (п.), мунча п., ампар п., кĕлет п., вите п., нӳхреп п.






**Путвал** (вырăсла подвал) — нӳхреп. Айккинчен кĕмелли нӳхреп. Путвал умĕ — алăкĕ умĕнчи аслăк. Путвал картлашки — путвала анса кĕмелли пусма картлашки.

**Путка** (вырăсла будка). Вăхăтлăха лартнă пĕчĕк (хăма) пӳрт. Чукун çул çинчи путка (п.). Хурал тăмалли п.

**Пусă** (вырăн-вырăнта калакан сăмах) — килкартишĕнчи тараса. Пусă шывĕ. Пусăри шыв. (II уйрăмра тараса çинчен вулăр.)

**Пӳкле**. Пӳкле вĕçĕ — çенĕх. Çенĕх умĕ. Алкум. Алкум умĕ. Алкумне кĕмелли карлăкпа пусма картлашки.

**Пӳрт** (марилле порт) — çурт, пурăнмалли çурт. Çĕр пӳрт (п.), хура п., шурă п., çĕнĕ п., чул п., йывăç п., тир ирçи п., çуна тăва-










кан п., хурал п., кăçат йăвалакан п., карçинкка çыхакан п., каткапичке çапакан п., улах ларакан п.

Пӳртри — тĕнри пӳрте сыхлакан ырă, хĕртсурт.

**Пӳрт ум** — çенĕх, алкум.

**Сакай** — путвал. Пӳртри урай айĕнчи лакăм, шăтăк. Хăш-пĕр сакайне урамран та, пӳртрен те кĕме пулать.

**Сарай** — (персла, тĕрĕкле — сарай, гостиница, дом, дворец, крытый рынок) хуçалăхра усă куракан тăрне витнĕ пысăк хушă, аслă çурт.

Аслăклă сарай — икĕ хутлă сарай. Утă-улăм упрама иккĕмĕш хута аслăк сарнă сарай. Аслăксăр сарай. Çӳлти хутсăр сарай, пĕр хутлă сарай.

Улăм витнĕ сарай (с.), хуп витнĕ с. Хăма витнĕ с. Шуç витнĕ с.








Юпа çинчи (ç.с.), пура ç.с., чул (кирпĕч) кăшкарĕ ç.с.

Вутă сарайĕ (с.). Утă-улăм с. Выльăх с. Лаша тăракан с. Ямшăк с.

Сарай тăмани сарай чăххине сыхлать.

Сарайĕнче сарай ийи, сарай ырри пурăнать теççĕ. Чӳк тусан вĕсене иккĕмĕш хута пăтă ывăтса параççĕ.



**Çĕнĕк**. Çенĕх (вырăсла сени) — алкум, пăлтăр, пӳртум.

Çенĕхе пураласа тăваççĕ, тăррине пӳрт тăрри шайĕпе витеççĕ, урайне пӳрт урайĕ шайĕпе сараççĕ.

Çенĕхе хăма çапса икĕ чăлан лартнă. Пĕринче — çулла выртса çывăрмалли вырăнсем, тепринче — апат-çимĕç, савăт-сапа ларать. Çенĕкрен урама тухма крыльца лартнă.

**Çурт, çорт** (В.Г.Егоров. Этимологический словарь чувашского языка. Çӳрекен юрта сăмахсенчен. Узбекла чурт — жилище) — Пурăнмалли вырăн. Пӳрт. Йывăç çурт (ç.), чул ç., пĕр хутлă ç., икĕ хутлă ç.

Авалхи чăваш тĕнĕнчи турăсем, пирĕштисем: çуртри, çурт сыхчи, çурт çуратакан турă, çурт кĕтен турă, çурт çуратакан ама, çуртри аслă киремет, çурт пуçĕ, çуртри хĕрт-сурт. Авал вĕсене ваттисене асăннă вăхăтра пăтăпа чӳкленĕ. Халĕ вилнĕ ваттисене çуртри турăш кĕтессинчи турăш умĕнче çурта çутса асăнаççĕ.

**Утар лаçĕ** (вырăсла омшанник). Утарти е пахчари вĕллесене хĕлле кĕрсе лартмалли лаç.



Утар лаçне е пĕтĕмпех çĕр ăшне чакаласа лартаççĕ е пурине кăна çĕр ăшне лартаççĕ. Утар лаçĕ тăррине сывлăша туртса тăракан пăлтăр е мăрье лартаççĕ. Утар лаçĕнче 1-2 градус таран ăшă пулмалла. Халĕ вĕллесем валли уйрăм çуртсем лартаççĕ. Пĕр вĕллене çур кубла метр вырăн кирлĕ. Пысăк утар хуçалăхне

тытакансем ăшăпа сивве йĕркелеме вĕллесене лартнă çурта автоматика хатĕрĕсене вырнаçтараççĕ.







**Ӳпле** — витнĕ çи, хупăлча. Хушă, хӳшĕ, хӳтлĕх. Утă витнĕ ӳпле (в.ӳ.), кĕççе в.ӳ. Кĕлте в.ӳ. Улăм в.ӳ. Хуп в.ӳ. Брезент в.ӳ. Арпа ӳпли (ӳ.), хурал ӳ., кĕтӳç ӳ., çĕр ӳ., вăрманти ӳ., улăхри ӳ., йĕтем çинчи ӳ., алăклă, чӳречеллĕ ӳ., алăксăр ӳ. Ӳплене кĕнĕ çĕре чаршав (кĕççе, брезент) çакнă. Ӳпле алăкĕ вырăнне хуп тăратнă.

**Хапха** (тĕрĕкле капка) — хупăлча, пысăк алăк. Кĕрсе тухмалли вырăнти хупкăч. (II уйрăмри «Ял хапхи» статьяна вулăр).

Чăвашла хапха (х.), вырăсла х., тăрăллă х., тăрăсăр х., хăма хупкăчлă х., вĕрлĕх хупкăчлă х., çуркам каска хупкăчлă х., аслă х., кĕçĕн х., малти х., кайри х., тимĕр х., йывăç х., хапха юпи, хапха йĕки, хапха кашти, хапха тупси, хапха тыткăçĕ, хапха хăлăпĕ, хапха сăлăпĕ, хапха айĕ, хапха юпи çинчи ункă, касса тĕрленĕ х., эрешленĕ х., ӳнерленĕ х., çĕнĕ х., кивĕ х.

**Хуралтă** — хурал тăмалли çурт. (II уйрăмри «Хурал», «Хурал пӳрчĕ» статьясене вулăр). Хуçалăхри кил хушшинчи хӳтĕленсе, хӳмеленсе ларакан çурт-йĕрсем.

Авал хуралтă кил хапхи çумĕнче, ял хапхи çумĕнче, улăхри, йăлăмри выльăх карти (кăшкарĕ) çумĕнче ларнă. Пушар хуралтинче, пушар сарайĕ çумне çи витнĕ хуралтă (вышкă, каланча) лартнă.

**Хушă** — ӳпле, икĕ енчен витнĕ ӳпле. Сайхах каштисене тăратса тунă, ал айĕнчи витлĕхпе (мăк, утă, хуп) витнĕ вăхăтлăх ӳпле.

«Хушă» сăмахран вырăссен хижина сăмах пулса кайнă.

**Хӳме** (кӳме) — карта, стена, çĕр чакаласа хăпарнă ура, вал, çурт, крепоç.







Çĕр хӳме (х.), чул х., йывăçран купаласа, тăпра тултарса тунă х., чикме хӳми х., хăма х., карта х., тыр х.

**Хӳтлĕх** — ӳпле, хушă, лаç. Сунарçă хӳтлĕхĕ (х.), хуралçă х., вăхăтлăх хӳтлĕх.

**Чатăр** (перс. чатр) — ӳпле. Палатка, хӳтлĕх, шатер. Чатăр, пиравăр карнă ӳпле. Çамрăксем çулла чатăр айĕнче çывăрма юратаççĕ.






**Чум** (коми чĕлхинче чом — шалаш, конура. Удмуртла чум — клеть для одежды, жилище) ӳпле. Авалхи куçса çӳрекенсен пурăнмалли кĕççе витнĕ çурчĕ. Манăçа тухнă сăмах. Чум касси (Шупашкар районĕ).







**Чуман** — кӳме, кӳмме. Ҫатана авса ҫыхнӑ ҫуна ҫинчи кӳме. Авал куҫса ҫӳренӗ ҫынсен пурӑнмалли вырӑнӗ. Манӑҫа тухнӑ сӑмах.

**Чӳк карти** — кил хушшинчи, пахчари, килти чӳке ирттермелли вырӑн. Халӗ манӑҫа тухнӑ вырӑн. (II уйрӑмри «Чӳк вырӑнӗ» статьяна вулӑр.)




**Шыльӑк, шылик** (ҫилӗк, витнӗ вырӑн) — кил картине туй ирттерме лартнӑ хӳтлӗх. Шыльӑкӑн виҫӗ енне каска пуканӗсем ҫине хӑмасене хурса саксем сараҫҫӗ. Варрине сӗтелсем лартаҫҫӗ.

Тӑватӑ кӗтессе юпасем лартса, вӗрен-кантрасем туртса кӗҫҫе е чатӑр витеҫҫӗ. Тата тӑватӑ кӗтессине хурӑнсем касса тирсе лартаҫҫӗ, шыльӑка илемлетеҫҫӗ. Кӑнтӑр енче пурӑнакансем (Саратов, Дон, Украинӑн чылай вырӑнӗсенче) халӗ те туй тума вӑхӑтлӑх чатӑр караҫҫӗ.

Шыльӑк (ш.) карти, ш. лаҫӗ, ш. хуранӗ, ш. сакки, ш. сӗтелӗ, ш. хурӑнӗ.

**Юпа** — палӑрту, тыткӑҫу тӑркӑҫӗ. Чӳк юпи (ю.), лаша ю., мишавай ю., ҫухрӑм ю., карлӑк ю., выльӑха ҫыхса тӑратмалли юпа







(ю.), çул юппинчи ю., виле тăпри çинчи ю.

**Юрт.** Юрта (тĕрĕкле юрт, тутарла йорт, узбекла чурт). Куçса çӳрекен халăхсен çурчĕ, пурăнмалли вырăнĕ. Чăваш чĕлхинче çурт сăмаха куçнă.

**Ыра** — пура. Пурана ыраласа тăваççĕ. Хăш-пĕр çĕрте пурана ырă тесе калаççĕ.




**Ям** — нӳхреп, путвал, сакай. Кил çумне чавнă ям. Çĕр улмине хĕл каçма хумалли ям. Силос ямĕ. Авал ямшăксем çӳрекен çулсем






çинче, ялсем ларман вырӑнта, лашисене кӳлсе улӑштарнӑ вӑхӑтра ямшӑксене кӗрсе тухмалли çӗр ӑшне чакаласа витсе лартнӑ ӳпле пулнӑ. Ӑна ям тенӗ. Ям сӑмахранах ямшӑк, ямшӑк станцийӗ сӑмахсем пулса кайнӑ. II уйрӑмри «Ям» статьяна вулӑр.




**Яран**. Яранга — чум, юрта, çурт. Çармӑссемпе тӑванла халӑхсен чӗлхинче пурӑнакан вырӑна, çурта пӗлтерет. Çурçӗр енче пурӑнакансен чум евӗр чӑнкӑ юртӑ ячӗ. Чӑваш чӗлхинче хӑй пӗлтерӗшӗпе манӑçа тухнӑ сӑмах. Яранкасси ялӗ, Шупашкар районӗ, Яранск хули, Киров облаçӗ ятсенче юлнӑ.

## 3 пайĕ. ПӐРТ ĂШ-ЧИКĔ. ПӐРТ ĂШ-ЧИКĔНЧИ ПАЛЛĂ ВЫРĂНСЕМ, ПАЙĔСЕМ, ПӐРТРИ ЯПАЛАСЕМ

Пӑрт-çурт лартас майсем çĕнелсе, улшăнса тăраççĕ, унти япаласем те çĕнелсе пыраççĕ. Авалхи нумай япаласен, хатĕрсен палăрту ячĕсем манăçа тухаççĕ. Çавна шута илсе иртнĕ вăхăтри çурт-йĕр ăш-чикĕнчи курăмсене, ун чухне кирлĕ пулнă хатĕрсене çырса хăварар. Ӳкерчĕксемпе сăнарланă сăмахсен пĕлтерĕшĕсене пуçтарса ас туса юлар.




Çурт-йĕр пайĕн ячĕсене В.Чернов ӳкернĕ («Хатĕр пул», 1988 ç.) ансат курăмран пĕлме пулать.






Хресчен çуртĕнчи япаласене, вырăнсене М.Спиридонов 1930—1940 çулсенче ÿкернĕ ĕçĕсенче курма пулать.

Паянхи пÿрт-çурт ăшчикне питĕ нумай япала илсе лартаççĕ. Вĕсем çинчен çырмастпăр.

Палăртнă тĕллев патне куçатпăр. Сăмахсен ăнлавĕ-курăмĕ пирки калаçăпăр.

**Пÿрт**. Пÿрт çинчен маларахри статьяна вуларăр. Халĕ кĕскен унăн тытăмне пăхса тухар. Пÿрт вăл пурăнмалли хÿтлĕх. Унăн тăрри, çиййĕ, урайĕ, сакайĕ (кашти), енĕ (стени), алăкĕ, чÿречи пур. Пÿртре кăмака ларать, пÿрте ăшăтать. Пÿртре сĕтел-пукансем, выртса-тăмалли вырăнсем пур. Куллен-кун усă курмалли савăт-сапасем ларaççĕ. Çавсем çинчен йĕркипе уйрăм çырса кăтартăпăр.

**Алăк** — пÿрте-çурта кĕрсе тухмалли хупăлча. Алăк питне тачка хăмаран сарса тăваççĕ. Алăк çине хăлăп çапаççĕ, кĕле çакаççĕ.



Пÿрт алăкĕ (а.), çурт а., кĕлет а., ампар а., мунча а., сакай

а., нӳхреп а. Чӗнтӗрленӗ алӑк (а.), сӑрланӑ а., кӗҫҫе сӑрнӑ а., чӑпта сӑрнӑ а.

**Арча** вырӑнӗ. Тӗпелте арча ларакан вырӑн. Арчана таса тумтире хураҫҫӗ. Арчара тумтир нумай. Арча ҫинче ача ҫывӑрать. Хӑма арча (а.), ҫатан карҫинкка а., пушӑтран ҫыхнӑ а.

**Кӑмака** — ҫӑварлӑ хӑвӑл вучах. Ӑсчахсем: кӑмака (кӑм+ака) тӗрӗк чӗлхинчи кӑм, хӑм — хӑпарса йӑранланса тӑракан хӑйӑр хумӗ,



ака (акка) — хăвăл тытаканĕ сăмахсенчен пулса кайнă тесе шутлаççĕ. Кăмака хăпарса тăракан шăтăка хăнкара пĕлтерет иккен. Авал кăмакана çĕр ăшне чакаласа, çĕр çине витĕр шăтăк чавса кăларса тунă. Çав авалхи вăхăтран çавăн пек кăмака тунăран «кăмака варĕ», «кăмака çăварĕ» ятлă вырăнсем, çырмасем асра юлнă. Чăвашсем кăмакана ятарлă калăпласа çыхнă карçинкка çине хăйăрпа пылчăк сарнă тăмран çапса тунă. Типнĕçемĕн «çăварне» каснă, ăшне вут чĕртсе майĕпен типĕтсе шăрантарнă. Темиçе эрнерен вут çунтарса хĕртнĕ, чӳлмек пек пĕçертсе çирĕплетнĕ. Шалти çатанĕ çунса кайнă. Çакăн майлах кăмакана урапа çине те лартса тунă. Хальхи пек каласан, çӳрекен кăмака та пулнă.

Чăвашсем хура пӳртре вут-йыш туррисем пурăнаççĕ тенĕ. Мĕн чухлĕ хăрăм тачкарах, çавăн чухлĕ вĕсем çемьене хӳтĕлеççĕ имĕш. Çавна кура авалхи асаттесем мăрьеллĕ шурă кăмакана йышăнасшăн пулман. Тĕне кĕрсен, крепостла правăран хăтăлсан тин шурă пӳртсем лартма пуçланă. Ун хыççăн вырăсла кăмакасем йăлана кĕнĕ. Кивĕ йăлана пăхăнакансене, Столыпин вăхăтĕнче патшалăх укçа, кирпĕч парса хура пӳртри кăмакасене сӳтсе-ватса вырăслисене ларттарнă.

Халĕ çуртсенче тĕрлĕ тĕллевлĕ кăмакасем лартаççĕ. Кăмакаçăсем валли темиçе тĕрлĕ проектсем, кĕнекесем кăларса параççĕ. Кăмака аталанăвне ӳкерчĕкре пăхăр.

**Вучах** — кăмака анĕ, çăварĕ çумĕнче вут çунса тăмалли вырăн. Вучаха хуран çакаççĕ. Вучаха кăмакаран туртса кăларнă кăвара яраççĕ. Хуранти апат (яшка) пиçсен вучаха кăвайт хумаççĕ.

**Ен. Енĕ** — стена. Пӳрт стени. Пӳрт тăватă енлĕ. Тăватă енлĕ, пилĕк стеналлă, сакăр кĕтеслĕ пӳрт. Кайри тата малти пӳлĕмлĕ пӳрте çапла калаççĕ. Кăнтăр енĕ (е.) хĕвел анăç е., çурçĕр е., хĕвел тухăç е., урăхла: — урам е., кил карти е., алăк (алкум) е., пахча е.

**Йĕрĕх** — Йĕрĕх çамрăксене хӳтĕлекен, ача-пăча çуратма пулăшакан Турă шутланать. Йĕрĕх сăпки (йĕрĕх пĕрни) авланнă, качча тухнă çамрăксен сывăракан вырăнĕ тĕлĕнче çакăнса тăрать. Христос тĕнне йышăнсан йĕрĕхе усал сывлăшпа танлаштара пуçланă. Халĕ йĕрĕхе, йĕрĕх пĕрнине музейра кăна курма пулать.

**Кашăк-тирĕк çыххи** — хулăсене пĕрсе çыхнă пĕчĕк карçын. Кашăк-тирĕке çусан, çав карçына типĕтме янă.

Кашăк-тирĕк çыххи кăмака умĕнчи стена çинче çакăнса тăрать.

**Кашта**. Вăрăм, çинçе йывăç вулĕнчен тунă тумтир çакмалли вырăн. Тумтир çакмалли, ыхра-сухан çыххи çакмалли тата ытти япаласене çакмалли кашта (к.), кăмака çумĕнчи к., вырăн çинчи (çумĕнчи) к., алăк енчи кашта.

**Кăмкан** — алă çумалли икĕ сăмсаллă шыв савăчĕ (рукомойник). Çулла кăмкана алкум хыçне (айне) тухса çакаççĕ. Вучах лаççинчи кăмкан (к.), пăхăр к., йĕс к., шуçтимĕр к., тăм к., кĕмĕл к.




Кăмкан — икĕ сăмсаллă, хăлăп çакки çакмалли икĕ ункăллă, пысăк (хăмпу) хырăмлă савăт. Хăлăп çакки тĕлĕнче кăмкан выляса тăрать. Сăмсине тайăлтарса пуссан алă çине шыв юхса тухать. Çунă шывĕ шайка çине тумланать.

Кумган, кубган, кулган, курган — металлический азиатский рукомойник. Кувшин с носиком, ручкою и крышкой. Встарь бывали кумганы серебряные.

Кумган — у тюркских народов высокий кувшин с носиком. У татар, азербайджан — кружка для воды. (В.И.Макаров, Н.П. Матвеев. Словарь лексических трудностей. Былина — 93).

Халĕ кăмкан пурнăçран, йăларан тухнă савăт. Ун вырăнне рукомойник, умывальник савăтсем йăлана кĕнĕ.

**Кăмкан çакки**. Кăмкан çакăнса тăракан вырăн. Кăмкан çакки кăмака умĕнче тăрать. Кăмкан çакки айĕнче шайка ларать. Кăмкана улчипе юпи çине çакнă.

**Кравать** (вырăсла кровать) — çывăрмалли вырăн — йăлана XX ĕмĕр варринче кĕнĕ.

**Кутник**. Кутник сакки (кут, хут — хутланакан тĕл, вырăн) — ларкăч, сак, тенкел. Кутник сакки алăк çумĕнче е кăмака çумĕнче ларать. Кутник кăмака ларакан лаптăкран тухса тăрать.

**Лапка** (сарлака, лаптăк сăмахран) — сак, сентре, тенкел, çӳлĕк. Стена çине пăраласа шăтарса çапнă икĕ йывăç пăта çинче лапка выртать. Лапки çине çăкăр хывнă. Унта чӳлмек те ларать. Вырăн лапки (л.), сентре л.

**Лаххан** (вырăсла лохань). Кăмака умĕнче лаххан ларать. Лаххание шыв тултарса лартнă.

**Мачча**. Мачча кашти (вырăсла матица) — тĕн кашти, пӳртçи кашти. Пӳртçи сарăмĕ, лаптăкĕ. Пӳрт тăрри айĕ. Хура пӳртĕн тăрăсăр пӳртçи çине хулăм çĕр хăпатса хураççĕ. Йĕпе-сапара тĕн каштийĕ (маччи) çĕрсе тăрать. Çавăнпа ун айне юри улча лартнă. Тĕн кашти айне ларма юраман.

Мачча сăмах чăваш чĕлхине XIX ĕмĕр вĕçĕнче, шурă пӳртсем ларта пуçланă тапхăрта кĕнĕ. Мачча кашти пӳртĕн кайри, малти (тĕпелти) вырăнĕсене уйăрса тăрать. «Мачча кашти айне ан лар, пурнăçра йывăр инкек пулать», — тесе каланă ваттисем.

**Нар**. Путмар (вырăсла — под нар! тесе каланă сăмахран) — сак, кравать. Çывăрмалли вырăн.

**Олча** — кăмака çумĕнчи тĕн каштине тĕксе, çĕклесе тăнă юпа. Улча çинчен вулăр.



**Пукан** — ларса тăмалли, пӳ канмалли ларкăч. Хулăм пĕренерен пуленкесем касса тунă пукана каска пуканĕ тенĕ. Тăвата уралла пукансем йăлана XIX ĕмĕр варринче тин кĕнĕ. Çурăм хыçлă пукан (п.). Çатанран çыхса тунă п., пушăтран çыхса тунă п., хутланакан хĕреслĕ п.

**Пӳлĕм** — пӳрт ăш-чикĕн пайланнă вырăнĕ. Çывăрмалли пӳлĕм (п.). Кăмака умĕнчи п.

**Сак** (сĕк, майрака, тĕме сăмахсен-

чен) —ураллă (măйракаллă) тĕртсе, çĕкленсе тăракан вырăн, лаптăк, ларкăч.

Тăрăхла сак (с.), урлă с., вăрăм с., кĕске с., выртса тăмалли с., кутник с. Ĕмĕр сакки (тĕми, сăрчĕ) сарлака, утса каçма ĕмĕрĕ кĕске.

**Сакай алăкĕ** — сакайне анса улăхмалли шăтăкăн алăкĕ. Сакай алăкĕ кăмака умĕнче.

**Сентре** — сак, лаптăк, выртса тăмалли вырăн. Пирĕн енче мунчари улăхса ларса милĕкпе çапăнмалли вырăна сентре тесе калаççĕ.

**Сĕтел** — апат ларса çимелли вырăн. Ăсчахсем ку сăмах вырăс чĕлхинчи стол сăмахран пулнă тесе шутлаççĕ. Н.Я.Марр сĕт+тĕл(ĕ), сĕт ларса ĕçмелли, çимелли тĕл вырăна пĕлтерекен сăмахран пулса кайнă тесе каланă.

**Стан (ăстан) вырăнĕ** — пир-авăр тĕртсе тумалли стан тĕрткĕç вырăнĕ. Стана чӳрече тĕлне лартаççĕ. Пирне тĕртсе пĕтерсен стана çенĕхе, кĕлете илсе тухса лартаççĕ.

**Çекĕл** — йывăç тураттинчен тунă çакланчăк. Чӳрече çумĕнчи стена çине пăраласа çекĕл çапса лартнă. Çекĕл çине çаклатса çăпата кантри е урăх кантра яваççĕ. Çекĕл çине япаласем çакаççĕ.

**Çӳпçе**. Çăкаран чавса якатса тунă, çиелти тумтире упраса тăмалли катка евĕр арча. Пĕр çӳпçине выртса тăракан тĕле лартнă, тепĕр çӳпçине кĕлете лартнă.

**Тенкел** — кĕске сак. Пĕчĕк сак. Кăмака çумĕнчи тенкел.

**Тĕнĕ** (пĕлĕт, тĕнче уççи сăмахсенчен). Тĕнĕ шăтăкĕ — хура пӳртĕн кăмака çумĕнчи, алăк çумĕнчи стенасем çинче шăтарса тунă шăтăксем. Тĕнĕ шăтăкĕнчен сывлăш кĕрет, тĕнĕ шăтăкĕнчен тĕтĕм тухать. Тĕнĕ пăкки. Халĕ хура мунчара курма пулать. Тĕнĕ шăтăкне ваттисене, вилнисене асăннă вăхăтра çурта лартнă. Халĕ турăш умне лартаççĕ.



**Тĕн кашти**. Авалхи хура пӳртĕн мачча кашти. Тĕн кашти ҫине ҫурса хывнӑ йывӑҫран ҫи сарнӑ. Пӳрт ҫи ҫине ӑшӑ пулма типĕ ҫулҫӑ сарнӑ. Ҫулҫӑ ҫине ҫĕр (тӑпра) хӑпартса купаланӑ. Йывӑр пулнӑран, тĕн кашти хуҫӑласран кӑмака тĕлне тĕн каштине ҫĕклесе тӑма улчипе юпи лартнӑ. (Мачча ҫинчен вулӑр.)

**Тĕпел** (тĕп, ҫĕр сӑмахсенчен) пӳрт маччинчен иртнĕ малти вырӑн. Сĕтел ларакан вырӑн. Хисеплĕ вырӑн. «Тĕпеле иртсе лар. Кĕрекене кĕрсе лар», — тесе калаҫҫĕ хӑнана.

**Турӑш кĕтесси**. Сĕтел тĕлĕнчи кĕтес. Виҫĕ кĕтеслĕ лаптӑк ҫине (турӑш) лартнӑ. Ун тавра тĕрленĕ сурпан ҫакнӑ.

**Улча**. Улчи. Улчипи, ӳлчепи, олчепи юпи (эл, ел+юпа, ҫĕр+юпа, ҫĕр юпи сӑмахсенчен пулса кайнӑ) — пӳртри ҫĕр урайне лартнӑ тĕн каштине тĕртĕнсе ҫĕклесе, йӑтса тӑракан юпа. Улча юпи (улчепи) кӑмакапа юнашар ларать. Улча юпи мӑшӑрлӑ. Икĕ юпине шӑтарса уратасем касса кĕртсе лартаҫҫĕ. Ҫӳлти урати ҫине тĕн кашти вырнаҫтараҫҫĕ.

Шурӑ пӳртсем ларта пуҫласан улча юпи йӑларан тухнӑ. Хальхи вӑхӑтра чĕлхере те манӑҫа тухнӑ. (Малти ӳкерчĕк).




**Хӑйӑ чикки**. Виҫĕ ураллӑ, икĕ е тӑватӑ («аллӑ») туратлӑ чарак.

«Аллисем» ҫинче тимĕр чĕрне. Чĕрнисем ҫине хӑйӑ чикнĕ. «Урисем» ҫумĕнче шайкапа шыв ларать. Ҫунакан хӑйӑ кӑварĕ ӳксе шайка ҫинче сӳнет. «Хӑйӑ чиккине пӑхса тӑман вӑхӑтра ун ҫине вутлӑ кайӑк — куйкӑрӑш пырса ларать, пӳрте ҫунтарса яма пултарать», — тесе калатчĕ манӑн асанне.

**Чӑлан** (вырӑсла чулан) — пӳлĕм.

**Чӳрече** (персла дориче). Пĕчĕк алӑк. Пӳрте ҫутӑ кĕмелли тӑваткӑл шӑтӑк.

Ĕлĕк хура пӳртĕн чӳречине вӑкӑр хӑмпи карса лартнӑ.

Шурӑ пӳртĕн чӳречине кантӑк кĕртсе лартаҫҫĕ. Чӳрече питне тĕрĕ касса чĕнтĕрлеҫҫĕ.

**Шайка** (туркă чĕлхинче кимĕ, шыв çинче ишекен пысăк кимĕсем) — шыв тытмалли савăт.

Шыв шайки (ш.) — мунча ш. Икĕ авăрлă шайка.

**Шкап** (вырăсла шкаф) — савăт-сапа хумалли вырăн. Шкап чăваш чĕлхине XIX ĕмĕр вĕçĕнче кĕнĕ.

Çакăнса тăракан шкап (ш.). Урайĕнче ларакан ш., хупăлчаллă ш., уçăлса ларакан ш.

**Усă курнă литература:**


*Авдусин Д.А.* Археология СССР. — М.: Высшая школа, 1967.

*Арто И. и др.* Сауна. — М.: Стройиздат, 1993.

«Атеистические чтения», № 19, 1990.

*Ашмарин Н.И.* Словарь чувашского языка. — Чебоксары: 2000. Т. 12.

БСЭ. Спб.: Норинт, 1997.

*Воробьев Н.И. и др.* Чуваши. Этнографическое исследование. Часть I. Чебоксары: Чувашиздат, 1956.

*Даль В.И.* Толковый словарь в 4-х томах. — М.: Русский язык, 1989.

*Егоров В.Г.* Этимологический словарь чувашского языка. — Ч.: Чувашиздат, 1964.

*Иванов В.П. и др.* Этническая история и культура чувашей Поволжья и Приуралья. Ч.: Чувашиздат, 1993.

*Каховский В.Ф.* Происхождение чувашского народа. Ч.: Чувашиздат, 1965.

*Майдар Д., Пюрвеев Д.* О кочевой до мобильной архитектуры. М.: Стройиздат, 1980.

*Макаров В.И., Матвеев Н.П.* От Ромуля до наших дней... Словарь лексических трудностей художественной литературы. М.: Подиум — Былина, 1993.

*Малинова Р., Малина Я.* Прыжок в прошлое. М.: Мысль, 1988.

*Матвеев Г.Б., Фокин П.П.* Традиционная культура чувашей в 2-х ч.— Чебоксары: ЧГИГН, 1995.

*Медоев А.Г.* Гравюры на скалах. Алма-Ата: Жалын, 1984.

*Наумов Н.Е.* «Çамрăксен хаçачĕ», 1998, пуш, 6, 13, 20; «Хыпар», 1999, 80, 93, 99, 103, 109, 112, 114, 118, 121, 128, 130, 137, 139№; «Хыпар», 1998, 10, 11, 13-16, 18-21, 24, 25, 27, 28№.

*Никольский Н.В.* Краткий курс этнографии чуваш. Ч.: Чувашгиз, 1928.

*Ожегов С.И.* Словарь русского языка. М.: Русский язык, 1982.

Русско-китайский словарь. М.: Русский язык, 1990.

Русско-персидский словарь. М., 1965.

Русско-чувашский словарь. М.: Советская энциклопедия, 1971.

*Сафин В.А.* Строим баню. М.: Стройиздат, 1990.

«Советская археология». 1970, №4.

*Трофимов А.А.* Орнамент чувашской народной вышивки. Ч.: Чувашиздат, 1977.

*Федотов М.Р.* Этимологический словарь чувашского языка. Ч.: ЧГИГН, 1996.

Чăвашла-вырăсла словарь. М.: Советская энциклопедия, 1971.

*Шанский Н.М. и др.* Краткий этимологический словарь русского языка. М.: Просвещение, 1971.

Эхо... По следам легенды о Золотом домбре. Алма-Ата, 1990.

*Юрьев М.* Все о бане. Строительная газета. 1992.

# САВĂТ-САПА, МИХĚ-ХУТАÇ, КАРÇИНККА-КУНТĂК, АРЧА-СУНТĂХ ТАТА ĂШЛĂХА, ХУПĂ-ХАПĂЛĂХА ТЫТСА ТĂРАКАН ЫТТИ ЯПАЛАСЕМ





**Ала** — савăт тата ĕç хатĕрĕ. Тĕпне вĕтĕ тĕтел карнă кăшăл е кăшкар. Тĕпне шăтăклă шăла çи карнă савăт... Алпа силлентерсе е тайлăкран юхтарса вĕтĕ шăтăклă шăла çи витĕр кăларса тырпула çӳп-çапран, хăлчăкран уйăрмалли савăт тата ĕç хатĕрĕ. Ала кăшкарĕ. Ала кăшкарне çăка хуппинчен авнă. Ала кăшкарĕ хупăнчăк. Тăрăхла ала кăшкарне хăмаран çапса тунă. Ала тĕпĕ. Ала тĕпĕ шăтăклă, ала витĕр тыр юхать. Шултра ала (а.), пысăк а., мăн а., тăрăхла а. Арман али (а.), йĕтем а., тыр а., çăнăх а., кĕрпе а., Çăра а., вĕтĕ ала (а.), шултра а., пĕчĕк а., çаврака а. Тимĕр а., йĕс а., хĕлĕх а., чĕр çип а., ансăр пушăт а., шăла чăпта а., мунчала а., капрун а.

**Алтăр** — ăскăч, курка, авăрлă савăт. Алтăра тирĕкрен, çăкаран, юманран, хурамаран алтса, чавса, чакаласа касса, якатса тĕрĕлесе тăваççĕ.

Пысăк алтăр (а.), пĕчĕк а., тарăн а., ăшăх а. Пĕр авăрлă алтăр (а.а.) икĕ а.а., вăрăм а.а., кĕске а.а. Тĕрĕленĕ а.а. Чӳк алтăрĕ çинче вăкăрпа хĕвеле е лашапа кустăрмине, е кăвакалпа çăмартине тĕрĕленĕ. Шыв ĕçмелли алтăр (ĕ.а.), сăра ĕ.а., мунча а. Каçпа тӳпере алтăр-çăлтăр курăнса тăрать. Алтăр-çăлтăр çичĕ çăлтăр. Турри çумăра ал-

тăрпа сапса çутарать иккен. (Юмахра).

**Арча** — тумтире, япаласене хупса тытса тăмалли ырça, пӳлмек, хуплăх, сунтăх, ещĕк. Арчана йывăçран тăваççĕ. Сухăрлă йывăçран тунă арчара кĕве ĕрчемест, хунă япаласене кĕве çимест. Урăх, çемçе йывăçран тунă арчана кĕве ĕрчесрен сухăрлă патак е пуленке хураççĕ. Арчана, ырçана авал уртăш (арча) йывăçĕнчен тунă. Ун çумне кĕве нихăçан та çыпăçмасть. Арча сăмах, арча йывăççин ячĕн пĕлтерĕшĕпе тĕрĕксен (туркменсен) чĕлхи урлă пирĕн чĕлхене кĕрсе юлнă. Чăрăш йывăçран (хăмаран) тунă арча (а), çăка а., тирĕк а., уртăш а., юман а., пысăк а., пĕчĕк а., тимĕрпе кăшăлланă (к) а., йĕспе к.а., çăра çакнă а., шалти вăрттăн çăраллă а., çĕклемелли икĕ авăрлă а., пĕр авăрлă а., кукамай арчи (а), асанне а., анне а., инке а., кин а., кĕçĕн çын а.



**Ăскăч** — савăк, курка, алтăр, савăт. Шыв ăсса илмелли ăскăч (ă). Тыра, çăнăх ăсса илмелли ă. Йывăç ă., тимĕр ă., хурăн хуппинчен тунă ă., хупран тунă ă., пластмассран тунă ă. Пысăк ă., пĕчĕк ă. Шыв арман урапин ăскăчĕ (ă). Çĕр чакалакан экскаваторăн ă.



**Бак** (вырăс сăмахĕ) — пысăк (тимĕр) савăт. Французсен чĕлхинче – пысăк шыв савăчĕ. Шыв бакĕ (б.). Бензин б.



**Банка** (вырăс сăмахĕ) — поляксен чĕлхинче — хăмпăллă, хăмпăланнă шыв савăчĕ, хупăнса тăракан савăт. Тимĕр банка (б), кĕленче банка.



**Бокал** (вырӑс сӑмахӗ) — савӑт черкке. Пысӑк черкке. Вырӑс чӗлхине француз чӗлхи урлӑ грексен савӑт сӑмахӗнчен кӗнӗ. Кӗмӗл бокал (б.), кӗленче б.

**Бидон** (вырӑс сӑмахӗ) — савӑт, фляга. (Грек чӗлхинчи пичке сӑмахран). Тимӗр бидон (б.), алюмини б., эмальленӗ б., пысӑк б., пӗчӗк б.







**Бутылка** (вырӑс сӑмахӗ) — кӗленче савӑт. Вырӑссен виҫев савӑчӗ вырӑс чӗлхине француз чӗлхинчен кӗнӗ. Унта савӑт, пичке сӑмаха пӗлтерет. 18—20 ӗмӗрсенче: 1 хӗрлӗ эрех бутылкине 1/16 витре е 0,77 л хӗрлӗ эрех, 1 бутылка шурӑ эрех, унта сӑра 1/20 витре е 0,624 л шурӑ эрех кӗнӗ.

**Ваза** — вӑрӑм ансӑр савӑт. (Латин чӗлхинчи ваза — савӑт сӑмахран.) Кӗленче ваза (в.), хрусталь в., фарфор в., тӑм в., пысӑк в., пӗчӗк в., чечек вази.



**Валак** (вулак) — кункра, пӑрӑх, такана, лакӑм. Пӑрӑхланӑ вул. Чакаланӑ каска. Тӑрӑхла кил, килӗ. Ҫаврака лакӑм, кил, килӗ. Выльӑха шӑвармалли валак (в.). Кӗпе ҫумалли (в.). Ҫӑл шывне юхтаракан в., пӑрӑхлӑ в., лакӑмлӑ в. Ус йывӑҫҫинчен тунӑ в., чӑрӑш в., хыр в., уртӑш в., юман в. Валак — вул ҫинчи лакӑма пӗлте-

рекен, ăнлантаракан сăмах.

**Валашка** — валак, вăрăм валак, курите, кункăра, такана, тăрăхла кил, килĕ. Пĕр йывăç вуллинчен чакаласа тунă вăрăм (4-6 метр) валак (в.). Çăл куçĕнчи в., кил картинчи в. Кĕтӳре шыв ĕçтерекен кĕтӳ валакĕ (в.). Лаша кĕтӳ в., сурăх кĕтӳ в. Çăл куçĕнче, çăл шывне тултарса тăракан валак. Çăл куçĕнче кĕпе-тумтир çумалли валак е килĕ.







**Ванна** (вырăс сăмахĕ) — савăт, шыв савăчĕ, шыва кĕмелли тăрăхла чан. Вырăс чĕлхине нимĕç чĕлхинчен кĕнĕ, унта чара, таз сăмахсене ăнлантарать.

**Варинкке** (вырăс чĕлхинче воронка, дыра) — çаврака шăтăк. Кăшăллă, валаклă, пăрăхлă, шăтăклă пулать. Йывăç варинкке (в.), турат куçĕнчен тунă (т.в.), майракаран т.в., шуç тимĕртен т.в., пластмассран т.в., пĕчĕк в., пысăк в.

**Веç** — манăçа тухнă савăт. Йывăç чашăк (ч.), пысăк ч. Какай лартмалли ч. Веçлĕ тирĕк — пысăк йывăç ч. Тирек йывăçĕнчен тунă





ч. Веçлĕ тирĕк чашăкăн лакăмĕ ăшăх, кăшăлĕн хĕрри сарлака (веçлĕ) пулнă темелле. Кăшăл хĕррине, веç çине, какай (апат) çинĕ вăхăтра, вăхăтлăха какай таткине хунă.

**Ветел** (Вятель) — 1. кушел. 2. сĕке. Кантра-вĕрентен çыхса тунă çĕклем çыххи, пуххи. Ветеле çур пăт (пĕр пăт) утă тултарнă. Сурăхсем утта çакса янă ветелтен çисе тăраççĕ. Кантра ветелпе пулă тытаймăн...

2. сĕке, шакă (верша) — пулă тытмалли хăваран çыхнă карçинкка. Икĕ варинкке евĕр çыхнă пĕрне, карçинкка, марата, нерете (морда).




**Вĕчев** — савăт, ăскăч, алтăр, пысăк çăпала, кĕске аврлă çăпала. Кĕреке курки. Сăра курки.






**Виçе** (вырăсла весы) — виçев савăчĕ. Шыва, шĕвеке тата сапăнса, куçса, юхса, вĕрсе-вĕçсе тăракан япалана, сывлăша виçмелли савăт. Шыв виçин савăчĕ (с.). Сывлăш, сĕрĕм виçин с. Тыр-пула, çăнăха виçмелли савăт.

**Витре** (вырăсла ведро). Сĕте, шыва тата ытти япаласене тытмалли савăт. Шуç витре (в.), йĕс в., эмальпе витнĕ в., пластмассран тунă в., йывăç (чĕрес) в. Шыв витри (в.), сĕт в., сăра в. Авалхи витрен виçи 12,3 л. Хальхи витрен виçи — 10 литр.



**Графин** (вырăс сăмахĕ) — кĕленче савăт. Вырăс чĕлхине нимĕç чĕлхинчен кĕнĕ. Хăнасене хăналама эрех

лартса памалли савăт. Пысăк графин (г.). Пĕчĕк г., кĕленче г., хрусталь г., тĕрĕленĕ г.





**Енчĕк** — пĕчĕк хутаç, сумка, кĕсье. Тĕрĕк чĕлхинчи йан+чык сăмахсем чăваш чĕлхинче ен+чик (чĕк), енлĕ чиклĕх, енчĕк сăмахсене пĕлтереççĕ. Сăран енчĕк (е.), пир е., тĕрĕленĕ е., лаша çумне çакнă е. Енчĕке укçа хураççĕ, яраççĕ. Пасара енчĕк тĕпне тасатма каяççĕ.



**Ещĕк** (вырăсла ящик) — кунтăк, тĕплĕ кăшкар. Ещĕклĕ урапа. Хăма çапса тунă ещĕк (е.). Тырра (арманта) авăртма яракан е., килти япаласене упрама хывнă е. Вырăс чĕлхине авалхи Скандинави чĕлхинчен кĕнĕ карçын сăмаха тата каврăç (ясень) йывăçĕнчен (хăминчен) тунă пĕрнене пĕлтерет.



**Канти** — манăça тухнă пысăк йывăç чашăк (ч.). Станокпа каснă пысăк ч. Касса кăшăлланă ч. Çÿлти енĕ (хĕрри) çине лакăмлатса кант, хăю каснă чашăк. Çăпалана чашăк канти



çине тивертсен яшка (шĕвек) сĕтел çине тумланмасть.

**Канистра** (вырăс сăмахĕ) – шĕвеке тытмалли хупă бак. Вырăс чĕлхине акăлчан чĕлхинчен кĕнĕ. Унта чей, кофе, тытакан хупă банкăсене пĕлтерет.

**Капак, кабак** — манăçа тухнă савăт, **кавăн** хуппинчен тунă савăт. Тĕрĕк чĕлхинче кабак — хытă, тачка хупăллă **кавăн**, кабачок — çемçе хупăллă кавăн. Кабак кавăнне темиçе пин çул хушши хытă хуппишĕн кăна ÿстерне. Кабак сăмахĕ сăра лавкки, хупах, сăра лаçĕ çине куçнă.

**Карçинкка** (вырăсла корзина) — çатан савăт, кунтăк, лăпă. Хăва хуллинчен çыхнă карçинкка (ç.к.), хăмăшран ç.к., ыраш улăмĕнчен ç.к., пушăтран ç.к., çăка хуппинчен ç.к., хурăн хуппинчен ç.к. Пысăк к., кăшавай к., пĕчĕк к. Çĕр улми пуçтармалли к., тĕрĕллĕ к., çул çÿремелли к., хупăлчаллă к., чечек карçинкки, сăпка карçинкки.





**Касмăк** — катка. Пĕр йывăç вулĕнчен татса, касса, чакаласа, якатса тунă катка. Касмăк каткана çăкаран, тирекрен тунă. Пысăк касмăк (к.), пĕчĕк к. Пыл касмăкĕ (к.), çăнăх к., шыв к. Укçа (вак укçа хывса пуçтаракан) к., пуç çине тăхăнакан к. Авал чăвашсен çар çыннисем пуç çине, пуçа сăнăран, чукмартан, хĕçрен упрама касмăк калпакĕ тăхăннă пулмалла. Касмăк — шыв йăтмалли пысăк чĕрес. Касмăк — шыв витри.



**Кастрюль** (вырăсла кастрюля) — савăт. Вырăс чĕлхине чех, нимĕç чĕлхисенчен кĕнĕ. Унта вара — француз чĕлхинчен. Француз чĕлхинче авăрлă çатма тени пулать. Апат хатĕрлемелли авăрлă хупăллă савăт. Тимĕр кастрюль (к.), алюмини кастрюль к., эмальленĕ к., пĕчĕк к., пĕр авăрлă к., икĕ авăрлă к.



**Катка** (вырăсла кадка, вырăс чĕлхине грек чĕлхинчи витре, кăкшăм ячĕсенчен кĕнĕ) — йывăç савăт, шетник. Юман катка (к.), çăка к., тĕрĕк к., чăрăш к., йĕлме к. Каткана ансăр хăмаран, клепкăсенчен, шетниксенчен тăваççĕ. Кăшăл хăми — кăшăл клепки, катка тĕпĕн хăми — катка тĕпĕн клепки. Катка кăшăлне хăва, çĕмĕрт йывăçран е тимĕр ункăран тыттараççĕ. Катка тĕпĕ енчи кăшăл (кăшăлсем) (к.), катка варринчи к., çӳлти к.



Хĕрĕх кăшăл (40 к.), 12 к., 6 к., 3 к. çапнă катка. Каткаçă, катка-пичке ăсти, аслă лаçра катка-пичке çапать, катка-пичке тăвать. Шыв юхасран катка хăмисен хушшине хăмăш хураççĕ. Шӳтернĕ каткаран шыв юхмасть. Типсе кайнă катка ала пек, шыв тытмасть.

Пысăк катка (к.), пĕчĕк к., тыр к., çăнăх к., кĕрпе к., шыв к., мунча к., пахча çимĕç тăварлакан (т.) к., пулă т.к., какай т.к., сăра к., пыл к., чуста йӳçекен к., виçе катки. Сакăр пăт (8 п.), 4 п., 2 п., 1 п. кĕрекен катка (к.к.). Хĕрĕх витре (40 в.), 12 в., 6 в., 4 в., 2 в. к.к. Пысăк катка — чан катки. Чан каткине пушартан сыхланма









шыв тултарнă. Чан каткине 20 кубла метр шыв кĕнĕ.

**Кашăк** — çăпала (тĕрĕкле кашык). Кашăка ытларах тирек йывăçинчен чакаласа тăваççĕ. Çавăнтан тирĕк-çăпала, тирĕк-чашăк сăмахсем йăлана кĕнĕ.

Тата кашăка çăкаран та тăваççĕ. Йывăç кашăк (к.), тимĕр к. Пысăк к., пĕчĕк к. Пысăк кашăкпа яшка антараççĕ. Пĕчĕк кашăкпа яшка çиеççĕ. Чей кашăкĕпе чей ĕçеççĕ, стакана сахăр ярса пăтратаççĕ. Кашăк пĕрни, кашăк чĕресĕ, кашăк хунă савăтсем. Кашăк çăмахĕ, чустаран кашăкпа татса тунă çăмах, салма.

**Кăвас чĕрес** — чуста йӳçĕтекен савăт. Кăвас чĕресне çăкаран тăваççĕ. Кăвас чĕресĕнче чуста йӳçет. Унта чуста çăраççĕ. Пĕчĕк кăвас чĕрес (к.ч.), пысăк к.ч. Пĕр кăвас чĕресĕнчи чустаран çичĕ çăкăр пĕçертĕм. Килти çăкăр 10 кĕрепенке (4 кг) таять.

**Кăкшăм** — савăт. Чăм. Чӳлмек. Авăрлă, вăрăм тăм савăт. Сĕт кăкшăмĕ (к.), шыв к., сăра к. Авалхи кăкшăм (к.), авăрлă к., авăрсăр к., шурă тăм (т.) к., хĕрлĕ т.к., кĕленче к., хрусталь к. Тимĕр к., йĕс к., кĕмĕл к., илемлĕ к., тĕрĕллĕ к., çыруллă к.

**Кăмкан** — савăт. Ал çумалли, пит çумалли шыв савăчĕ. Пĕр сăмсаллă кăмкан (к.), икĕ сăмсаллă к., тăм к., шуç к., кĕмĕл к., йĕс к., хăлăплă к., авăрлă к. (89 стр. вулăр).

**Кăрăш** — савăт, пĕрне, кунтă, кăшкар, шăпаня, çăтă карçинкка. Кăмпа пуçтармалли кăрăш (к.). Тырпула тултарса упрамалли к. Çăмха

çипне пуçтарса хумалли к. Пир тĕртмелли ăса-йĕкесене чиксе упрамалли к. Чĕрнĕ хурăн тымарĕнчен авса тунă хупăлчаллă илемлĕ кăрăша аккана (аппана) парнелерĕм.

Çатан хăвинчен çыхса тунă (ç. т.) к. Хурăн тымарне чĕрсе тунă пушăтран ç.т.к. Çăка пушăтĕнчен ç.т.к. Хурама пушăтĕнчен ç.т.к. Çăка хуппинчен е хурама хуппинчен авса тунă к., хупăлчаллă к. Пĕр витре кĕрекен (в.к.), çур в.к.к.

**Кăрман** — савăт. Кунтăк евĕр ещĕк, лар. Çатан кăрман (к.), кунтăк к., хуп к., япаласем хумалли (х.к.), çăнăх х.к. Арпа кăрманĕ (к.), çуна к., тислĕк турттармалли к. Çуртри тыррисен кĕске кĕлтисене кӳмелли, турттармалли к.

**Кăрчака** — пысăк тăм савăт, ĕç хатĕрĕ. Сарлака хăмпу хырăмлă, ансăр е анлă пысăк куршак, тăм чӳлмек. Сăра кăрчакин тĕпĕ çумĕнче пӳрне тачкăш шăтăк пур. Унтан ăсла юхса тухать. Ăслине салатран шыв ярса, вĕретсе пыллантарса тăваççĕ. Кăрчака сăмах тĕрĕк чĕлхинчи **корчак** сăмахран. Тиртен çĕленĕ хăмпăллă савăта пĕлтерет. Унтах хĕрлĕ эрех упраннă. Тĕрĕк чĕлхине перс чĕлхинчи корцо сăмахран кĕнĕ пулмалла. Корцо сăмахран ытти чĕлхесенче: харчо, корчма сăмахсем пулнă. Чăваш чĕлхинче кăрчама, кăрчака сăмахсем пулса кайнă. Сăра кăрчаки (к.), шерпет к., макăсма к.

Тăм кăрчака (к.), чукун к.

**Кега, кег** (акăлчанла кег — пичке) — савăт. Завод сăрине усрамалли ятарлă савăт. Ăна тимĕр листаран ятар-









ласа тунă. Унта 50 литр сăра кĕрет. Хăй йывăрăшĕ — 14 килограмм. Сăрана 2 атомосфера пусăмĕпе хĕссе тытса тăрать. Сăра юхтармалли ятарлă клапанлă пăкă пур. Савăта Германире, Чехире туса кăлараççĕ. Унпа сăра завочĕсенче, сăра сутмалли ятарлă хупах-лавккасенче усă кураççĕ. Чăваш чĕлхине 1990 çулсем хыççăн кĕнĕ.








**Кĕленче** — савăт (вырăс чĕлхинчи **склянница** сăмахран). Кантăкран шăратса, юхтарса тунă савăт. Çур литр кĕленчи (л.к.), 1.л.к., 2 л.к., 3 л.к., четвĕрт (3 л.), бутыль (12 л.) к. Кĕленче банка. Виçевĕсем маларахри пекех. Сăра кĕленчи (к.), шыв к., эмел к., эрех к., им-çам шывĕн к. Таса тĕслĕ к., хура, хăмăр тĕслĕ к.

**Кĕсье, кессе** — тумтир çинчи ăшлăх, хутаç. Тĕрĕк чĕлхинче каса, киса — мих, хутаç, сăран сумка. Çӳхе кĕсье (к.), тачка к., ăшăх к., тарăн к., шăтăк к., кĕпе çинчи (ç.) к., йĕм ç.к., çиелти тумтир ç.к.

**Кил, килĕ** — ĕç хатĕрĕ тата савăт. Çĕкленсе ларакан кил. Урлă выртакан кил. Çĕкленсе ларакан кил çӳллĕшĕ 60-80 сантиметр. Ăна хулăм юман йывăçран тăваççĕ. Кил лакăмне 30-35 сантиметр чакалаççĕ. Тулаш енчен вăл мăн черкке евĕр курăнать. Кĕрпе тӳмелли кил (т.к.), кантăр вăрри т.к., сӳс т.к., тăлла-сукна т.к. Килĕри япалана кисĕппе тĕвеççĕ. Пĕччен, иккĕн, виççĕн: — 2, 4, 6 кисĕппе тĕвеççĕ.

Урлă выртакан килĕре кĕпетумтир çăваççĕ, ăна кĕпе килли тесе калаççĕ. Кĕпе киллин варринче кил лакăмĕ. Икĕ вĕçĕнче çунатланса каснă икĕ тыткăч. Кĕпе-тумтире шыв сапса, килĕре икĕ кисĕппе (тăватă кисĕппе)

тӳсе-ҫавӑрса, ухса ҫӑваҫҫӗ.

Ҫӑл кусӗнчи кил (к.), тараса ҫумӗнчи к., кӳлӗ хӗрринчи к., шыв (юхан шыв) хӗрринчи к.



**Кирпет** — савӑт. Хупӑран авса, ҫыхса тунӑ савӑт. Пӗрне, кунтӑк, кӑшкар, пурак. Кӑмпа пуҫтармалли кирпет (к.). Тырӑ тултарса лартнӑ (т.л.) к., улма т.л.к.

**Крушка** (вырӑсла **кружка**) — курка евӗр тимӗр савӑт. Вырӑс чӗлхине нимӗҫ чӗлхинчен кӗнӗ. 16—18 ӗмӗрсенче крушка виҫев савӑчӗ пулнӑ. 1 к. 10 чарка (черкке) е 1,23 л. эрехсӑра кӗнӗ. Сӑра к., эрех к., шыв к., тимӗр к., тӑм к., йывӑҫ к.





**Кулата** (вырӑсла колода) — савӑт, ӗҫ хатӗрӗ. 1. Кӗске валак, кӗске валашка. Юман кулата (к.), хыр к., ӑвӑс к. 2. Вӗлле кулати, вӗлле тункати. Вӗлле кулатине чӑрӑшран, ҫӑкаран тӑваҫҫӗ.

**Кункӑра** — йывӑҫ савӑт, ӗҫ хатӗрӗ. Валашка. Шулап. 1. Выльӑха шӑвармалли тӑрӑхла валашка. 2. Ҫӑл кусӗнчи, тараса ҫумӗнчи кӗпе-тумтире ҫуса чӳхемелли тӑрӑхла валашка. 3. Юхса выртакан шывра, кӗпе-тумтире чӳхенӗ вӑхӑтра, вӑл ан варалантӑр тесе шыва ярса ҫирӗплетсе лартнӑ валакланӑ лапашка, пуҫӗ-вӗҫӗ уҫӑ кункӑра. 4. Ҫӑнӑх тытмалли, ҫӑнӑха алланӑ вӑхӑтра усӑ курмалли, ҫӑкӑр пӗҫермелли чустана ҫавӑрса йӑвалламалли валакланӑ шулап. Пуҫӗ-вӗҫӗ уҫӑ кункӑра. Кункӑрана ҫӑкаран, ӑвӑсран, тирӗкрен, юманран тӑваҫҫӗ. Шыв кункӑри (к.). Ҫӑнӑх к. Сӑра, ӑсла юхтармалли кункӑра (шан).



**Кунтӑ, кунтӑк** — ҫӑка, хурама, хурӑн хуппинчен кӑшӑлне кӑшкар










пек кăшăлласа, тĕпне тĕплесе хупса тунă савăт. Вĕтĕ-вакă япалана, тырпула хурса тытмалли савăт. Тырă акмалли кунтăк (к.), улма-çырла пуçтармалли к., кăмпана çӳремелли к. Çĕнĕрен çемьеленнĕ вĕлле хурчĕсене пуçтарса тепĕр вĕллене лартмалли к. Пысăк к., пĕчĕк к. Ача урапи (ачана туртса çӳремелли урапа) çине лартнă кунтăк.

**Курите** (вырăсла **корыто**) — савăт, валашка, кункăра, такана. Çăкаран тунă курите (т.к.). Ăвăсран т.к. Хăмаран çапса т.к. Купăста тĕвекен курите (т.к.). Çĕр улми т.к., кишĕр т.к., чĕкĕнтĕр т.к.

**Курка** — савăт. Тĕрĕк чĕлхинче курга, корка — йывăç савăт, чашăк. Тĕрĕк çемйинчи халăхсен чĕлхинче: — чашăк, чĕрес, алтăр, катка (хурăн хуппинчен авса тунă катка). Ученăйсем курка сăмах — кура, кӳре-кĕсмен, ишкĕч (весло) сăмахран пулса кайма пултарнă тесе шутлаççĕ. Авăрлă курка (к.), икĕ авăрлă к., вăрăм авăрлă к. Курка аври (к.а.) çакăллă, к.а. çакăсăр. Йывăç к., тимĕр к., йĕс к., эмаль витнĕ к., пластмасс к. Шыв курки (к.), сăра к., эрех к., çĕр чакалакан машинăн к.

**Курупка** (вырăсла **коробка**. Кора, плетеная посуда, посуда из коры сăмахсенчен) — савăт. Тăваткăл савăт. Картонран тунă курупка (т.к.), тачка хутран т.к., йывăç хуппинчен т.к., чĕрнĕ черенчерен т.к. Пысăк к., пĕчĕк к. Спичка курупки (к.), эмел курупки.

**Куршак** (вырăсла **горшок**) — савăт, чӳлмек. Пысăк куршак (к.), пĕчĕк к. Сĕт куршакĕ (к.), шыв

к., çу к., пыл к., пăтă к. Куршакра пĕçернĕ апат (пăтă, шаркку) тутлă.

**Кушилкке** (вырăсла **кошелек**) — пĕчĕк хутаç, енчĕк. Сăран кушилкке (к.), пир к., тĕрленĕ к., укçа к., пурлăх к., тапак к., салтак к.





**Кушел** (вырăсла **кошель, кош, корзина** сăмахран). Вĕрен-кантраран çыхса тунă пысăк енчĕк, çыхса енленĕ хушлăх, çыхса кăшăлланă чармак чикмелĕх. Хаппăлчăк. Вĕтел.

Пĕр кушеле пĕр пăт утă кĕрет. Лаша утта кушелрен çисе тăрать. Утă кушелĕ (к.), улăм к., арпа к., укçа к., вĕрен кушел (к.), сăран к., чĕн к., мунчала к., пушăт к.



**Кутамкка** (вырăсла **котомка**, котома, комок сăмахран) — сумка. Çурăм çине çакса çӳремелли сумка, михĕ. Салтак кутамкки (к.), ыйткаласа çӳрекен çын к. Сăран кутамкка (к.), сăхман к., брезент к., пир к., карçинкка к., пушăтран çыхнă (пештĕр) к., кушел к.



**Кӳллек** (вырăсла **куль**) — михĕ, савăт, карçинкка, чăпта, сăран михĕ, шыв çинче ишмелли кимĕ.

1. Михĕ. Пысăк михĕ, 6—9 пăт кĕрекен михĕ. Икĕ хутлă михĕ, пĕр хучĕ — пиртен, тепри — чăптаран.






2. Карçинкка. Урапа çине лартнă карçинкка. Арпа тултармалли, турттармалли карçинкка.




3. Шыв çинче ишмелли авалхи сăран кимĕ, сăран михĕ (понтон). Сăран киммĕн кăшкарне, карçинкка пек хăваран авса çыхнă, тулашне сăранпа çĕлесе хупланă. Кĕсменпе ишсе шыв çинче çӳренĕ.



**Лакăм** — савăт. Чĕрес, пĕчĕк пичке, лакун. Сăра лакăмĕ (л.), çу л., тикĕт л.

**Лакун** (вырăсла **лагун**) — савăт. Лакăм сăмаха вулăр.

**Лар** (вырăсла **ларь**) — савăт. (Вырăс чĕлхине швед чĕлхинчи ещĕк сăмахран кĕнĕ.) Хăмаран тунă пысăк арча, ещĕк. Ларана çăка, ăвăс, чăрăш йывăçĕсенчен тăваççĕ. Арманти лар (л.), килти, кĕлетри л. Çăнăх ларĕ, тыр л., хупăлчаллă л., хупăлчасăр л.




**Лаххан** (вырăсла **лохань**) — савăт. (Вырăс чĕлхине грек чĕлхинчи чашăк сăмахран кĕнĕ). Ăшăх катка. Виçĕ ураллă, икĕ хăлхаллă лаххан (л.). Тирек (хăминчен тунă) л., ăвăс л., юман л. Мунчари л., лаçри л., хăйă чикки айĕнче ларакан л., каяш шывĕ тытакан л.

**Лăпă** — савăт. Пысăк шăтăклă, выльăха апат памалли, çитермелли карçинкка савăт. Анлă кăшăллă, кăшăлĕ тавра сайра хăва тыткăçсене çыхнă, вĕсене çатан тытса çирĕплетнĕ, аяк енĕсенче уçă вырăн хăварнă, тĕпне карçин евĕр тĕплесе çатан çыхнă, утă-улăм, лăпă тултармалли карçинкка савăт. Лăпă — тарăн, шăла карçинкка. Кушел евĕр карçинкка. Пушăтран авса тунă лăпă. Выльăха пĕр лăпă утă çакса патăм. Выльăх лăпă шăтăкĕнчен утта туртса çиет.





**Лейка** (вырăсла **лейка**) — шыв сапмалли сăмсаллă савăт. Сăмси ала шăтăклă, шыва çумăр çунă пек пĕрĕхтерет. Шуç тимĕр лейка (л.), пластмасс л., пысăк л., пĕчĕк л.

**Миска** (вырăсла **миска**) — савăт, тарăн чашăк. (Вырăс чĕлхине нимĕç чĕлхинчен tesa, tes — сĕтел, чашăк, савăт сăмахсенчен кĕнĕ.) Йывăç миска (м.), тăм м., эмаль витнĕ м.








**Михĕ** (вырăсла **мешок**) — пысăк вăрăм хутаç. (Вырăссен мех, çăмлă тир, тиртен çĕленĕ, хутаç сăмахран пулса кайнă). Пир м., чăпта м., сăран (пĕтре) м., брезент м., полиэтилен (целлофан) м. Çăнăх миххи (м.), ыраш м., тырă м., çĕр улми м. Миххе виçĕ пăт (тăвата пăт) тырă кĕрет.




**Патман. Пасман** (вырăсла **батман**, **басман**. Тĕрĕк чĕлхинчен, виçĕ ăнлавран) — 1. Виçе; 2. Ĕç хатĕрĕ; 3. Савăт.

1. Виçе. Виçе шайĕ. Пур çĕрте те хăйĕн шайĕпе çӳрет. Крым, Кавказ тăрăхĕнче 1 патман (п.) — 26 пăт. Вăтам Азире 1 п. — 12 пăт. Хусан тăрăхĕнче 1 п. — 4 пăт. Чăвашсен хушшинче 1 п. (пыл), 1,4 пăт (тăвар), 2 пăт (çăнăх).

2. Ĕç хатĕрĕ. Писмен. Шут хатĕрĕ. Писмен çинчи патман карчĕ, палли пур. Писмен — вăрăм, кĕске хул пусçиллĕ виçев япали, тараса. Кĕске енне çекĕл çакнă. Виçене шусса çӳрекен шайлаштару пуканĕ тăрăх пĕлеççĕ.

3. Савăт. Пасман. Касса чакаласа тунă пĕр патман тырă кĕрекен катка. Пăтавкка евĕр савăт. Çăка п., авăс п., икĕ пăт кĕрекен п.к.п., тăвата п.к.п.



**Патьен** (вырăсла **бадья**, тĕрĕк чĕлхинчен бадья, таз, лохань сăмахран, тĕрĕк чĕлхине перс чĕлхинчен бадийе — пысăк савăт, таз, лехань — сăмахран кĕнĕ) — савăт. Витре евĕр пысăк савăт. Пĕр патьене 1—2 витре шыв кĕрет.

Тимĕрçĕ туса хатĕрленĕ кăшăллă, хулăм хăлăплă шыв витри. Тарасаран, пусăран шыв ăсмалли патьен (п.). Шахтăран тупăш япалине кăлармалли п. Выльăха шыв памалли п. Лашана шыв ĕçтермелли п. Тимĕр п., йывăç п.

Вырăссем вырăн-вырăнта лохань, витре, банка, пысăк тăм чашăка ытти савăт-сапана бадья тесе калаççĕ.

**Пăлтарашка**. Пăлтараска — савăт. (Çĕнĕ сăмах. Вырăссен полутора сăмахĕнчен.) 1,5 литр минерал шывне тултарса сутакан пăкăллă пластмасс савăт. Ял çыннисем çак савăтпа пасарсенче сĕт сутнă çĕрте усă кураççĕ. Ăшлăхне 1,5 л кĕнĕрен пăлтарашка тесе калаççĕ. Нумайччен пурăнĕ-ши чĕлхере?.. Вăхăт кăтартĕ.

**Пăртманет** (вырăсла **портмоне**) — енчĕк, укçа хутаççи. Сăран пăртманет (п.). Темиçе енчĕклĕ п. Çăраллă е кĕлĕллĕ п. Кĕсьере чиксе çÿрекен п. Хăш-пĕр вырăнта пăртне тесе калаççĕ.





**Пăртне** — хутаç, енчĕк. Хăш-пĕр вырăнта пăртманет сăмаха кĕскетсе калани.




**Пăтавкка** (вырăсла **пудовка**) — савăт. Виçе савăчĕ, пăт чĕресĕ. Пăтавкканa пĕр пăт тырă кĕрет. Ыраш, тулă пăтавкки, пăрçа пăтавккинчен пысăкрах, сĕлĕ пăтавккинчен пĕчĕкрех. Сĕлĕ пăтавкки (п.), тулă, ыраш п., пăрçа п. Пăтавккана çăкаран чĕрес пек чакаласа тăваççĕ. Авăрлă п., авăрсăр п.




**Плашка** (вырăсла **плошка**) — çатма евĕр хупăлчаллă тăрăхла савăт. 1. Çатма. Кайăк-кĕшĕк ашне ăшалакан плошка (ă.п.) Ашпа çĕр улмине ă.п. Ăшăх п., тарăн п. 2. Хăйă çутти çутмалли пĕчĕк п.

**Пештĕр** (вырăсла **пещер**, **пестер**. Çĕр хăвалĕ, кăмака сăмахсенчен) — савăт, пысăк тарăн карçинкка, кушел. Хупăлчаллă сумка. Карçинкка хуллинчен çыхнă пештĕр (ç.п.), çăка пушăтран ç.п., хурăн хуппинчен ç.п., йывăç тымарне чĕрсе ç.п. Çул çӳреме ç.п., сумка, хупăлчаллă п., хупăлчасăр п., пысăк п., пĕчĕк п. Платник япалисене хумалли (х.п.), пир-авăр тĕртмелли япаласене х.п. Карçинкка хуллинчен çыхнă пештĕрпе выльăха апат лартса патăм. Пĕр пештĕр пан улми татрăм. Пĕр пештĕр кăмпа пуçтартăм. Пештĕр çакса çула тухнă, укçине те пештĕрех янă.

**Пĕрне** — савăт. Карçинкка, пурак, кунтă, кушел. Пĕрне хырăмлă анлă, ансăр тĕплĕ карçинкка. Тĕпсĕр пĕрне. Çăпала пĕрни (п.), арпа п., арман п. Арман пĕрни ещĕк пек, пĕрнĕ çĕртен чул çине тыр юхса тăрать. Хупран пĕрнĕ пĕрне (п.). Çăка хуппинчен тунă пĕрне (х.т.п), хурама х.т.п. Хăнана çӳремелли (ç.) сăран (п.). Вăрмана, кăмпа-çырла, мăйăр татма ç.п.





**Пĕтре** — сăран михĕ, тиртен çĕленĕ михĕ, куль. Пĕтре анĕ тавра сăран йăлăсем çĕлесе çаврăнаççĕ. Ĕне тирĕнчен çĕленĕ пĕтре (т.ç.п.), вăкăр т.ç.п., лаша т.ç.п., сысна т.ç.п., качака т.ç.п. 1. Пĕтре — бурдюк. Кăнтăр енчи халăхсен шыв, эрех, кумус тултарса çӳремелли михĕ. Пĕтрене шыв кĕмест, пĕтререн шыв юхмасть. 2. Пĕтре — хупă кимĕ, понтон. Пĕтре ăшне типĕ утă чиксе çĕлесен понтон — кимĕ пулать. Çыхса тытнă пĕтресенчен авал шыв çи çинче выртакан кĕпер тунă, шыв çине кĕпер хывнă. 737 çулта арабсен çар пуçлăхĕ Мерван ибн Мухаммед Атăл урлă аль Байду хулинчен çӳлерех пĕтре кĕпер хывса çарĕпе Атăлăн сулахай енне каçнă. Хазарсем çине тапăнса вĕсене çĕнтернĕ. 3. Пĕтре — михĕ. Çăнăх миххи, тырă миххи. Тăватă пăт кĕрекен пĕтре (п.к.п.), пилĕк п.к.п. 4. Пĕтре — куль. Латин чĕлхинче куль,

кулеус — сăран миххи. Чăваш чĕлхинче михĕ, чăпта миххи. Чăпта миххине Ветлуга, Вятка шывĕ тăрăхĕнче çапса çĕленĕ. Ăна тума çăка мунчали кирлĕ пулнă. Ыраш тырри тултарнă куль 9 пăт та 10 кĕрепенке, сĕлĕ тултарнă куль 6 п. 5 к. тайнă.





**Пичке** (вырăсла **бочка**) — хупă савăт. Икĕ тĕпне тĕпленĕ хырăмлă катка. Юман пичке (п.), тирĕк п., ăвăс п., çăка п., пластмасс п. Йывăç пичкесене ятарлă ансăр хăмасенчен, клепкăсенчен тăваççĕ. Хăмисене, клепкисене ăшăтса шўтереççĕ, калăпĕ çине сарса тăратса мăйкăç пусаркăчпа пăрса кăшăлласçĕ. Кăшăлĕ пушăрах вăхăтра тĕпне, çине (пуçне), пичке хăмисене çавăрса каснă лакăмне çартине вырнаçтараççĕ. Ун хыççăн кăшăлсене çапса пичкине хытараççĕ. Хĕрĕх кăшăллă пичке (к.п.), вун икĕ к.п., тимĕр к.п., йывăç (хăва, хурама) к.п. Пушар пички (п.), шыв п., бензин п., краççын п., эрех-сăра п., им-çам п. Пичкен пăкки, шăтăкки пур. Сăра пичкин тĕпĕнче е пуçĕнче сăра юхтарса илмелли пăкки (кранĕ) пур. Сăра пичкине пуçличчен асаттесем кĕлĕ тунă. Пичкене кĕлĕ каласа пуçланă.

**Пукă** — пĕрне, кунтă, кузов.





**Пурак** (вырăсла — **бурак**. Швед чĕлхинчи — банка, коробка сăмахран) — савăт, кунтă, чĕрес. Хурăн хуппинчен çавăрса тунă çавраka савăт. Хупăлчаллă пурак (п.). Пурак хупăлчи авăрлă. Хупăлчине пурак ăшне тайăлтарса кĕртеççĕ, туртса тӳрлетсе, хĕстерсе хупаççĕ. Хупă пуракран шыв юхмасть. Шыв тултарнă (т.п.), яшка т.п., сĕт т.п., уйран т.п., çырла т.п.

Пурака 3—4 л. шыв кĕрет. Пуракри шыв хĕвел çинче часах ăшăнмасть.

**Пухмач** (вырăсла **копилка**) — хупă савăт. Хурăн хуппинчен авса тунă (т.) савăт, хап, пухмач (п.). Тăмран т.п., кĕленчерен т.п., йывăçран касса т.п., кушак кӳлепеллĕ (к.) п., йытă к.п. Пухмачра вакă укçа пухаççĕ. Укçине яма çӳлĕ енче укçа кĕмелĕх хушăк каснă. Çичĕ çул пухмача вакă укçа ярса пуçтартăм. Укçине пухмач тĕпне касса (ватса) кăлартăм.

**Пучушши**, пушуччи (вырăсла **лукошко**) — пушăтран çыхса тунă савăт, сумка, йĕнĕ, енчĕк, чехол. Платник япалисене хумалли пучушши. Пуртă чиксе çӳремелли пучушши (ч.ç.п.). Çава ч.ç.п., кăмпа пуçтармалли п.







**Пӳрнеске** (пӳрне сăмахран). 1. Çĕвĕçĕн пӳрни çине тăхăнтартакан йĕсрен, пăхăртан тунă пӳрне калпакĕ, çийĕ. 2. Пӳрне вĕçĕ пысăкăш пĕчĕк савăт. Эрехĕ питĕ хăватлă пулчĕ, пӳрнескепе ĕççех ӳсĕрĕлтĕмĕр.

**Савăт** — сĕт, шыв, вĕтĕр-шакăр тата ытти япаласене тултармалли ăшлăх, ăшлă хупă, шăнăçуллăх, ăскăч. Тĕрĕк çемйинчи халăхсен чĕлхинче: саут, сауут, савыт, савут — витĕм хуппи, çи витĕмĕ, тултармалли ăшлăх сăмахсене пĕлтерет.

Йывăç савăт (с.), тимĕр с., çатан с., хуп с., сăран с., кĕленче с., тăм с., пластмасс с., пĕчĕк с., пысăк с., кивĕ с., çĕнĕ с.

**Сапа** — савăт. Тĕрĕк çемйинчи халăхсен чĕлхинче: саба, хаба, сав, сепет, себет — сăран мих, сăран чĕрес, сăран пурак, сăран савăт сăмахсене пĕлтерет.

Тĕрĕк чĕлхине перс чĕлхинчи саба — лаша, лаша тирĕ, тиртен карса тунă савăт сăмахсенчен куçнă.

Хурăн хуппинчен тунă сапа, пĕчĕк сапа (с.), пысăк с.





**Савăт-сапа** — тĕрлĕ япаларан (материалтан) тунă, тĕрлĕ йышши савăт. Пуçтарса калакан сăмах.

**Савук** (вырăсла **совок**) — ăскăч. Йывăç савук (с.), шуç тимĕр с., алюмини с., пластмасс с., илемлетсе касса тунă с.

Çăнăх ăсмалли (ă.)с., шыв ă.с., çӳп-çап пуçтармалли с.

**Сăмавар** — савăт, ĕç хатĕрĕ (вырăсла **самовар**). Чей, шыв вĕретмелли, апат пĕçермелли япала. Кăмакаллă, хуранлă (пĕр витре,





икĕ витре кĕрекен) хатĕр. Йĕс сăмавар (с.), пăхăр с., кĕмĕл с. Сăмавар вĕрерĕ, сĕтел çине ларчĕ, çемьене, хăнасене чей ĕçме пуçтарчĕ.

**Сетка** (вырăсла **сетка, авоська**) — кушел, ветĕл. Тачка çипрен сĕреке пек çыхнă, алăпа япала, çăкăр-кулач çĕклемелли хутаç.

Çипрен çыхнă сетка (ç.с.), капрон çипрен ç.с., пысăк с., пĕчĕк с.

**Суланча** (вырăсла **солонка**) — савăт. Тăвар хумалли савăт. Йывăç суланча (с.), тăм с., кĕленче с., фарфор с., пĕчĕк с., пысăк с., ала пек шăтăклă с.





**Сумка** (вырăсла **сумка**) — енчĕк, хутаç. Сăран сумка (с.), брезент с., пир с., пысăк с., пĕчĕк с. Шкул ачи сумки (с.), хĕрарăм сумки.

**Сунтăх, сунтăк** (вырăсла **сундук**). Вырăс чĕлхине тĕрĕк чĕлхинчен **сандык** — ящик, каменный ящик сăмахран кĕнĕ. Сĕтел сунтăхĕ (с.), çăкăр-тăвар с., апат-çимĕç с., тумтир с.

Арча сунтăх. Сунтăх сакки тĕпелте ларать. Кăшăлланă с., юман с., тимĕр с., карçинкка с.





**Супне** (вырăсла **зобня** — лукошко, плетенка для дачи лошадям овса и ячменя) — савăт, пушăтран çыхнă кушел. Хупран авса çыхнă ăшлăх. Лаша мăйне супне çакнă. Унта сĕлĕ тултарнă. Лаша супнерен сĕлĕ çисе тăрать. Пĕр супне арпа тултарса сурăхсене апат патăм.

Çăка хуппинчен тунă супне (х.т.с.). Хурама х.т.с., хурăн х.т.с. Сăран с., тырă ярса памалли я.п.с. Шыв я.п.с. Ачасем çветкире (çĕнĕ çул хыççăнхи уяв) хăйсем çине чăпта, мунчала çыххи çакаççĕ. Пуçĕ çине супне, кăшкар тăхăнаççĕ, умне супне çакса яраççĕ. Аллине мунчала шăпăрĕ (мĕлке) тытаççĕ.

— Эпир вăрман хуçисем. Пире кукăль парăр, çăкăр парăр, апат парăр. Памасан вăрмана кĕртместпĕр, вутă, йывăç памастпăр тесе калаççĕ, шуйăхаççĕ.

**Стакан** — савăт (вырăсла **стакан**). Тĕрĕк чĕлхинчен кĕнĕ. Чагатай чĕлхинче тостакан, то+стакан, стакан.





**Стопка** — савăт. Черкке (вырăсла **стопка**. 100 грамм кĕрекен черкке ятĕнчен). Кĕленче стопка (с.), кĕмĕл с., хрусталь с., эрех виçи, шыв виçи, эрех ĕçмелли с.

**Çапăр** — савăт, пурак, чĕрес. Сарлака анлă савăт. Хул пуççи урлă ума çапăр çакса ик(ĕ) аллăмпа çырла пустартăм.

**Çатан** — савăт. Карçинкка. Çатан (ç.) арча, ç. карçинкка, ç. кăрман.

**Çатка** — савăт. Карçинкка,



кушел. Çатан çатка (ç.), шалпар ç. Çăт çыхнă ç. Çавракa ç., тарăн ç., кĕленче (бутыль) лартмалли ç., выльăха апат памалли ç.





**Çатма, çатна** — савăт, ăшăх чашăк, тупа (туба).

Тăм çатма (ç.), тимĕр ç., чукун ç., алюмини ç., авăрлă ç., икĕ тыткăчлă ç., пысăк ç., пĕчĕк ç., тăрăхла ç.

Ç. аври, ç. тимри, ç. тыткăçĕ.

**Çăпала** — савăт, авăрлă ăскăч.

Тĕрĕк çемйинчи халăхсен чĕлхинче: шабала, шабыла, çăпала. Вырăс чĕлхине шебалка (шумовка) сăмахпа кĕнĕ.

1. Хуран çăпали. Пысăк çăпала.
2. Апат çимелли çăпала, кашăк, пĕчĕк çăпала.
3. Сехет çăпали.
4. Суха пуç çинчи çăпала.

Йывăç çăпала (ç.), тимĕр ç., алюмини ç., кĕмĕл ç., ылтăн ç.





**Çурхат, çăрхат, чурхах, чорхат** — авалхи уралլă, таканлă савăт,

лаша, ут, сăнарлă савăт. Тăватă ураллă (виçĕ ураллă, ултă ураллă) авăрлă (сăмсаллă) шуç, йĕс савăт. (Юртса, çăрса чупакан ут. Çăрха ат, ут сăмахран).

Çурхата çунакан вут çине лартнă.

Çурхатра пыл ирĕлтернĕ, вĕретнĕ. Шерпет тунă, пыл сăри тунă, ирĕлтернĕ пыла йӳçекен сăрана янă. Сĕтел çинче пĕр çурхат сăра ларать, тепĕр çурхат шерпет ларать.

Тăм çурхат (ç.), пăхăр (ç.), шуç (ç.), йĕс (ç.).

**Çӳпçе** — савăт (çӳп сăмахран.) Катка, чĕрес.

Çӳпçене çăка, тирек, ăвăс каскинчен касса, чавса якатса тăваççĕ. Çӳпçе тĕпĕ катка тĕпĕ пек, хупăлчи кăшăллă, çыхăнса е çăрапа питĕрĕнсе тăрать. Çӳпçене тумтирсене, хаклă япаласене хываççĕ.

Хĕрарăм çӳпçи (ç.), хĕр (хĕрача) ç., кин ç., уйран ç., кĕл (кĕл пуçтаракан катка) ç.

Çӳпçи пулсан хупăлчи тупăнать.

Вăл виçĕ çӳпçе тупрапа качча тухнă.







**Таз** (вырăсла **таз**) — савăт, чара, лахан (вырăс чĕлхине тĕрĕк чĕлхинчен кĕнĕ. Турккă чĕлхинче тас (таз) — чашăк).

Пăхăр таз (т.), шуç т., алюмини т., эмальленĕ т., кĕмĕл т.

Кĕпе çумалли т., çырла пĕçермелли т., апат-çимĕç тыткаламалли т., мунча кĕмелли т.

**Такана** — савăт, ăшăх курите (корыто), валашка, кункăра.

Тĕрĕк çемйинчи халăхсен чĕлхинче: токна, тагана, тигана — курите, пысăк чашăк, валак.

Такана, çурнă йывăçа тул енчен чутласа çӳхетсе тĕплетнĕ, вар (варри) енчен чакаласа якатнă, икĕ вĕçне такан тыткăçлă каснă ейлеке ăшлă курите, кункăра. Çăка такана (т.), йăмра т., ăвăс т., кĕпе çумалли т., ача çумалли т., шыв тытмалли т., тыр ăвăсмалли т., çăнăх аламалли т., чуста унамалли т., выльăха, чăх-чĕпе апат памалли т.

**Такмак** — сăран сумка, пĕчĕк сăран михĕ (торба), (тĕрĕк чĕлхинче сăран михĕ). Хăнана кучченеç илсе каймалли сăран сумка. Хул пуççи урлă çакнă сăран сумка. Икĕ енлĕ урлă такмак (у.т.), лаша çине хурса çыхнă икĕ енлĕ у.т.

Такмак (т.) туй пусĕн, мăн кĕрӳн сумкки. Икĕ хутаçлă т. Авал, асаттесен ватă аслашшĕсем куçса çӳресе пурăннă вăхăтра, йĕнер умне çыхса çакнă икĕ енлĕ такмаксенче ача амăшĕсем хăйсен пĕчĕк ачисене лартса çӳренĕ. Амăшĕ ачине такмакран илсе лаша çинче ларсах чĕчĕ çитернĕ.







**Тирек** — савăт, йывăç чашăк, йывăç турилкке. Тирек йывăçĕнчен тунă тĕрлĕ савăт: тирек чашăк, тирек кашăк, тирек çăпала, тирек алтăр, тирек (тополь) ăвăс йышши йывăç. Тирек 20—30 çултан çитĕнет, 90 çулччен ӳсет. Вулĕ 2—3 метр тачкăшне çитет. Тирекрен килте, пӳртре тумтире хывса çакса тăмалли япаласем тата ытти хатĕрсем касса илемлетсе тăваççĕ. Тирекрен, ăвăсран шывра ишекен чакаланă кимĕ тăваççĕ.

**Тупа** (тĕрĕкле туп, тӳп, тюп — тĕп, тĕпĕ, никĕсĕ, айĕ) — ĕç хатĕрĕ, савăт, çатма, противень. Ăшăх тупа (т.), анлă т., пысăк т.,



чукун т., шуç т. Кукăль пĕçермелли т. Какай типĕтмелли т., шăрттан шăратса типĕтмелли т.

**Турилкке** (вырăсла **тарелка**, нимĕç чĕлхинчи ăшăх чашăк сăмахран).

Йывăç турилкке (т.), фарфор т., эмальленĕ т., кĕмĕл т., пысăк т., йывăç т., чей ĕçмелли т., тарăн т., ăшăх т., çўхе т., тачка т., шурă т., кăвак хăюллă т., чечеклĕ т.

**Уйран çўпçи** — савăт ĕç хатĕрĕ. Йўçнĕ сĕте уйран çўпçине ярса, хурçипе пăтратса-сиктерсе çу туса илмелли ĕç хатĕрĕ. Уйран çўпçипе (у.ç.) хурçине çăкаран тăваççĕ. Хурçин аврине (патакне) хурăн, шĕшкĕ, шĕшкĕ тураттинчен ăсталаççĕ. У.ç. çўллĕшĕ — 1—1,2 метр хулăнăшĕ, сарлакăшĕ — 25—30 сантиметр хурçин аврин (патакĕн) çўллĕшĕ — 1,5 метр. Йывăçран тунă (т.) у.ç., тимĕртен (тутăхман хурçă шуçран, алюмини шуçĕнчен) т.у.ç. Килти хуçалăхра ĕне-выльăх тытакансене у.ç. кирлĕ.

**Уртмах** — хутаç, сумка, такмак.

1. Хул пуççи урлă уртса янă уртмах (сумка). Сăран уртмах (у.), пушăт у., туй кучченеçне пуçтарма çакнă у. Лаша урлă çакнă у.

2. Ленкер, сайхах пуслăх, яркăч.












**Фляга** — савăт (поляк чĕлхинчи бутылка, карса çыхнă бутылка сăмахран). Пысăк савăт, бидон. Тимĕр фляга (ф.), алюмини ф., пластмасс ф., 50, 30, 20, 10 литр кĕрекен флягăсем. Сĕт тултармалли (т.) ф., шыв т.ф., имçам т.ф.

**Фляжка** — пĕчĕк савăт, алюминирен, полиэтиленран тунă фляжкăсем.

Салтак ф., çул çине илекен ф., фляжка сумки, фляжка çакки.

**Фужер** — пысăк, вăрăм уралла черкке (вырăс чĕлхине француз чĕлхинчи Фужер хула ятĕнчен кĕнĕ. Унта черккесем туса кăларнă). Шампань эрехне, минерал шывне ĕçмелли черкке.








**Хайман** — хутаç, пĕчĕк(кĕ) сумка. Сăран хайман (х.), укça тытмалли х. Тумтир çинчи х., шалти кĕсье.

**Хап** — чăпта, чăпта миххи. (Куль, пĕтре сăмаха вула). Хăмла хапи — хăмла миххи. Йывăç çине ӳссе ларнă хап, йывăç майраки. Вырăсла — кап. Ăна касса илемлĕ чашăк, алтăр, ваза тăваççĕ. Хурăн хуппинчен тунă хап.

**Хуран, хоран** — савăт. Тарăн хырăмлă, анлă чашăк. Хуранăн ывси, хăлăпĕ, çакки пур.

Тĕрĕк çемйинчи халăхсен чĕлхинче (ч.) казан. Гагауз ч. харан.

 

Монгол ч. харанга. Авалхи сăмах. Тупсăмĕ паллă мар. Эрменсен кар — чул. Осетин ч. харачул. Тĕрĕк ч. кыр — чул, ан — лакăм, хăвăл тенине пĕлтерет. Кыран, хуран — чул çинчи лакăм, чулран тунă чашăк сăмахсенчен пулса кайма пултарнă.

Авалхи çынсен тăм (чул) чашăкĕсене, чӳлмекĕсене музейсенче курма пулать.

Тимĕр хуран (х.), чукун х., йĕс х., вут çине çакнă х., кăмакана сĕрсе лартнă х., пĕчĕк х., пысăк х., икĕ витре кĕрекен х.

Туй х., сăра х., яшка х., пăтă х., котельнăй х., шыв х.

Çĕр çинчи, шыври чĕр чунсен хуранĕ: тимĕр шапа х., шапа х., рак х., хурт-пуççи х.

Юмахри, тĕнри хуран: тамăкри х. (Тамăк х.).

**Хутаç** — михĕ, пĕчĕк михĕ, сумка.

Тĕрĕк çемйинчи халăхсен чĕлхинче калта — кĕссе, халта — сăран михĕ, кушел.

Халта + -чă, -ça = халтачă, хултаçă-хутаç.

 

Сăран хутаç (х.), пир (х.), хул пуççи урлă çакнă х., алла тытнă х.

Шкул ачи хутаççи, ыйткаласа çӳрекен çыннăн хутаççи.

**Цистерна** — пысăк савăт (латин чĕлхинчи шыв кӳлли, шыв пĕви сăмахран). Вакун цистерни (ц.), шыв ц., сăра ц., им-çам ц.

**Чан 1.** — пысăк катка, бак, бассейн, савăт. Тĕрĕк чĕлхинче чан, шан — пысăк катка, чан. Китай чĕлхинче шан — небо, верх, небесный. Шан, тян, чан, кăвак пĕлĕт (хуранĕ) тенине пĕлтерет.

Шыв чанĕ (ч.), сăра ч., им-çам ч., пушар ч., тимĕр ч., йывăç ч., тимĕр-бетонран тунă ч., купăста тăварламалли ч.

**Чан 2.** — шăнкăрав. Шăн, шăн+кăра (в)=хуран, савăт+шав, шăв-шав. Шав хуранĕ, шав савăчĕ. «Сас» кăларакан савăт.

Шăнкăрав сассине нумай тĕнре Турă сассипе танлаштараççĕ. Китай енче — тĕнче уçлăхĕнчи кĕвĕпе илем шавĕ тесе, Тибет тăрăхĕнче Буддăн кĕлĕ тума чĕнекен йыхравĕ тесе шутлаççĕ.

Чан савăчĕн курăмне (шăнкăравне) кăвак пĕлĕт хуранĕпе, çаппине — тан тимĕрне — сас кăларакан чĕлхе вырăнне хурса танлаштараççĕ.

Аса илер-ха: чăвашсен аслати авăтать тени аслă Турă сас парать, юрлать тесе калани пулать.







**Чаплашка** — савăт, чашăк, тирĕк, плашка. Çаврака, тарăн, пĕчĕк савăт. Чăмăр чаплашка (ч.), ача-пăчана апат çитермелли ч., йывăç ч., тăм ч., масар çине (виле тăпри çине пăтă) лартнă ч.

**Чара** — савăт. Пысăк чашăк; курка (тĕрĕк çемйинчи чĕлхесенче: чара, чора, шара, сарра — пысăк (йывăç) чашăк).

Тимĕр чара (ч.), йывăç ч., çăнăх ч., мунча ч.

**Чашăк** (вырăсла **чаша**) — савăт. Тирĕк, ăскăч. Апат çимелли чашăк (ч.), сăра ĕçмелли ч., чей ĕçмелли ч., пысăк ч., пĕчĕк ч., тарăн ч., ăшăх ч., елпешке ч.

Тараса чашăкĕ (ч.), йывăç ч., эмальленĕ ч., фарфор ч., пластмасс ч.





**Чăм** — савăт, чашăк, чŷлмек, кăкшăм, хуран. Çаврака, тарăн савăт. Пысăк чăм (ч.), пĕчĕк ч., йывăç ч., пăхăр ч., тăм ч., сăра чăмĕ — кăкшăм. Пăхăр чăм — хуран.






**Чăпта** — чăпта миххи, хап, кŷл, кŷллек. Чăптана мунчаларан, мунчала хăйăвĕнчен çапса тĕртеççĕ. Ăна ăшăк, чăпта, вырăсла рогожа тесе калаççĕ. Çĕленĕ миххине чăпта, чăпта миххи тесе калаççĕ. Чăпта миххи çăт тăрать, чăпта миххинчен тырă юхмасть. Чăпта миххине 6—9 пăт тырă кĕрет.

Тыр(ă) чăпти (ч.), кăмрăк ч., арбуз ч., ыйăх ч. Кŷллек, пĕтре сăмахсене вулăр.

**Чейник** — савăт (вырăсла **чайник**). Чей вĕретмелли, пĕçерсе хатĕрмелли авăрлă, сăмсаллă савăт.

Тимĕр чейник (ч.), йĕс ч., фарфор ч., хрусталь ч., кĕленче ч., пысăк ч., пĕчĕк ч.

**Черкке** — (вырăсла **чарка**, **чара** сăмахран) савăт, эрех курки. Вырăссен шыв, шĕвек виçмелли савăчĕ.

1 черкке — 1/10 штоф е 2 шкалик, е 0,123 л. (123 грамм) шыв вырнаçать. Кĕленче черкке (ч.), йывăç ч., хрусталь ч., фарфор ч., тăм ч.





**Четвĕрт** — (вырăсла **четверть**) — савăт, бутылка. Шыва, эрехе, куçса-юхса тăракан япалана виçмелли савăт.

1/4 витре е 3,08 кĕрекен ăшлăх. Пăхăр четвĕрт (ч.), йĕс ч., кĕленче ч., карçинкка çыхса хупланă ч., эрех ч., сăра ч.

**Чĕрес** — савăт. Йывăçран чаласа, чĕрсе, çурса, якатса тĕплесе е йывăç хуппинчен авăрса, çавăрса, кăшăлласа, тĕплесе тунă савăт, йывăç витре.

Çăка чĕресĕ (ч.), ăвăс ч., тирĕк ч., хупăлчаллă ч., хурăн хуп-





пи ч., пысăк ч., пĕчĕк ч.

**Чилек** — савăт, пĕчĕк чĕрес, çăка чилек (ч.), çырла пуçтармалли ч., ача-пăча шыв ăсма, шыв кӳме çӳрекен ч.

**Чилим** — пахча çимĕç. Кавăн, капак евĕр тăрăхла, хăвăл, чĕлĕм тытăмлă, хăм пуллă, хытă хупăллă çимĕç. Унăн ăшне тимĕр çăпала пек каскăчпа касса тасатаççĕ. Юлнă хуппинчен тĕрлĕ майлă савăт хатĕрлеççĕ. Чилим савăтра — шыв, сĕт, эрех тытаççĕ. Халĕ ăна кăнтăр енче кăна ӳстереççĕ. Çимĕçне чилим-коды тесе калаççĕ.





**Чукун** (вырăсла чугун, тĕрĕк чĕлхинче чугун) — савăт. Чукуна тимĕртен шăратса тăваççĕ. Чукун — патрак тимĕр.

Чукун (ч.), ч. хуран, ч. чӳлмек, ч. аври (ухват).

Чукунпа кăмакара апат пĕçереççĕ, чукунра салат пыллантараççĕ.

**Чӳлмек** — тăм савăт, куршак, кăрчака, кăкшăм. Тĕрĕк çемйинчи чĕлхесенче: чулмэк, сӳлмэк, цӳлмэк, чӧмлек, шӧлмек, шольмек, чолмек.





Чул, чул пек ăшлă савăт тенине пĕлтерет (автор). Сăмсаллă чӳлмек (кăмкан), авăрлă чӳлмек (кăкшăм), тăм чӳлмек (ч.), чукун ч., пысăк ч., пĕчĕк ч.

Сăра юхтаракан ч. (кăрчака), сĕт сăвакан ч. (куршак). Чӳлмекпе пĕçернĕ апат тутлă.

**Шайка** — йывăç савăт (турккă чĕлхинче — шайка — шыв çинчи савăт, кимĕ, карап), чĕрес шайка (ш.), катка ш., пысăк ш., пĕчĕк ш., пĕр хăлхаллă ш., икĕ хăлхаллă ш. Çăнăх шайкки, çăнăх виçсе памалли шайка. Çăнăхне памасан укçа параççĕ. Ăна шайка (çăнăх хакĕн) укçи теççĕ.

Кĕл шайкки, кĕл шывне лартса тумалли (тăрăлтармалли) шайка.

**Шан** — йывăç савăт, чан, курите, икĕ енне те тĕпĕленĕ валак, кункăра.

Сăра шанĕ (ш.), çăнăх ш., кĕпе çумалли, чӳхемелли ш.





**Шăпан** (вырăсла **жбан**. Чьбан — çавракa хырăмлă савăт сăмахран) — савăт, крушка, пĕчĕк чĕрес. Сăра ĕçмелли шпан (ĕ.ш.), шыв ĕ.ш., хăйма пуçтармалли ш. Сăмсаллă ш., хупăлчаллă ш., йывăç ш.,





тăм ш., йĕс ш.

**Шăпаня** — савăт, витре. Пушăтран çыхса тирсе тунă витре, шăпаня (ш.). Сăра ăсмалли ш., шыв ăсмалли ш.

Шăпаня çыхса тумалли калăп, калăп пуканĕ.

**Шăхран** — 1. Савăт. 2. Ĕмкĕч. 3. Эрех ĕçмелли мăйрака. 4. Шăхлич, какăр.




1. Сăран шăхран (ш.), хурăн хуппинчен тунă ш. Ĕне, вăкăр мăйракинчен тунă ш. Ш. пăкки, ш. хуппи, ш. хупăлчи. Табак тултарнă ш., пăшал перекен тар(а) тултарнă ш.

2. Пĕчĕк ачана ĕмкĕч апачĕ тултарса панă ш. Ĕмкĕч шăхранĕ шăтăклă.

3. Эрех ĕçмелли мăйрака. Тул енчен те, шал енчен те тасатса якатнă, мăйракана (ĕне, вăкăр мăйракине) шăхран тесе каланă. Мăйрака черкке.

4. Шăхăрса, выляса кĕвĕ каламалли мăйрака. Унăн вĕçне касса (пăкăласа) чĕлĕх е хăмăш чĕлĕмĕ лартаççĕ. Пăккинчен, чĕлĕмĕнчен вĕрсе чĕлĕхне выляттараççĕ, тĕрлĕ кĕвĕ калаттараççĕ, кăлараççĕ. Шăхрана — какăр, шўт, шăхлич, вырăсла рожок тесе калаççĕ.

**Шетник** — йывăç савăт, касмăк, катка, витре. Шыв тытмалли шетник (т.ш.), пыл т.ш., купăста тăварламалли ш., пысăк ш., пĕчĕк ш., икĕ хăлхаллă ш., хупăлчаллă ш.

**Шкалик** — савăт, черкке (вырăсла **шкалик**, **косушка**. Нимĕçсен **шкала**, **карт** сăмахĕсенчен).

Шыва, эрехе виçмелли савăт. Икĕ шкалик пĕр черкке (чарка).

Шкалике 0,06 литр (60 грамм) шыв, эрех кĕрет.





**Штоф** — савăт (вырăс чĕлхине нимĕç чĕлхинчен кĕнĕ).

Штофра 1,23 литр е икĕ бутылка, е 10 черкке (чарка) эрех, шыв тăрать.

Пĕр бутылка — полуштоф. 0,615 литр (615

грамм) шыв кĕрет. Кĕленче штоф (ш.), тăм ш.

**Шупашка**, шопашка, шапашка савăт. Катка, çӳпçе, ырçа, пурак. Тумтир хумалли шупашка (ш.), шыв тытмалли ш., çăл куçне лартнă ш., çăка ш. Тумтире шупашкана хывиччен, ăшне усалтан, çурта çутса çавăрса тасататçĕ, ун хыççăн çуртине çӳл енне çыпăçтарса лартаççĕ.

Качча каякан хĕр (хĕр ача) тумтирне шупашкана тултарсан, хĕр ачасем, унăн юлташĕсем шупашка тавра (урисене урайĕнчен уйăрмасăр) виçĕ хут утса çаврăнаççĕ. Çаврăннăçемĕн: «Ырă курăр. Ачаллă пулăр. Пурлăхлă пурăнăр», — тесе калаççĕ. Икĕ аллипе пĕççисене шарт çапаççĕ.

**Ырçа** — савăт, пысăк кунтăк, кушел, пурак, курупка.

Çăка хуппинчен тунă ырçа (ы.). Выльăха апат памалли ырçа. Тырă хумалли ырçа. Çăнăх хумалли ырçа.

Ырçана сарлака хулăн хупран, икĕ вĕçне пĕр çĕре авса пушăтпа çĕлесе, тĕпне хупран тĕплесе тăваççĕ.

Пĕчĕк ачасене ӳкесрен ырçана лартнă.





**Янтал** (вырăсла **ендова**) — савăт тата çĕр çинчи паллă вырăнсем.

1. Çĕр çинчи вырăнсен ячĕсем: ендова, ендовина, ендовщина, индова, яндула, яндола, яндина, янтоба, янтов, янтăл, яндау — котлован, яма, степное блюдце, циркообразная вершина оврагов, углубление на вершине гор.

2. Посуда, чаша. Вырăс чĕлхине ендова сăмах авалхи чăвашсен (пăлхарсен) чĕлхи урлă кĕнĕ тесе шутлаççĕ.

И.Г.Добродумов (Вопросы русской и чувашской филологии. Чебоксары, 1971 г.).

Янтал-савăт. Йĕс янтал (я.), кĕмĕл я., тăм я., йывăç я., сăра тытмалли я., сăра ĕçмелли я., пыл тытмалли я., тĕрĕлесе каснă я.

3. Кĕтеслĕ ларакан çуртсен çи виттисенчен пулнă айлăм. Шыв юхакан вырăн, шелап.

**Янтар** — 1. савăт, кĕленче, кантăк савăт, духи кĕленчи.

2. Манăçа тухнă савăт. Манăçа тухнă сăмах. Кантăк. Янтарь сăмахран мар-ши?





**Усă курнă литература:**


*Ашмарин Н.И.* Словарь чувашского языка. Т. 12. Чебоксары, 2000.

*Буровик К.А.* Красная книга вещей. М.: Экономика, 1996.

*Воробьев Н.И. и др.* Чуваши. Этнографическое исследование. Часть 1. Чебоксары: Чувашиздат, 1956.

*Довгань В.* Книга о пиве. Смоленск: Русич, 1997.

*Иванова Л.* Безалкогольные напитки. Смоленск: Русич, 1996.

*Никольский Н.В.* Краткий курс по этнографии чуваш. 1928.

Приусадебное хозяйство. 1990, 4№.

Русская изба. Иллюстрированная энциклопедия. СПб.: Искусство — СПБ, 1999.

Русско-чувашский словарь. М.: Сов. энциклопедия, 1971.

Словарь архитектурно-реставрационных терминов. Киев: УСХА, 1990.

*Трейддер Дж.* Словарь символов. М.: Торговый дом Гранд, 1999.

*Федотов М.Р.* Этимологический словарь чувашского языка в 2-х томах. Чебоксары: ЧГИГН, 1996.

Чăвашла-вырăсла словарь. М.: Русский язык, 1982.

*Шанский Н.И., Иванов В.В., Шанская Т.В.* Краткий этимологический словарь русского языка. М.: Просвещение, 1971.

Энциклопедия алкоголя. Вече. 1998.

**Никифор Егорович Наумов**

# КУЛЛЕНХИ ПĔЛӲ КĔНЕКИ

Çын пурăнакан тавраšри вырăнсем, хушă-хӳтлĕхсем, çул-йĕрсем, килти, ĕçри савăт-сапасем

Редактор *Н.Е.Смирнова*
Художественный редактор *А.А.Трофимов*
Корректоры *Г.И.Алимасова, Т.И.Кириллова*
Оригинал-макет *Н.И.Кореньковой*

Подписано к печати 15.02.02.
Формат 60х90 1/16 Гарнитура Times ET Chuvash.
Бумага офсетная. Печать офсетная.
Физ.-печ.л. 8,5. Усл. печ. л. 8,5.
Заказ №4 Тираж 500 экз.

Чувашский государственный институт гуманитарных наук
428015, Чебоксары, Московский проспект, 29, корп. 1.
Лицензия № 04143 от 27.02.01

60=00

